593
43-136

Леонид Агаков



# Тăван юншăн

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1943

ЛЕОНИД АГАКОВ

# ТĂВАН ЮНШĂН

## (ПАРТИЗАН МУРАТ)

*ПОВЕСТЬ*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА

*ЧĂВАШГОСИЗДАТ*
*Шупашкар — 1943*

Отв. редактор С. Эльгер.

НТ 300. Подписано к печати 8/XII-43. Заказ 1089. Тираж 3000 экз.
Объем 4,5 г. л.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфии при СНК ЧАССР

# ТАВАН ЮНШĂН

...Манас çук, каçарас çук!

(*Партизансем тупа туни*)

Идёт война народная,
Священная война!

(*ЮРĂ*)

Тул çутăлас умĕн партизансен отрячĕ çăра чăтлăха пырса кĕчĕ. Пĕр-пĕринпе çыхланса, юриех никам иртмелле мар тума тăрăшнă пек ӳсекен çатрака йывăç тĕмĕсем хушшипе пĕр çур километр пек кайсан, малта пыракансем чарăнса тăчĕç. Çавна пула кайрисене те чарăнма тӳр килчĕ. Мĕншĕн чарăннине пĕлменнипе, колонна тăрăх пăшăлтатса ыйтма тытăнчĕç:

— Мĕн пулнă?

— Ма чарăнчĕç унта?

Çавăнтах, çăвăртан çăвара куçса, вĕсем патне ответ таварăнчĕ:

— Малалла каймастпăр, канатпăр... Дубов хушнă...

Чăнах та, отряда партизансен командирĕ Игнат Дубов чарса тăратнă. Кунти вырăнсене пит лайăх пĕлекенскер, вăл халĕ çак чăтлăха чи шанчăклă вырăн, тесе шутланă.—Ирччен тăрар-ха, унтан мĕн тăвассине курăпăр,—тенĕ вăл, хăйĕн помощникĕсене—боевой расчётсен командирĕсене пухса.—Пĕр енчен, кунта питĕ уллах вырăн, ним шиксĕрех, лăпкăн канма пулать, тепĕр енчен... эпир хамăртан малта мĕн пуррине пĕлместпĕр. Пирĕн çывăхри ялсене тĕрĕслесе пăхмалла. Кам пĕлет, тен пире йĕри-тавра нимĕçсем шурлăхри çĕлен-калтасем пекех

йашăлтатаççĕ. Ним чухламасăр пырса кĕнинчен сиен çе
пулма пултарать. Тĕплĕ разведка кирлĕ...

Командирсем саланчĕç, Дубов хушнă пек—унта т
кунта постовой дозорсем кăларса тăратрĕç. Пĕрисем—
хĕвеланăç енĕпе тăсăлакан тарăн çырма хĕррине, теп
сем—вăрманваррипе пыракан „юпаллă çул" еннелле
тата ытти те. Хурала кайманнисем кутамккисенче
çимеллисем кăларса çырткаларĕç те, ушкăн-ушкăн
вырнаçса выртрĕç. Вăрманти шăплăх вĕсене часах ыйăх
путарчĕ...

Ытти пур партизансемпе пĕрле, отрядри чи çамрă
партизан Мурат Коршунов та пĕр лăпсăркка шĕшк
тĕми айне плащ-палаткăпа чĕркенсе вырнаçса выртр
Часрах çывăрса каяс тесе, вăл выртнă-выртманах кар
тусне сăмси çинех пусса антарса куçĕсене хупрĕ. Анча
та темшĕн ыйхи килмерĕ унăн. Пилĕк минут иртр
вуннă иртрĕ, унтан ытларах та... Çывăхра выртакан пар
тизансенчен хăшпĕрисем хăрлаттарсах çывăрчĕç, хăш
хăшĕ тĕлĕксем те курма пуçларĕç пулмалла, мĕнш
тесен ăнланмалла мар уйрăм сăмахсем илтĕнкелерĕç,—
Мурат çывăраймарĕ. Унăн пĕчĕк пуçĕнче тĕрлĕ шухăш
сем, аса-илÿсем, юлашки кунсенче курнă уйрăм картин
сем çуралса тухса, вĕçĕ-хĕррисĕр вăрăм çăмха çиппи пе
тăсăлса пычĕç.

Аса илмеллисем унăн чăнах та питĕ нумай пулнă çав.

* * *

Виçĕ эрне ытла ĕнтĕ Мурат партизансемпе пĕрле çÿ
рет, вĕсемпе пĕр пурнăçпа пурăнать.

Питĕ лайăх астăвать Мурат: нимĕç фашисчĕсем пир
тăван çĕршыв çине тапăнни çинчен яла хыпар çитсене
унăн пиччĕшĕ Неçтĕр, военкоматран чĕнессине кĕтме
сĕрех, ялти нумай çамрăксемпе пĕрле килтен тухс
кайрĕ. Фронтран вăл икĕ çыру ячĕ те, урăх унран са
хура пулмарĕ. Тен, вăл çырнă та пулĕ те, çырăвĕсе
çитме пултарайман—яла нимĕçсем пырса кĕчĕç... Мал

ан, темиçе кун хушши, йĕри-таврара çĕре чĕтрентерсе упăсем ухлатрĕç, кунĕк-çĕрĕн таçти ялсем çунни куăнчĕ, каç-каç пушар çутти пĕлĕт çине ӳксе, ăна юнпа ăрланă пек хĕретрĕ... Халăх çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрмарĕ, аласа памалла мар пысăк хурлăх пуласса сиссе кĕтсе ăчĕ. Нумайăшĕ, тăван килĕсене пăрахса, çывхарсах киекен фронтран аяккалла, Мускав еннелле каясшăнччĕ, нчах ку ĕмĕт часах татăлчĕ.

— Чакса кайма май çук, нимĕçсем пур çулсене те ӳлсе лартнă,—терĕç.

Кăна илтсенех, ялти вăй-питти арçынсенчен никам та олмарĕ—вĕсем темле пĕр харăс çухалчĕç. Унтан, пĕр итĕ илемлĕ уяр ирхине, ял çийĕнче хура хĕреслĕ икĕ амолĕт хурчкасем пек явăнма тытăнчĕç.

— Нимĕçсем,—терĕ тахăшĕ...

Тĕрĕсех иккен. Ял çийĕнче пĕр-иккĕ çаврăнсанах, амолĕтсен çунаттисем айĕнчен бомбăсем тăкăнма тапатрĕç. Вăраммăн, хăрушла ӳлесе анчĕç вĕсем çĕрелле, ăлхасене хупласа лартмалла шартлата-шартлата çурăлĕç. Калама çук хăраса ӳкнĕ ялти халăх ăçта кирлĕ нталла тухса чупрĕ. Пĕр тăруках темиçе киле вут ыпса илчĕ, виç-тăвата çурт кĕмсĕртетсе ишĕлсе анчĕç. ынсем ун çине пăхса тăмарĕç,—кашниех хăйĕн пуçне, ни-пăчине çăласшăн пулчĕ... Сасартăк, çав вăхăтрах, ывлăшра вĕçекен нимĕç тискер кайăкĕсем тата хăруăрах ĕç туса хучĕç: чылай çӳлте вĕçнĕ çĕртен вĕсем ккĕшĕ те—умлăн-хыçлăн—йывăç тăррисем таранах імса анчĕç те, хирелле, çырманалла, вăрманалла чупан ним хӳтлĕхсĕр çынсем çине пулемётсенчен шатăрăттарма тытăнчĕç. Вĕри тăхлан вăйлă çумăр çунă пекех йкăнчĕ, унран ниçта çăлăнма та май пулмарĕ...

Унтан кайран мĕн пулнине Мурат астусах çитереймест: ăл çул хĕрринчи пĕр лупашкана кĕрсе ӳкнĕ, унăн куçĕем хуралса килнĕ, пĕр вăхăт сывлайми пулса выртнă. ем вăхăт выртсан тин тăна кĕрсе, тăрса чупнă... Ĕмĕрте,

нихăçан-нихăçан манмалла мар хăрушă картин курнă вара вăл çавăн хыççăн.

Бомбăсем лекнипе хыпса илнĕ çуртсем темĕн пысăкĕш кăвайтсем пек çунса тăнă, вĕсенчен хура кăвак, çăра тĕтĕм йăсăрланна, пĕтĕм ялĕпех йӳçек шăршă сарăлна. Тепĕр чышши—фугаслă бомбăсем тивнипе арканнă çурт сем патĕнче вĕсен хуçисем чакаланнă: мĕн те пулин çĕмĕрĕлмесĕр юлнă-ши, тесе шыранă вĕсем. Шăппăн шăлĕсене çыртса йĕнĕ... Хăшпĕр хĕрарăмсем çеç, кӳгс килнĕ чĕрисене лăплантараймасăр, сасăпах макăрнă. Пуринчен ытла, Муратăн пиччĕшĕпе пĕрле фронта кайнă пĕр çамрăк колхозникăн арăмĕ чарусăр, ăнран тухса кайсах кăшкăрса йĕнĕ. Хăйне ӳкĕтлесе лăплантарма тăрăшнине те итлемен вăл, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе çухăрнă, хăйĕн çӳçĕсене хăй тăпăлтарнă...

— Пĕтерчĕç ман пурнăçа, вĕлерчĕç, чуна кăларса илчĕç!.. Мĕн тăвас ĕнтĕ ман, пуçăма ăçта кайса чикес?!— таттисĕр çуйăхрĕ вăл.

— Мĕскĕн, епле асапланать ..

— Шел ĕнтĕ, тăван чун вĕт, хăйĕн...—хĕрхенсе тăчĕç ăна ыттисем.

Кайран пĕлчĕ Мурат: нимĕççен бомби вăл хĕрарăмăн пӳртне лексе тĕппипех арканă, пӳртрен турпас купи çеç пулса юлнă, анчах пӳртĕнче унăн пĕчĕк ачи сăпкара выртнă. Ачин пĕр ӳт таткине те тупайман...

Ку çеç те мар. Чул чĕреллĕ нимĕç çынçиенĕсем пуле мĕтсенчен пенипе темиçе çынна вĕлернĕ, темиçе çынна суранлатнă иккен. Вилнисенчен пĕри—пĕтĕм колхоз хисеплесе пурăннă Якур мучи пулнă. Унпа Мурат пуринчен те хытă хуйхăрчĕ, мĕншĕн тесен вăл старик авалхи пурнăç çинчен кĕнекери пекех интереслĕ каласа кăтартатчĕ, халлаппе пуçласан çĕрĕ-çĕрĕпе итлес килетчĕ ăна. Тĕрĕссипе каласан, Октябрь революцичченхи пурнăç çинчен, помещиксем, улпутсем, урядниксем çинчен, вĕсем чухăн халăха епле асаплантарса пурăнни, хресченсем вĕсене хирĕç вăхăчĕ-вăхăчĕпе епле хăватлă пăлхав-

сем туни ҫинчен Мурат чăн малтан Якур мучирен илтсе пĕлнĕ.

— Телейлĕ халь эсир, ним нуши-хуйхине те пĕлместĕр, пахчари шăпчăксем пек юрласа кăна ӳсетĕр,—теме юрататчĕ Якур мучи. Ҫавăнтах, шĕвĕр пӳрнипе кăмăллăн юнаса илетчĕ:

—Вăл телее сыхлама пĕлес пулать... Хаклă хакпа туяннă эпир ăна. Сире телейлĕ тавасшăн, нумай паттăр ҫынсем хăйсен пуҫĕсене хунă!

Халь акă—Якур мучи ҫук ĕнтĕ... Урăх нихҫан та илтес ҫук унăн ыгармалла мар халлапĕсене. Вĕлерчĕҫ ăна. Мĕншĕн? Мĕн айăпшăн? Эх, тискер кайăксем, кашкăрсем, урнă йытăсем! Таварĕҫ-ха сире куншăн!—хыттăн тапрĕ Мурагăн чĕри.

---

Питĕ йывăр хуйхă пусса илчĕ ҫынсене. Самантран самантах нимĕҫсем ҫĕнĕрен килсе тухасран хăрарĕҫ вĕсем.

Лешсем чăн та нумай кĕттермерĕҫ. Бомбăсем пăрахса, яла ҫунтарса, ишĕлтерсе пĕтерне хыҫҫăн тепĕр куннех, каҫалла сулăнсан, яла пĕр 30—40 нимĕҫ салтакĕ мотоциклетсемпе куҫ-пуҫ курăнми тусан мăкăрлантарса пырса кĕчĕҫ.

Пуҫланчĕ вара мăшкăл, ҫарату, тискерлĕх...

Фашистсен салтакĕсем колхозниксен килĕсем тăрăх выҫса ҫитнĕ шакалсем пек ыткăнса ҫӳрерĕҫ, камăн мĕн пур—ĕҫмелли, ҫимелли, сĕт, ҫу, ҫăмарта, пыл—пĕтĕмпех сĕтĕрме тытăнчĕҫ. Ял урамĕсем, килхушшисем, пӳртсем—урнă нимĕҫсем хаяррăн кăшкăрнипе, хĕрарăмсемпе ачасем макăрнипе, ҫăткăн хурахсенчен хăтăлма тăрăшса таракан кайăк-кĕшĕк сассипе тулса ларчĕҫ. Ним йĕркесĕр, ҫĕр таслă шав тапранчĕ ялта...

Муратсем патне те тимĕр тĕплĕ атăсем тăхăннă икĕ нимĕҫ кĕмсĕртеттерсе пырса кĕчĕҫ. Хура хурҫă калпак тусанпа витĕннĕ тĕксĕмрех симĕс тумтир тăхăннă, сухалĕсене хырман ҫынсем,—вĕсем путса ларнă чакăр куҫĕсемпе хăрушла сиввĕн пăхаҫҫĕ, кăкрисем умне Мурат

халиччен те курман йышши кĕске хура пăшалсем çакса янă.

— Где хозяйн?—ыйтрĕ пĕри, хыткан та çӳллĕскер, тӳрех малти куккăралла иртсе. Тепри алăк патĕнче юлчĕ.

— Хуçи эпĕ,—терĕ Мурат амăшĕ чĕтрекен сасăпа, аллисене кăкри патне тытса.—Акă, ачапа пурăнатпăр...—Вăл килхушшинелле тухакан чӳрече патĕнче ним чĕнмесĕр тăракан, хăранипе кăвакарсах кайнă Мурат çине кăтартрĕ.—Ман ывăл...

— Старику ăçта?—куç харши айĕпе пăхрĕ нимĕç.

— Çук вăл ман, вилни вунă çул çитет ĕнтĕ...

— Суятăн? Асту, ват супнă, суйнăшăн эпир халех—акă!..—Сăмахне каласа пĕтерес выранне, нимĕç хура револьвер кобурне шаккаса илчĕ...—Ăнланатăн-и?

— Суймастăп ара, тупата суймастăп,—чĕререн ĕнентерме тытăнчĕ Мурат амăшĕ.—Ыйтăр хуть, кӳршĕсенчен ыйтса пĕлĕр...

— Партизана кайман-и? Эсир вĕт çавăн пек халăх!

— Çук, çук... Чăн калатăп!

— Ну, юрĕ халлĕхе, унта курăнĕ!—терĕ те нимĕç кун хыççăн, сĕтел пуçне пырса ларчĕ.—Акă мĕн, эсĕ... сысна! Мĕн пур—пĕтĕмпех сĕтел çине каларса хур. Сĕт, çăмарта, пыл, чăх пусса ăшала. Халех, хăвăрт кăна хатĕрлесе пар. Пĕлсе тăр—нимĕç салтакĕ кĕтме юратмасть. Марш!

Мурат-амăшĕ салтак çине ним чĕнме пĕлмесĕр, куçĕсене мăчлаттарса пăхса тăчĕ. Лешĕ те, хĕрарăм килĕшессе кĕтсе, ун çинелле пăхрĕ. Çапла темиçе самант иртрĕ. Унтан нимĕç салтакĕ састартăк яштă сиксе тăчĕ те, ывăçипе сĕтел çине чант! çапрĕ.

— Матка, убивай буду!—кăшкăрса ячĕ вăл.—Мĕн кĕтсе тăратăн? Хăвна тытса ăшаласса кĕтетĕн-и? Марш, халех мĕн хушнине ту! Вунă минутран çимелли хатĕр пулмасан, çак анчăк çурипе иксĕре те çав йывăçран çакатăп!

Унăн куçĕсем тата тискертереххĕн çутăлса илчĕç. Мурат амăшĕн калас тенĕ сăмахĕ пырне ларчĕ. Вăл: пирĕн нимĕн те çук, тесе каласшăнччĕ, анчах ку урнă тискер кайăксене тем каласан та усси пулас çуккине ăнланса, чĕтреме ернĕ урисене аран-аран шутарса, чăланалла кĕрсе кайрĕ.

Хыткан салтакĕ алăк патнелле пырса теприне тем аларĕ те, лешĕ пуçĕпе сулчĕ.

— Мальшик, вода! Ходи сюда!—кăшкăрчĕ вăл.

Мурат, чăлана кĕрсе пытаннăскер, хăра-хăрах тухрĕ. Нимĕçсем пит çăвасшăн пулнине аллисемпе паллă туса кăтартрĕç.

— Идьём!

Килхушшинче вара вĕсем тем таранах çăвăнчĕç. Мурат кăштах хăюлланчĕ те, хыткан нимĕçĕнчен вăл вырăсла мĕнле майпа калаçма пĕлни çинчен ыйтрĕ.

— Ман аттен Микулай патша вăхăтĕнче Ленинградра завод пулнă,—терĕ нимĕç.—Эпир унта пурăннă. Кайран, революци тухсан, большевиксем ăна туртса илчĕç. Халь ĕнтĕ вăл завод каллех пирĕн пулать. Тепĕр уйăхран унта çитетĕп-ха эпĕ...

Мурат нимĕçпе урăх пĕр сăмах та калаçмарĕ.

— Ав епле шухăшлатăр эсир!—терĕ вăл хăйĕн ăшĕнче.— Анчах пулаймасть пуль вăл... Пустуй ĕмĕтленетĕр! Памастпăр эпир сире нимĕн те!

Вĕсем пӳрте тавăрăнса кĕнĕ çĕре. Муратăн амăшĕ апат хатĕрлесе янтăланă иккен: çатма çинче çĕрулми шаркленĕ. Нимĕçсем пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç (çăмарта вырăнне çĕрулми пĕçерни кăмăла каймарĕ пулас), унтан ним чĕнмесĕрех хыпма тапратрĕç. Чăн та ĕнтĕ, эрне хушши апат курман сыснасем пекех çирĕç çав! Пысăк çатмана темиçе минут хушшинчех тасатса хучĕç. Çисе ярсанах вара—сĕт ыйтрĕç:

— Мáтка, молёко!

Мурат амăшĕ, чĕрине хытара-хытарах, пĕр куршак сĕт кăларса пачĕ. Часах вăл та пушанчĕ.

— Ещо молёко! — ыйтрĕ çав хытканнисем.

— Турăçăм, кусене нимĕнпе те тăрантарса çитерес çук... — терĕ те амăшĕ Мурата шăппăн кăна, татах сĕт кăларса пачĕ.

Тинех тăранчĕç пулас. Пируссем чĕртсе ячĕç. Кăшт калаçкаласа ларчĕç. Унтан хытканни тăчĕ те, Мурат амăшĕ патнелле утса пычĕ.

— Матка, теперь отдавай яиц, — терĕ вăл, аллине пăшалĕ çине хурса.

— Çăмарта çук манăн... — ун куçĕнчен пăрăнма тăрăшрĕ хĕрарăм.

— Суятăн! Асту...

— Чăнах çук...

— Эппин хамăр тупатпăр!

Нимĕç Мурат амăшне тĕксе ячĕ те, чăлана кĕрсе ухтарма тапратрĕ. Унта нимĕн те тупайманнипе, тĕпсакайне сикрĕ. Çăмарта вырăнне — Муратсем хĕлле валли хатĕрлеме пуçланă çăвă'çĕклесе тухса лартрĕ.

— Сыхла! — терĕ хăйĕн юлташне. Хăй килхушшине чупса тухса, кĕлете кĕрсе кайрĕ. Пĕр ала çăмарта йăтса тухрĕ. Ăна пÿрте кÿртсе лартса, аслăк çине чупрĕ. Унтан часах чăхсем кăтиклеме тытăнни илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ — нимĕç лупас айĕнчен ик хулхушши айне те икшер чăх хĕстерсе сиксе тухрĕ. Тахăш вăхăтра ĕлкĕрнĕ вара чăхсен мăйĕсене пăра-пăра хума...

— Э-р гут! [1] — терĕ вăл, çак пĕтĕм „тупăша" сĕтел çине купаласа хурса.

Муратпа амăшĕ пăлханнипе чĕтресе кăна пăхса тăчĕç...

---

Хыткан нимĕçĕ Муратсен кил таврашĕнче ухтарса çÿренĕ хушăра тепри сĕтел хушшинче чĕлĕм йăсăрлантарса ларчĕ-ларчĕ те, унтан малти стена çинчи тĕкĕр патне пырса тăчĕ. Тĕкĕр çинчен унăн куçесем çавăнтах çакăнса тăракан сăн-ÿкерчĕкĕсем çине куçрĕç. Шăп çав вăхăтра

[1] Питĕ лайăх!

хытканни пӳрте чӑхсем ҫӗклесе кӗчӗ. Унӑн „трофейӗсем“ ҫине ҫӑткӑнла куҫсемпе пӑхса илсенех, ку ӑна кӑчӑк туртрӗ:

— Герберт, кил-ха...

Хытканни пычӗ. Ку вара шыҫмак пӳрнипе тӳрех Мурат пиччӗшӗ икӗ ҫул каялла Хӗрлӗ Ҫартан янӑ сӑн ӳкерчӗкӗ ҫине пусрӗ:

— Фото... Совиет зольдат... Красноармеец!

— Большевик! —тăруках шăлӗсене шатăртаттарса илчӗ хытканни. Ҫавăнтах чăлханалла пăхрӗ.—Тух-ха кунта, ватă йытă-ами! Халех тух!

Мурат амăшӗ итлерӗ. Фашист ăна алличчен карт туртса ывăлӗн сăн-ӳкерчӗкӗ умне пырса тăратрӗ:

— Кам ку? Сан ывăлу-и? Ăҫта вăл халь? Паллах ӗнтӗ, вăрҫăра? Кала часрах, чунна кăлариччен!

Хӗрарăм пӗрре аслă ывăлӗн сăнӗ ҫине, тепре хăй патнелле чупса пынă Мурат ҫине пăхса илчӗ те, нимӗн те чӗнмерӗ, пит те йывăр япалана ҫӗклесе пăрахнă хыҫҫăнхи пек пӗтӗм кăкрипе сывласа ячӗ ҫеҫ.

— Ну?!—фашист, аялти тути хӗррине ҫыртса, икӗ чышкине те чăмăртаса, хӗрарăма ҫавăнтах ҫапса ӳкерме хатӗрленсе тăчӗ.—Сан ывăлу вет? Командир, эппин—коммунист?

Анчах хӗрарăм чӗнмерӗ... Шалти пур вăйне пухса, вăл шăлӗсене ҫыртса лартрӗ те, хăйӗн курайманлăхпа тулнă тарăн куҫӗсемпе фашиста ҫисе ярас пек пăхса тăчӗ.

— А-а, шайза! Шарламастăн-и?—кăшкăрса ячӗ те вара фашист, пӗррех унăн сылтăм аллине пăрса хуҫлантарса лартрӗ.—Калаҫтарма пӗлетпӗр эпир! Ну?

Мурат амăшӗ, алли ыратнипе, тем пекех асапланчӗ, ҫапах та тӳсрӗ, пӗр сăмах та каламарӗ, йынăшса илчӗ ҫеҫ.

— Каламастăн? Эппин, вăл сан ывăл? Эс эппин коммунист амăшӗ? На сана ывăлушăн!..—Фашист ăна пӗтӗм вăйӗпе питӗнчен чышрӗ.

Хĕрарăм ӳкрĕ. Мурат сиксе чĕтĕреме тытăнчĕ. Çук, хăранипе мар, чĕринчи тарăху капланса хăпарнипе, нимĕç-сене çакăнтах тем туса тăкас килнипе чĕтрерĕ вăл: персе антарасчĕ, пырĕсене шăлпа кăшласа татасчĕ...

Нимĕç унăн амăшне тепре çапма аллине çĕклесен вара, вăл хăй мĕн тунине хăй те чухламасăр, ун çине хыçал-тан сиксе, хулпуççинчен çыртса лартрĕ. Анчах тепĕр салтакĕ ăна çавăнтах каялла туртса антарчĕ те, урайне çаврăрса çапрĕ.

— А-а, эсир капла-и?

— Большевик йыттисемех иккен!—мĕкĕрсе ячĕç те фашистсем тата ытларах урса кайса, Муратпа унăн ватă амăшне ним майсăр хĕнеме тапратрĕç. Тем пекех тăрăшса, çине тăрса, хашкаса, шăлĕсене тискер кайăкла шатăртаттарса хĕнерĕç...

— Ачана ан тивĕр... Хама вĕлерĕр, анчах ачана ан тивĕр,—темиçе хутчен те йынăша-йынăша ӳкĕтлерĕ Мурат амăшĕ. Ку—пачах усăсăр пулчĕ, этем сăнĕпе çӳре-кен кашкăрсем нихăшне те хĕрхенмерĕç, вĕсем çав тери хытă хĕненипе ним пĕлми пулсан тин чунĕсем тăранчĕç курăнать: сĕтел çинчи чăхсемпе çăмарта-çăва çĕклерĕç те—тухса кайрĕç. Юнланса пĕтнĕ урайĕнче амăшĕпе ачи пĕр хусканмасăр, аран сывласа, хушшăн-хушшăн йынăшса выртса юлчĕç...

Тепĕр кунне амăшĕ вилчĕ.

Мурат вырăн çинчен тăраймиех чирлесе ӳкрĕ, амăшне пытарма та каяймарĕ, юрать—кӳршĕсем ырă кăмăллă пулчĕç те, ăна чиперех тирпейлесе çĕре чикрĕç.

Çавăнтан вара Мурат пĕчченех тăрса юлчĕ.

Хытă хуйхăрчĕ вăл, темиçе кун хушши ним тума пĕл-месĕр çӳрерĕ, ниçта ларма-тăма вырăн тупаймарĕ хăйне валли. Чăнах та, мĕнле пурăнтăр-ха ĕнтĕ пĕр тăвансăр тăрса юлнă вунвиçĕ çулхи ача?

Анчах та—халăх çинче çын пĕтмест, теççĕ.

Мурата кӳршĕсем пулăшрĕç.

Ахаль те питĕ туслă, килĕштерсе пурăнатчĕç те вĕсен

колхозёнчи çынсем, халь вара, тискер тăшман килсе кĕрсен пурне те пĕр хурлăх, пĕр хуйхă пусса илсен—вăл туслăх тата ытларах ўсрĕ, çынсем „пĕри—пуриншĕн, пурĕ—пĕриншĕн“ текен йĕркепе пурăнма тытăнчĕç...

Мурат хăйсен пўрчĕн чўречисене хăмапа çапса лартрĕ те, виç кил урлă тăварахри—Лизавет инке патне пурăнма куçрĕ. Лизавет инкен ывăлĕ—Мурат пиччĕшĕ пекех—вăрçă пуçлансанах фронта кайнă та, халь вăл пĕчченех пурăннă.

— Пурăнкалăпăр-çке, ачам... Вăтăпа вĕтĕ килĕштереççĕ вĕсем, эпир те майлашкалăпăр...—терĕ те Лизавет инке малтанхи кун, Мурата хăйĕн ачи пекех пăхма пуçларĕ.

---

... Пĕрре çаратса, çĕмĕрсе, пусмăрласа тухса кайнă хыççăн нимĕçсем тата темиçе хут та пычĕç. Вĕсем пыра-пыра кайнипе ялта вырăх-чĕрлĕх те сайраланса юлчĕ, кайăк-кĕшĕк те пĕтрĕ. Нумай мăшкăл тўсрĕç ял çыннисем, нумай куççуль тăкăнчĕ. Унпа пĕрлех—халăхра хăватлă тавăру кăмăлĕ ўснĕçемĕн ўссе, хаярланса пычĕ.

Пĕр ирхине ял хыçĕнчи çырмара икĕ нимĕç салтакĕн виллине тупнă, терĕç. Ку чăнах пулнă-мĕн. Нимĕçсем çав самантрах пĕтĕм ял халăхне хăваласа пухса, пурне те темĕн тĕрлĕ хăратса, револьверсемпе юнаса, кăкăрсенчен тытса силлесе тĕпчерĕç.

— Калăр халех, кам тунă ку ĕçе?!

— Айăплисене тупса памасан—халех пурне те персе вĕлеретпĕр, ватти-вĕттипех!

— Сирĕн килçуртсенчен кĕл тăватпăр!—ĕçкĕпе çĕтсе ларнă сасăсемпе кăшкăрчĕç фашистсем.

Никам та чĕнмерĕ. Çынсем çăварĕсене шыв сыпнă пекех тăчĕç... Пĕр ответ кăна пулчĕ.

— Пĕлместпĕр эпир... Нимĕн те пĕлместпĕр...

Хăратни нимĕн чухлĕ те пулăшманнине курса, нимĕçсен офицерĕ халăх хушшинчен виçĕ старике туртса кăларчĕ

те, кăшт аяккарах, пурне те курăнмалла вырăна илсе кайса тăратрĕ.

— Хĕрхенĕр хăвăран ватлăха: юлашки хут ыйтатăп! Кам вĕлернĕ пирĕн салтаксене? Эсир пĕлетĕрех!—хыттăн кăшкăрса ыйтрĕ вăл, стариксем ҫине револьверĕпе тĕллесе.—Шухăшлама пĕр минут паратăп!

Стариксем—«пĕлместпĕр», тесе пуҫĕсене пăркаларĕҫ.

Вара офицер вĕсене ҫавăнтах пере-пере пăрахрĕ.

Виҫĕ старик кăкран касса янă йывăҫсем пек ӳкрĕҫ. Анчах нимĕҫ сыпҫиенĕсене ку та ҫитмерĕ: вĕсем стариксен юнланса пĕтнĕ кĕлегкисене ял вĕҫнелле йытă виллисене сĕтĕрнĕ пек сĕтĕрсе кайса, уй-хапки каштинчен туртса ҫакрĕҫ.

— Кам пире хирĕҫ тăрать—вĕсене пурне те ҫакнашкал чуччу кĕтсе тăрать!—тесе пĕлтерчĕ офицер.—Эсир кунта партизансемпе ҫыхланнă курăнать-ха. Кăтартăпăр эпир сире партизансене епле йышăнмаллине, нумайччен асăнмалла пулĕ!..

Виҫĕ кун та виҫĕ каҫ ҫакăнса тăчĕҫ вилесем. Вĕсен ҫывăхне никама та ямарĕҫ. Тӳсмелле мар шăршă сарăлма пуҫласан тин вĕсене антарса пытарма ирĕк пачĕҫ.

---

Кун хыҫҫăн кун иртрĕ, ялҫыннисен пурнăҫĕ йывăрланнăҫемĕн йывăрланчĕ...

— Пурнăҫ мар ку, тамăк!

— Кун пек пурăниччен—вилмелле кăна...

— Вилсе пĕтетпĕр пуль ĕнтĕ пурте...

Ҫакăн пек сăмахсем кашни утăмра тенĕ пекех илтĕнчĕҫ. Анчах вĕсене ваттисем, вăйсăрланса ҫитнисем, ҫемҫерех кăмăллă хĕрарăмсем ҫеҫ каларĕҫ,—ҫамрăкраххисем, вăй пуррисем—урăхла шухăшларĕҫ, урăх ĕмĕтсемпе пурăнчĕҫ. Майларах вăхăт ҫавăрăнса килессе ҫеҫ кĕтрĕҫ вĕсем.

Пĕр-пĕринпе калаҫнă чух ҫынсем час та часах таврара ҫӳрекен партизансем ҫинчен асăнма пуҫларĕҫ,—партизан-

сен хăюллă та паттăр ĕçĕсем чĕресене савăнтарса, кăмăлсене çĕклерĕç, çутă шанчăк вĕрсе кĕртрĕç.

Вăл калаçусене Мурат хăй те пĕрре кăна мар илтрĕ. Питĕ матур ĕçсем тăваççĕ иккен партизансем: пĕр çĕрте нимĕçсен поездне çырманалла сиктереççĕ, тепĕр çĕрте çул тăрăх пыракан автомашинăсене тапăнса—салтакĕсене вĕлереççĕ, пурлăхĕсене туртса илеççĕ.

Нумай пулмасть тата пĕр ялта фашистсен отрячĕ çĕр каçма чарăннă, тет те, партизансем çĕрле вĕсем патне шăппăн пырса тухса—аллă салтака яхăн гранатăсемпе персе вакласа тăкнă, тет...

— Эх, çавăн пек отряда каясчĕ!—шухăшлама пуçларĕ Мурат.—Алла пăшал тытасчĕ те—кашни кун, кашни утăмра шаккасчĕ фашистсене! Хĕнесе вĕлернĕ аннешĕн те, хама асаплантарнăшăн та, персе вĕлернĕ Якур мучишĕн те тавăрасчĕ... Нимĕн чухлĕ те хĕрхенмĕттĕм çав, пĕр тумлам вăй юлмиччен çапăçăттăм!..

Куллен кун вăйланса пычĕ ку шухăш Мурат пуçĕнче. Тĕлĕкре те курма пуçларĕ вăл ăна. Хăй ĕнтĕ тахçанах партизан пулса тăнă пек, аллинче—винтовка, хулпуççийĕ урлă—пулемет лентисем... Пĕччен тем тума пултармалла!

Анчах ĕмĕте пурнăçа кĕртме ниепле те май килмерĕха. Таçта çӳреççĕ вăл партизансем? Ăçта шыраса тупса пĕрлешес вĕсемпе? Ниçта та тупас çук пуль. Çитменнине, вĕсем питĕ вăрттăн, никама курăнмасăр çӳреççĕ, тет. Ыйтса пĕлес—ялта никамран ыйтса пĕлме çук. Ирĕксĕрех ĕнтĕ ним шарламасăр, пĕр-пĕр телейлĕ самант килсе тухасса кĕтсе пурăнма тивет...

Мурат телейне, вăл саманта нумай кĕтмелле пулмарĕ.

Пĕрре, çумăрлă-çиллĕ тĕттĕм каçхине, Мурат ыйхă витĕр Лизавет инке пӳрчĕн кайри чӳречинчен такам хуллен кăна шакканине илтрĕ. Малтанах уйăрса илме те хĕн пулчĕ: те çын шаккать, те чӳрече кантăкĕ çилпе чĕтренет. Анчах кантăк темиçе хутчен те пĕр пек шăкăртатнă пирки Лизавет инке вырăн çинчен тăрса кăмака ку-

кринелле пычĕ. Вăл кăштăртатса утнипех Мурат вăранса кайрĕ те, пуçне тăратсах итлеме тытăнчĕ.

— Кам унга?—чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ Лизавет инке.

— Эпĕ ку, уçса кӳрт..—терĕ тулти çын.

Кам вăл, мĕнле çын—ăна Мурат пĕлме пултараймарĕ анчах унăн чĕри, теме сиснĕ пек, сиксе тухаслах тапма пуçларĕ, пуçĕнчи шухăшĕсем çиçĕм пек вĕçе-вĕçе илчĕç: тен каллех нимĕçсем... Мĕн тума?.. Лизавет инкен нимĕн те çук ĕнтĕ, салтаксем пĕтĕмпех çаратса тухнă... Тата—мĕншĕн-ха Лизавет инке унран тĕплĕн ыйтса пĕлмесĕрех алăк уçма кайрĕ?

Анчах кун хыççăн пĕр минут та иртеймерĕ—Мурат пĕтĕмпех ăнланса илчĕ. Чӳречерен шаккани—Лизавет инкен ывăлĕ пулнă..

Пӳрте каялла кĕрсенех, Лизавет инке ывăлĕн мăйĕнчен уртăнса, те савăннипе, те хурланнипе макăрса ячĕ:

— Эх, ывăлăм! . Игнаша... Килтĕн пулать... Эп сана ăçта та пулин вилĕм тупрăн пуль, текех кураймăп, тесеттĕм. Çĕрĕн-кунĕн ăшран тухмарăн...

Игнат амăшне лăплантарма тытăнчĕ.

.— Чарăн ĕнтĕ... Куратăн—сывах вĕт эпĕ, нимĕн те пулман мана! Макăрас вырăнне—çитер-ха мĕн те пулин, хырăм пит выçă, иртенпех çимен паян.

Вăл ăнсăртран кăмака еннелле çаврăнчĕ те, тĕттĕмре Мурат тăнине курах кайрĕ.

— Кам ку, анне?—хăвăрттăн ыйтрĕ амăшĕнчен.

— Э-э, каламарăм-и сана? Мурат вăл, Неçтĕр шăлнĕ,—терĕ ăна хирĕç амăшĕ.—Иккĕн пурăнатпăр эпир унпа...

— А ма хăйсем патĕнче мар вăл?

— Пирĕн килте никам та çук...—Лизавет инке вырăнне ответ пачĕ Мурат, аллине Игнат патнелле тăсса.—Пĕччен эпĕ...

... Лизавет инке çимелли хатĕрлесен, вĕсем виççĕшĕ те кăмака кукрине вырнаçса ларчĕç те, вĕçĕ-хĕррисĕр калаçу пуçланса кайрĕ. Малтан Игнат амăшĕ ялта юлашки вăхăтра мĕн-мĕн пулса иртнисем çинчен каласа пачĕ.

кăшпĕр самантсенче ăна Мурат пулăшса пычĕ, уйрăм-уйрăм самантсем çинчен вăл каларĕ. Вĕсен калавне Игнат пĕр сăмах сиктермесĕр итлесе ларчĕ, сайра-хутра çеç, чĕри тулса çитнипе, йывăррăн сывла-сывла ячĕ:

— Вот, йытăсем!.. Сволочьсем... Мĕн хăтланаççĕ вĕт!..— шалне çыртсах тарăхса ларчĕ вăл нимĕçсем çине.

Унтан кĕскен кăна хăй çинчен каласа кăтартрĕ.

— Эпир кунтан инçе мар...—терĕ вăл.

— Ăçта апла?

— Тĕрлĕ çĕрте çӳретпĕр: паян—кунта, ыран—тепĕр çĕрте. Тăшмана хăш тĕлте лайăхрах хĕнеме май пур—эпир çавăнта. Халь акă Кашкăр Варĕнчен килтĕм...

Ку сăмахсене илтсенех, Мурат пуçĕ-ăче хăйне шанчăк паракан шухăш вĕçсе илчĕ.

— Эсир партизансем мар-и, Игнат пичче?

— Самăй çавсем... Анчах асту—кун çинчен никама та калама юрамасть! Эпир кунĕн-çĕрĕн Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр, тăшмана кĕтмен çĕртен пыра-пыра çапса хăвшататпăр...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп,—хавасланса кайрĕ Мурат.—Поездсене çырмана сиктеретĕр, машинĕсене туртса илетĕр, кайсене пĕтеретĕр...

— А эс ăçтан пĕлетĕн ăна?—тĕлĕнчĕ Игнат.

— Пĕлмесĕр ара... Сирĕн çинчен ялçыннисем пĕрмаях каласаççĕ, питĕ мухтаса калаçаççĕ!

— Ун пек çӳреме питĕ хăрушă пуль-çке, ывăлăм?— Игнат çине юратуллă куçĕсемпе пăхса ыйтрĕ амăшĕ.—Хăвăра çавăрса илсе тытма пултараççĕ вĕт...

— Вăрçă, аннеçĕм! Темле те пулма пултарать... Анчах—хăраса тăрсан ĕç тухмасть вĕт. Кĕрешес пулать. Тăшмана кашни утăмрах пыра-пыра çапмалла, пĕр самантлăха та сывлăш çавăрма памалла мар... Нимĕçсем кунта пире чура тума килчĕç, анчах эпир чура пуласшăн мар...

— Вăл çаплах ĕнтĕ, тĕрĕс...

— Акă, виçĕмкун каç эпир К. шывĕ хĕрринчи вăрман-

та, çул çинче, вĕсен виçĕ танкне пĕтерсе хутăмăр. Е́ç çапла пулчĕ. Инçетренех вĕсен моторĕсен сассине илтрĕ мĕр те, çулăн ик енĕпе, тĕмĕсем ăшне пытанса вырт мăр. Хамăр тĕле çитсен вара—пирĕннисенчен пĕри ма ти танкĕ айне гранатăсен çыххине ывăтрĕ. Çав саман рах питĕ вăйлă взрыв пулчĕ те—танк чарăнса ларч Ăна пула кайрисем те чарăнчĕç... Тытăнтăмăр вара гр натăсемпе, хăйне тĕллĕнех хыпса кайакан бутылкăсем неме! Виççĕшĕ те çунма тапратрĕç... Танксем ăшĕн ларакан салтаксен ирĕксĕрех сике сике тухмалла пулч Анчах пĕри те хăтăлаймарĕ—пурне те пирĕн пульăсе хăваласа çитсе тăрăнтара-тăрăнтара антарчĕç... Унч малтанхи кунĕнче, çавнашкалах, фронт патнелле боепр пассемпе апат-çимĕç илсе каякан темиçе грузовика а катнăччĕ...

Тата чылай каласа кăтартрĕ Игнат. Каларĕ вăл шăппăн пытанса пырса вĕлернĕ часовойсем, сиктерсе янă скла сем, тыткăнран хăтарнă красноармеецсем çинчен... Ун кашни калавĕ Мурата тата ытларах пăлхантарчĕ, кăмă не çĕклерĕ, ку таранччен хăй ăшĕнче çеç тытса усра шухăшне вăйлатнăçемĕн вăйлатрĕ.

Ерипен кăна шурăмпуç кăвакарма пуçлани палăрса Игнат кайма хатĕрленчĕ.

— Çутăличчен отряда çитес пулать манăн,—те вăл.—Эпĕ вĕт сана курасшăн çеç килтĕм, анне... Ле мана юлташсем кĕтсе тăраççĕ, пăшăрханаççĕ пуль тат Эпĕ—асли-çке вĕсен.

— Командир-и?—тĕлĕннипе чутах кăшкăрса ярат Мурат.

— Командир. Ма тĕлĕнтĕн? Пултараймастăп пуль, т тĕн-и?

— Çук, уншăн мар...—Мурат пĕр вăхăтлăха чăран тăчĕ те, унтан тăрук персе ячĕ:—Манăн санпа пĕрл пырас килет!

— Мĕ-ĕн?—ăнланмĕш пулчĕ Игнат.

— Санпа пĕрле пырас килет, тетĕп... Илсе кай мана архасшăн хăвăр пата!

— Хăрамастăн-и? Хăрушă вĕт унта, вĕлерме те пулараççĕ...

— Нимрен те хăрамастăп! Хуть те темле хăрушă пулăр!

— А çынна вĕлерме пултаратăн-и?

— Вăл çын тăшман пулсан—вĕлеретĕп! Хăнк та тумагăп.

— О-о! Питĕ паттăр-çке эсĕ!—кулса ячĕ Игнат.—Апла пулсан—илме те юрать те ĕнтĕ сана, анчах халех ...р-ха...

— Мĕншĕн? Çамрăк тетĕн-и? Эп вунтăватта кайрăм алы! Манăн ГТО значокĕ те пур... Пăшал пеме те питĕ ...та эпĕ!—хупăрлама тытăнчĕ ăна Мурат. Хăй çав вă...трах тумланма пуçларĕ.

— Эсĕ мĕн—чăнах-и?—ыйтрĕ Игнат, кăна кура.

— Чăнах пулмасăр... Илсе каятăн вĕт?

— Çук.

— Мĕншĕн?

— Тӳсейместĕн! Йывăр пулать.

— Тӳсетĕп! Нимĕнле йывăрлăхран та хăрамастăп... ...у... вăхăтлăха та пулин илсе кай хуть, юрăхсăр пулан—хăваласа яр,—макăрса ярас патнех çитсе тархасла... пуçларĕ Мурат.

Игнат ун çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те—килĕшрĕ:

— Юрĕ эппин, атя... Кайран курăпăр унта.

Çак самантран вара Муратшăн пачах урăхла, çĕнĕ урнăç пуçланчĕ. Мурат партизан пулса тăчĕ.

---

Отряд вăрманти тарăн çырмара вырнаçнă пулнă. Игнатпа Мурат унта хĕвел тухас умĕн çитрĕç. Çĕр каçа вăрманнипе, тата сакăр çухрăм хушши хăвăрт утса ...илнипе, Мурат самаях ывăнчĕ. Игнат ăна йывăç турат...сенчен тунă ӳпле умне илсе пычĕ те:

— Çакăнта кĕрсе кап, кайран эп сана килсе вăратăп,-терĕ.

Вара вăл кăнтăрла иртичченех çыварнă. Татах та в ранас çукчĕ пулĕ те, хăлкана такамсем хыттăн калаçн кĕрсе кайрĕ:

— Çаки-ха вăл?—ыйтрĕ пĕри.

— Самăй çавă,—терĕ тепри.

— Ну, ку ытла пĕчĕкех мар-ха, ку пултармалла!

— Тӳрех калама хĕн те—пурăнсан курăпăр-ха...

— Ашшĕне хывнă пулсан—аптрас çук!

Мурат куçĕсене уçрĕ те, ӳпле алăкĕ умĕнче Игна па Микулай мучи, колхозра темиçе çул хушши коню пулса ĕçленĕ старик тăнине курчĕ. Мурат вăраннин курса, вăл тӳрех унпа калаçма тытăнчĕ.

— Ну, ĕçсем мĕнле, шăнкăрч?

— Пыраççĕ-ха, пурăнатăп,—мăн çын пекрех пулма тă рăшса ответ пачĕ Мурат.

— Пирĕн пата килтĕн пулать?

— Килтĕм çав...

— Питĕ аван ку, пит аван... Пирĕншĕн халь каш çын хаклă. Санран та тен усă пулĕ.

Микулай мучи ӳпле алăкĕ умне кукленсе ларчĕ т чĕлĕмне тултарма пикенчĕ.

— Вот вĕт самана,—терĕ вăл, кăвакрах çемçе тĕт йăсăрлантарма пуçласа,—кам шутланă кун пек пуласс Леш вăрçăра эпĕ нимĕççене хирĕç сан аçупа пĕрле ç пăçнăччĕ. Таçта та пултăмăр: Карпатра, Галицире... Вă питĕ маçтăр пулемётчикчĕ пирĕн, икĕ медаль илчĕ. Ун танпа çирĕм пилĕк çул иртрĕ ĕнтĕ. Халь вăт санпа пĕр ле çапăçатпăр акă. А вĕт ун чух эсĕ çут тĕнчере те пул ман, э?

— Пулман çав...

— Ну, аптрамăпăр-ха халь те. Эс мана игле кăна, эп с на вĕрентĕп. Вată салтак пултарать вăл.

Микулай мучи мĕншĕн кун пек каланине Мурат тăр

ах ăнланмарĕ, анчах çав вăхăтра калаçăва Игнат хутшăнчĕ.

— Мучи тĕрĕс калать,—терĕ вăл.—Отряда килтĕн пулан, халь ĕнтĕ çапăçма вĕренес пулать. Çавăнпа та эп ана ун çумне пĕрлештеретĕп...—(Вăл пуçĕпе Микулай мучи еннелле сулчĕ).—Вăл ман умра саншăн ответ тытать. Илтрĕн-и?

— Юрать...

— Ничево, ашшĕпе килĕштернĕскер—ывăлĕпе те майлашăпăр-ха,—сухалне пĕтĕркелесе илчĕ Микулай мучи.

— Шанатăп ара!

Ӳпле хыçĕнче çав тери янравлă, илемлĕ хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

— Ăçта ара, пирĕн пата çĕнĕ хăна килнĕ, тет?

— Кунта, кунта,—терĕ ăна хирĕç Игнат, пуçне тулалла кăларса.—Кĕрсе кур!

Кĕçех алăкра пуçне сенкер тутăр çыхнă хĕр пуçĕ курăнчĕ. Мурат ăна тӳрех палласа илчĕ: ку—фермăра ĕнесене суса пурăннă хĕр, Груша пулнă. Мурат пиччĕшĕпе пит туслă пурăнатчĕç вĕсем вăрçăччен...

— А-а, Коршунов!—терĕ вăл, Мурата курсан.—Хăçан килтрĕн? Пĕчченех-и? Мĕнле майпа шут тытрăн?

— Игнат пиччепе килтĕм...

Груша хăйĕн çывăх тăванне курнă пекех савăнса, хавасланса калаçма пуçларĕ унпа. Ялтисем çинчен ыйтса пĕлнĕ, сăмах майĕн Муратăн пиччĕшĕ çинчен те ыйтрĕ, хайсен ялĕнчен отрядра тата кам-кам пуррине каласа пачĕ. Отряда нумайăшĕ килнĕ иккен, Мурат вĕсен çинчен пĕлмен те! Кӳршĕри ялсенчен те йышлăн пухăннă. Грушăпа Микулай мучи сăмахĕсем тăрăх—отряд ĕнтĕ пысăк вăй пулса тăнă, вăл тăшмана питех те хытă хĕнеме пултарнă. Ку хыпар Муратăн чĕрине савăнтарсах ячĕ: унăн вĕт нимĕçсене çав тери вирлĕн тавăрас килнĕ!

— Ку таранччен çынсем каланă тăрăххăн çеç пĕлнине вăл халь хăйĕн куçĕпе курчĕ. Отрядри çынсем пурте ăна çав тери килĕшрĕç: хăюллă, нимрен хăраман, хастар-

лă халăх пухăннă мĕн кунта. Кунпа пĕрлех—кăмăлл йăваш, пĕр пĕриншĕн тем пама хатĕр, пĕр-пĕрине ни çан та нимĕнпе те кӳрентерес çук кунти çынсем...

Игнат хушнă тăрăх, Мурат пĕрмаях Микулай му сывăхĕнче пулчĕ. Апат та пĕрле çирĕç вĕсем, каçхине пĕрле çывăрчĕç. Анчах çапах та Муратăн чунĕ ă Игнат патнелле хытăрах туртрĕ, вăл кашнинчех ун çывăх пулма тăрăшрĕ. Нимрен ытла, ăна Игнат пур йы ши хĕçпăшала та çавтери лайăх пĕлни кăмăла кайрĕ, в унран пурне те пĕлме, вĕренме тăрăшрĕ.

Ку çамрăк партизан çар ĕçне çине тăрсах вĕренесш çуннине курса, Игнат хăй те ăна пулăшса пычĕ. Пĕр э не те иртмерĕ пуль—Мурат отрядри пур йышши хĕçп шала та пĕлекен пулчĕ: винтовка, граната, ручной пул мет... Пуринчен ытла, ăна автомат кăмăла кайрĕ: çăмă кĕске, юри ятарласа Мурат валли тунă пекех. Перес те пит хăвăрт перет, пульăсене пăрçа пекех сапать, к рок çине пусса тăр кăна. Ну ĕнтĕ, çавтери лайăх хĕçп шал!

Пĕринче, Игнат çав автомата тасатнине пăхса тăрса тăрсан, тӳсеймерĕ Мурат, ыйтрĕ:

— Игнат пичче, мана та автомат парăр-ха...

— Пеме пĕлетĕн-и?

— Вĕрентĕм ĕнтĕ...

— Юрĕ, кирлĕ вăхăтра парăп.

Çапăн хыççăн Мурат хăй аллине автомат-пăшал тыт ĕмётпех пурăнчĕ. Тăшмана тĕл пулсан, вăл пăшалпа ă мĕн чухлĕ пĕтерсе тăкма пулать!

---

Анчах та Мурат отряда пынăран вара питех пыс ĕçсемех пулмарĕç-ха. Отряд сĕм вăрманти пĕр уллах т рăн çырмарах тăчĕ, вырăнтан хусканмарĕ. Уйрăм парт зансем, е тăват-пилĕк çын пĕрле пухăнса каç-каç таç кая-кая килчĕç, тавăрăнсан Игнатпа пăшăлтатрĕç. Вĕсе таврари ялсенче мĕн пулса пыни çинчен, нимĕçсем ăç мĕн туни çинчен пĕле-пĕле килчĕç пулмалла. Ытти па

изансем ку вăхăтра пуринчен ытла хĕçпăшалпа тăрашрĕç—унпа мĕнле лайăхрах усă курмаллине вĕренчĕç, аваăрт авăрласа, хăвăрт тĕллесе пеме вĕренчĕç.

Чăнах, пĕр икĕ хутчен самаях вĕри çапăçусем пулса иртрĕç.

Пĕринче дозорта пулнă партизансем вăрманти пĕр ысăках мар уçланкă хĕрринче тăшманăн мотоциклисчĕсем *) чарăнса тăни çинчен пĕлтерчĕç. Игнат çавăнтах пĕр утмăл çын уйăрса илчĕ те, вĕсем çырмаран ансăр сукмаксем тăрăх хăвăрт кăна тухса кайрĕç. Тепĕр çур сехетрен партизансем çав уçланкăна пур енчен те çавăрса илчĕç. Игнатран нимĕн чухлĕ те юлман Мурат унпа пĕрле вăрăм курăк тăрăх упаленсе малалла тухрĕ те, питĕ аван курчĕ: уçланкăра чăнах та пĕр 20—25 мотоциклист пухăннă иккен. Машинĕсене йывăçсем айне тăратнă, хăйсем хĕвел ăшшине вырнаçнă: хăшĕсем выртаççĕ, хăшĕсем пăшалĕсене тасатаççĕ, теприсем чăмлаççĕ, чĕлĕм туртаççĕ... — Ай-ай, курортри пекех тыткалаççĕ хăйсене... Хурал та çук пулмалла! — терĕ Мурат умĕн упаленсе пынă Игнат, ручной пулемета вырнаçтарса. — Хиччас, эпир вĕсене çут тĕнче кăтартăпăр...

Мурат унпа юнашар пырса выртрĕ. Вăл питĕ хытă палханчĕ, унăн чĕри siксе тухас пекех тапрĕ. Боевой операцинче вăл пирвайхи хут пулнă-çке, партизансен чăн-чăн ĕçне пуçласа хутшăннă. Хăй куçĕ умĕнче нимĕç салтакĕсене курсан, вăл чăн малтанах пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе илчĕ: тахăш самантра ăна нимĕçсем Муратăн тăван`ялне сывлăшран бомбăсемпе аркатни, урамра çын вилнисем выртни, унтан нимĕçсем яла пырса кĕни, амăшĕпе иккĕшне хĕнесе çĕмĕрсе тăкни — пĕтĕмпех аса килчĕ. Хăй аллинчи вĕрçĕн автомата Мурат калама çук хытă чăмăртарĕ, унăн халех, ним тăхтаса тăмасăрах пеме пуçлас кăмăл çуралчĕ.

Çапах та—пемерĕ, мĕншĕн тесен приказсăр пеме хушман.

---

*) Мотоциклетпа çӳрекен салтаксем.

Минут иртрĕ, иккĕ иртрĕ...

— Хăçан пуçланать-ха? Мĕне кĕтет Игнат? Кап выртсан, тăшмана тартма та пулатьǃ — пăлханчĕ Мура Хăех сисрĕ — ниçта кайса кĕрейменнипе, унăн аллисе чĕтреме тытăнчĕç. Вăйпах хăйне пусарма тăрăшрĕ.

— Ну, лайăхрах тĕллеǃ Ав, сарлака çурăмлине... — терĕ те Игнат юлашкинчен, пулеметран вăрăм чере кăларса ячĕ. Ăна илтсенех, Мурат та курок çине пуср Çав самантрах, ытти пур партизансем те уçланкăн пу енчен пеме тапратрĕç. Вăрманта пăшал сассисемпе пуле мĕтсем шатăртатни çеç кĕрлесе тăчĕ...

Нимĕçсем хăйсене çакнашкал сасартăк тапăнасса пача та кĕтмен пулнă. Малтанхи пăшал сассисем илтĕнсене вĕсем ăнран тухса кайса ăшаланма тытăнчĕç. Унталл ыткăнчĕç, кунталла чупрĕç — пур çĕрте те вĕсене парти зансен пульлисем çите-çите сăхрĕç. Нумайăшĕ çавăнта тирĕне-тирĕне кайрĕç, ӳкнисем упаленсе те пулин хă тăлма тăрăшрĕç — усси пулмарĕ... Вилес умĕн вĕсем тем ле сăмахсем кăшкăрчĕç, хăйсене çак çĕршыва хăвалас килекенсене ылханчĕç пулмалла...

Мотоциклетсем тăнă çĕртен нимĕçсен пĕр пулемĕч кĕске черетсемпе вĕрме тытăнчĕ, анчах темиçе самант ранах ун патĕнче партизансенчен пĕри ывăтнă граната кĕрслетсе çурăлчĕ те — пулемĕт шăпланчĕ.

Уçланкăра мĕн пулса пынине Мурат çавтери çивĕччĕн сăнаса выртрĕ. Хăй куçĕпех курчĕ вăл капкăна лекнĕ фашистсем епле пĕтнине. Акă, вăсенчен пĕри, суранлан нă аллине тепринпе тытса, Мурат выртакан çĕрелле чуп са çывхарма пуçларĕ — йывăççем хушшине тарса хăтă ласшăн пулчĕ пулас... Мурат ăна тĕллерĕ те, темиçе пуля кăларса ячĕ. Фашист çавăнтах тăсăлса ӳкрĕ.

— Маттур, шăллăмǃ — кăшкăрчĕ Игнат, çав хушăра Муратăн ĕçне курса выртнăскер. — Куншăн сана авто мата пуçĕпех паратăп. Пултаратăнǃ

Темиçе минутран партизансем уçланкăна тухрĕç. Çирĕм икĕ мотоцикл, темиçе çăмăл пулемĕт, автоматсем, вин-

овкăсем, патронсем, радиостанци лекрĕ вĕсен аллине.
— Тухăçлă кун пулчĕ паян! — терĕ Игнат. — Пĕрмай кун пек пулса пырсан — питĕ аванччĕ!

Каçхине ўплере Микулай мучи Мурата мухтаса ларчĕ:
— Матур, ачам! Аçу ятне çĕртместĕн... Малашне те çавăн пекех паттăр пул. Асту: совет халăхĕ хăйĕн паттăр ывăлĕсене нихçан та манмасть вăл, яланах ыр тăвать!
Ĕçсем малалла та ăнса пычĕç.
Мотоциклистсен колоннине аркатнă хыççăн пĕр-ик кунран Игнат Дубовăн отрячĕ тăшманăн пысăк обозне тĕл пулчĕ. Нимĕçсем темиçе ялти колхозниксене хăйсен вырринe вăйпах лавсем çине тиеттерсе чугунçул станцине леçтерме тытăннă-мĕн. Паллах, вăл тырă Германие каймалла пулнă. Çул тăрăх вăрăм обоз пынине асăрханах, партизансем вăрман хĕрринче пытанса ларчĕç те, лавсем хăйсен тĕлне çитсен сасартăк сиксе тухрĕç. Обоза сыхласа пынă салтаксем тĕрлĕ енне тарма тытăнчĕç, вĕсенчен чылайăшне партизансем пере-пере ўкерчĕç, колхозниксене каялла тавăрчĕç.
— Киле кайăр та — пĕтĕм тырра пытарăр, нимĕçсене пĕр пĕрчĕ те ан парăр, — вĕрентсе ячĕç вĕсене.
Колхозниксем партизансене тем пекех тав турĕç вара, кирлĕ вăхăтра хуть те мĕнпе пулăшма сăмах пачĕç.
— Сирĕншĕн нимĕн те шел мар...

---

Пуринчен ытла, Мурат хăйсен отрячĕ июлĕн юлашки кунĕсенче тунă ĕçе лайăх астăвать...
Вăл акă мĕнле пулчĕ.
Пĕрре, хĕвел аннă вăхăтра, отряда çĕтĕк-çатăк тумтирлĕ, питне-куçне чăрмаласа пĕтернĕ ватăрах çын пырса тухрĕ. Ун çине пăхсанах, вăл юлашки вăхăтра тем те пĕр курсни, çывăрманни, ывăнса çитни палăрчĕ. Ун пек чухне — „çын сăнĕ те юлман“, теççĕ. Дозорта тăнă партизансем ăна Игнат патне илсе пырсан — вăл ура çинче те тăраймарĕ, сулăнса кайса чутах ўкетчĕ.

— Аçтан килтĕн эс? — ыйтрĕ Игнат, ку çын пĕр ту... ката çине ларса сывлăш çавăрсан.

— Ивановкăран... Сакăр çухрăм кунтан... — хашкаса я... лешĕ, çамки çинчи тарне çĕтĕк пиншакăн çаннипе шăл...

— Ху çав ялсем-и?

— Çав ялсемех...-

— Мĕн ятлă?

— Прохор... Коровин... Нимĕçсем киличчен колхоз... ферма заведующийĕ пулса ĕçлесеттĕм...

— Мĕн хыпарпа килтĕн?

— Ох, усал хыпарпа килтĕм, юлташсем!.. — Вăл хăйĕ... йĕри-тавра пухăнса тăнă партизансене хуйхăллă куç... семпе пăхса çавăрăнчĕ. — Паян ирхине каллех нимĕçсе... пырса кĕчĕç те, пĕтĕм яла кутăн-пуçăн çавăрчĕç...

Партизансем ун сывăхнерех куçса тăчĕç.

— Мĕн турĕç вара?

— Ухтарман кĕтес те юлмарĕ. Хăйсем пирĕнне хĕçп... шал шыратпăр, терĕç, анчах алла мĕн лекнĕ — пĕтĕмпе... сĕтĕрсе тухрĕç... Çимелли, кĕпе-тумтир, тĕрлĕ вак япа... ласем... Камăн сехет пур, камăн кĕмĕл кашăк, вăчăра... тĕппипех шăлчĕç. Виçĕ така пусса пĕçерттерчĕç те, таç... тан мурĕнчен тупнă эрехе кӳпсе ларчĕç... Вара çӳç-пу... вирелле тăрса каймалла ашкăнма тапратрĕç, каласа пам... та пĕлес çук! Кашни çыннах çыпçăнчĕç, хĕнеме е каш... таран туртса çакма сăлтав шырарĕç... Пуринчен ытла... хĕрарăмсене йывăр килчĕ: вĕсене пĕр çирĕм çынна яхă... пухрĕç те, шкул çуртне хăваласа кӳртрĕç... Унта мĕ... пулса иртнине пĕлместпĕр, урама хĕрарăмсем кăшкăрни... асаплăн макăрни, нимĕç салтакĕсем ахăлтатни çеç ил... тĕнчĕ. Алăк умне тăратнă часовой никама та сывăха... ямарĕ, пăшалĕпе перес пекех тăчĕ... Нимĕн тума та... пултараймарăмăр эпир: çара алăпа штык çине епле пыр... са кĕретĕн? Манпа кӳршĕре пурăнакан хĕрарăм, пĕр ни... мĕç салтакĕ унăн вунпилĕк çулхи хĕрачине пахчаналла... сĕтĕрме пуçласан — тӳсеймен, ал айне лекнĕ кĕреçепе...

...кринчен çапнă та, лешĕ вара çав самантрах ăна та, ...ĕрне те персе пăрахнă...

Колхозник таранăн сывласа ячĕ те, шыв ыйтрĕ. Ăшĕ ...автери пиçсе çитнĕ иккен унăн: пĕр котĕлок шыва ним ...арăнмасăр ĕçсе ячĕ вăл. Унтан тахăшĕ тыттарнă пируса ...аçса кайсах ĕмме тытăнчĕ.

— Пуринчен тискерри ку та мар-ха, — терĕ вăл кăшт ...ăхтасан. — Кăнтăрла иртсен нимĕçсен тепĕр ушкăнĕ ...аçта, темле майпа тыткăна лекнĕ пилĕк красноармееца ...исе пычĕç. Шутлатăп та, вĕсем суранланнă пирки лекнĕ ...улмалла, тетĕп, мĕншĕн тесен кашниннех е пуçне, е ал...ине, е урине çыхнăччĕ... Пĕри уйрăмах хытă уксаклат...е, аран-аран утатчĕ...

— Ну-ну, вара?

— Мĕн турĕç вĕсене?

— Вĕлерчĕç-и? — калавăçа часрах васкатрĕç партизан...ĕм.

— Ан та калăр... — аллипе сулчĕ вăл. — Аса илме те ...ăрушă. Вĕсем вĕт — тискер кайăкран та тискер кайăк! ...алтан пĕр вăхăт шкул пӳлĕмĕнче тытрĕç вĕсене... Доп...ос турĕç пулмалла. Ну, а вĕсем допроссене епле майпа ...унине пурте пĕлеççĕ: кашни ыйту хыççăнах е чышкăпа, ... револьвер аврипе, е çĕçĕпе усă кураççĕ. Кусене те ça...ăн пекех тĕпченине эпир тӳрех ăнлантăмăр: пĕр-ик се...етрен, нимĕçсем вĕсене урама каялла илсе тухсан, — ...ăхма та çукчĕ вĕсем çине... Суранĕсене çыхнине çура...ура антарнăччĕ, пичĕ-куçĕсем — чĕп чĕрĕ юн, аллисене ...аялла çыхнă, аттисемпе гимнастĕркисене хывса илнĕ. ...ĕринне вара... каларăм-çке, пĕри питĕ хытă уксаклатчĕ, ...ерĕм... Çавăнне сылтăм хăлхине çĕçĕпе касса илнĕччĕ, ...нăн майĕ тăрăх çăра юн таттисĕр сăрхăнса пыратчĕ. ...ăл ĕнтĕ пĕр урине тепĕр уринчен иртереймиех пулса ...итнĕччĕ...

Красноармеецсене урам тăрăх тăвалла илсе кайрĕç. ...ĕсен умĕпе шăрт пек тăракан хĕрлĕ уссиллĕ самăр ...фицер утса пырать. Кăкри çинче хайхи „тимĕр хĕрес"

çапкаланса пыратчĕ уван. (Вăл хĕрессене Гитлер хан чи шанчăклă йыттисене паратъ пулас). Хыçалтан — шт кĕсемпе красноармеецсен çурăмĕсенчен тĕллесе — пил салтак хуралласа пычĕç.

— Ну ĕнтĕ, кусене персе пăрахма илсе кайрĕç, терĕмĕр эпир, красноармеецсене чунтан хĕрхенсе.

Хире тухсан, ку шухăш тата ытларах çирĕпленч Униче картинчен пĕр çĕр утăмра вĕсене шăтăк алттарм тытăнчĕç Паллах ĕнтĕ — мĕн шăтăкĕ... Халран кайса çи нĕ красноармеецсем аран-аран ĕçлерĕç, тимĕр хĕресл вĕсем çине тек те текех кăшкăрса васкатрĕ, хăшĕ т пулин чарăнса тăрсанах — пырса тапрĕ...

— Эсир ăçта пултăр вăл вăхăтра? — ыйтрĕ партизан сенчен пĕри, колхозникăн каларне пўлсе.

— Чылай аякра тăтăмăр... Çывăха ямарĕç пире, кăш маларах утса пыма пуçласанах пăшалĕсемпе юнарĕç.

— Кала, кала эс, малалла мĕн пулчĕ?

— Шăтăка хатĕрлесе çитерсен, красноармеецсене пилĕ кĕшне те ун хĕррине кăларса тăратрĕç. Çурăлса кая патнех çитрĕç пирĕн чĕресем!

Офицер вĕсен умĕпе пĕр-икĕ хутчен калле-малле ут каласа илчĕ. Пурне те йĕркипе пăхса тухрĕ. Унтан сасартăк, вăл хăлхине касса илнĕ красноармеец умĕнч чарăнчĕ те, ăна янах айĕнчен чышса пуçне çĕклеттерчĕ

— Ан çывăр! Пăх çакăнталла, — терĕ вăл, аллипе шă тăк çине кăтартса. — Эсĕ хăвăр тăван çĕршĕн çапăçатпăр терĕн паçăр. Анчах эпир вăл çĕре сире ахалех парас терĕмĕр... Кашнине икĕ метр. Ха-ха-ха! Çитет-и? Е сире..

Офицер тата темскер каласшăнччĕ, анчах красноармее пўлчĕ ăна.

— Ытла час кулатăн, господин офицер! — терĕ вăл Унăн сасси тĕлĕнмелле уççăн, çирĕппĕн янраса кайрĕ —Эсир пирĕн çĕре валеçме — нихçан та унăн хуçи пулас çук!.. Вырăс çĕрĕ çинчен сирĕн аслаçăрсемпе аçăрсем епле тухса сирпĕннĕ — сирĕн те çавăн пекех, каялла пăх-масăр тармалла пулать акă!

Ăна урăх калама памарĕç. Офицер темскер кăшкăрса ячĕ те, ун патнелле сиксе пырса — пĕррех пуçĕнчен çапрĕ. Красноармеец шăтака анса ӳкрĕ. Вара çав самантрах нимĕç салтакĕсем кĕреçесем тытрĕç те, шăтăка васкасах тăпра тултарма тапратрĕç...

Красноармеец çапах та парăнасшăн пулмарĕ курăнать, пĕр ик-виçĕ хутчен те шăтăкран унăн пуçĕ курăнчĕ, анчах ăна кашниннчех каялла çапа-çапа антарчĕç. Юлашкинчен вăл: «йытта — йытă вилĕмĕ пулĕ!» — теса кăшкăрнине çеç илтрĕмĕр эпир...

Колхозник калама чарăнчĕ. Çырмара шăп пулса тăчĕ. Пĕр-ик минут хушши никам та пĕр сăмах та чĕнеймерĕ. Сынсем пĕрин хыççăн тепри тарăнăн сывла-сывла илчĕç. Йывăр шухăшсем çавăрăнчĕç вĕсен пуçĕсенче, унпа пĕрлех — нимĕç фашисчĕсене тата вирлĕрех, тата хаяртарах тавăрас, вĕсене ăçта тĕл пулнă — çавăнта вĕлерес, ваккас, вутпа çунтарас кăмăл вĕресе хăпарчĕ.

— Ытти красноармеецсене мĕн турĕç тата? — чылай вăхăтран ыйтрĕ Игнат. — Персе пăрахрĕç-и?

— Çук... Тем шухăш кĕчĕ офицера — ыттисене тивмерĕ çав. Вĕсене каялла илсе тавăрăнчĕç те, шкул килхушшинчи сарайне питĕрсе лартрĕç.

— Вара халь те çавăнтах-и вĕсем?

— Çавăнтах пулма кирлĕ. Хăйсем тухса кайман-тăк, çавăнтах. Анчах хăйсем кĕçĕрех тухса каясси палăрмарĕ-ха, эпĕ çавăнпа чупса килтĕм сирĕн пата...

— Пирĕн çинчен ăçтан пĕлме пултартăн?

— Халăх калаçать ара...

— Нимĕçсем каяс çуккине епле пĕлетĕн?

— Мĕншĕн тесен колхозниксенчен çаратса тухнă япаласем аплипех выртаççĕ, лавсем çине те тиемен. Каяс пулсан, вĕсене пăрахса хăварас çуках вĕсем.

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ...

— Сирĕн çине çеç шанатпăр, тăвансем... — Колхозник куллех пурин çине те ыйтуллăн пăхса çавăрăнчĕ. — Епле пулсан та тавăрасчĕ вĕсене ку мăшкăлшăн. Ытла та тӳс-

ме çук вӗт. Юриех сире чӗнме ячӗç мана хамӑр ял çы
нисем. Инçех мар кунтан, шӑп тӗттӗм пулнӑ çӗре çит
пулать.

Партизансем пурте хӑйсен командирӗ çинелле пӑхр
Игнат ватӑ юман çумне тайӑнса, тарӑн шухӑша кай
тӑчӗ. Унтан вӑл колхозникрен вӗсен ялӗ мӗнле вырӑн
ларни, çывӑхра мӗнле çырма-çатрасем, вӑрмансем пур
нимӗçсен отрядӗнче миçе çын пулма пултарни çинч
тата мӗнпе хӗçпӑшалланни çинчен ыйтса пӗлме тытӑн

Тепӗр сехетрен пӗтӗм отряд вырӑнтан тапранчӗ. Çы
ма тӗпӗсемпе, чӑтлӑхсем вигӗр, ансӑр сукмаксем тӑра
ним шавсӑр шуса пычӗ вӑл.

Мурат пӗрмаях Микулай мучипе юнашар утрӗ. Ха
унӑн сылтӑм хулпуççийӗ çинче вӗрçӗнӗ автомат, пиçи
хийӗ çинче нимӗçсен винтовкинчен вӗçертсе илнӗ ки
жал евӗрлӗ сарлака штык çакӑнса пычӗ. Вӑхӑтран вӑх
вӑл Микулай мучипе пӑч-пач сӑмах хушкаларӗ.

— Сан ывӑлу ӑçта халь, мучи?

— Кам, Павӑл-и?

— Ийя, çав.

— Пӗлместӗн-и мӗн? Вӑл вӑрçӑ тухсанах, сан пиччӳ
пӗрле Хӗрлӗ Çара кайнӑ вӗт.

— Таçта ӗнтӗ халь вӗсем...

— Ӑçта пулччӗр? Фронтра çапӑçаççӗ!

— Эс ху нимӗçсемпе ӗлӗк те çапӑçнӑ тетӗн-и-ха?

— Икӗ хутчен те çапӑçнӑ. Малтан, кивӗ армире тӑ
чух, Рига патӗнче, унтан — вунсаккӑрмӗш çулта, Хӗр
Çарпа пӗрле Украинӑра... Ну, Украйнӑра питӗ хытӑ хӗн
рӗмӗр эпир вӗсене, хӳрисене тӑратсах тарчӗç!

— Эппин, халь виççӗмӗш хут тӗл пултӑн эсӗ вӗсемп

— Çапла пулса тухать! Хамӑн ӗмӗрте икӗ хут хӗне
ятӑм вӗсене, виççӗмӗшӗнче пуçӗсене çапса аркатсах яр
пулать ӗнтӗ — унсӑрӑн чарӑнас çук вӑл тискер йӑх!

Мурат унӑн сӑмахӗсемпе чунтанах килӗшет.

— Тата инçе-ши? — тесе ыйтать вӑл тепӗр çур кил
метр пек кайсан.

— Пур-ха. Ма ыйтатӑн?
— Часрах ҫитес килет...
— Сан анчах мар, пурин те ҫавах пуль вӑл, — тет ӑна рӗҫ Микулай мучи.
Микулай мучи тӗрӗс калать. Ҫак самантра партизансен рин те пӗр ӗмӗт пулнӑ: ҫитмелли вырӑна часрах ҫитес , тӑшмана ҫавӑрса илсе, пӗр ҫын юлмиччен пӗтерсе касчӗ, совет ҫыннисене асаплантарнӑшӑн виҫӗ хут ыт-рах тавӑрасчӗ...

---

— Ҫурҫӗр ҫитеспе отряд вӗтлӗх вӑрманти пӗр уҫлан-ра чарӑнчӗ.
— Ҫитрӗмӗр...
— Йк ҫухрӑм ҫеҫ кунтан... — пӑшӑлтатни илтӗнчӗ пар-зансем хушшинче. — Ялӗ ҫак хирӗн леш вӗҫӗнче, лу-шкара ларать тет...
Отряд командирӗ пурне те пӗр ҫӗрелле пухрӗ те, йӗр-ленсе ларма хушрӗ.
— Паян питех те вӑйлӑ тытӑҫу пулма пултарать, лташсем, — терӗ вӑл лӑпкӑ сасӑпа. — Тен, хальччен пул-пур ҫапӑҫусенчен те вӑйлӑрах пулӗ вӑл... Халех ка-са хуратӑп: тӑшмана ҫак ялта ҫӗнтермешкӗн мӗнпур ня хурса, пӗр шит те каялла чакмасӑр ҫапӑҫмалла пу-ть. Ҫавӑнпа та кам та кам хӑйне шансах каймасть, икленет — вӑл ан пытӑр пирӗнпе, ан та кансӗрлетӗр...
Игнат пӗр вӑхӑтлӑха шарламасӑр тӑчӗ.
— Пур-и ун пеккисем?
— Никам та чӗнмерӗ.
— Ҫук эппин? Юрӗ... Халь ӗнтӗ хӗҫпӑшалсене тӗрӗс-ӗр те канӑр, ҫутӑлас умӗн вӑратӑпӑр сире. Тӑшмана вӑл и тутлӑ ыйхӑпа ҫывӑрнӑ чух пырса ҫапас, тетпӗр. А сир... — Игнат отрядри боевой расчет командирӗсем ҫи-е пӳрнипе тӗлле-тӗлле илчӗ. — Чирков, Коробов, Ваню-ев, тата... эсӗ, Мурат, халех манпа пыратӑр. Шагом арш!

«Ăçта илсе каять-ши»? — шухăшларĕ Мурат, анчах мангранах тавçăрса илчĕ: «Разведкăна ярать».

Вĕсем вăрмантан тухрĕç те, хĕвеланăç еннелле ут[
Пуринчен малта Игнатпа хайхи колхозник пычĕç.
урлă, таптаса пĕтернĕ ыраш хушшипе тӳререн тӳрĕ,
çур сехет пек утсан, вĕсем самаях çӳллĕ сăрт хĕрр[
тухса тăчĕç.

— Çакăнта, — терĕ партизансене ертсе килнĕ колх[оз]ник.

Малта, сарлака лупашкара, чăнах та пысăках мар[
вырнаçса ларнă иккен. Кăвакрах тĕтреллĕ тĕттĕмлĕх ви[
ялти вагă пывăçсем, çуртсем, çывăхри картасем палăрса[
раççĕ.

— Вăртăр пурте, — хушрĕ Игнат. — Яланах астăв[
çĕрле нихçан та сăрт çинче тăма юрамасть, аялтан п[
сан вал юпа пекех курăнать...

Разведчиксем выртрĕç. Ял еннелле пĕтĕм куç вăйĕ[
пăхса, итлеме тытăнчĕç.

Шăпах иккен, пĕр сасă та илтĕнмест.

— Кун каçа ашкăнса ывăннă пулмалла — çывăра[
ĕнтĕ, — терĕ колхозник.

— Тен, тухса кайнă вĕсем? Килни те ахалех пу[
пуль? — иккеленсе илчĕ пĕри.

— А эпир ăна халех пĕлĕпĕр, — терĕ Игнат.

Çавăнтах разведчиксене кăтартусем пама тытăн[
Пĕрне ялăн ту вĕçне, теприне анат вĕçне, виççĕмĕш[
ялăн леш енчи анкартисене „хыпашласа тухма“ хуш[

— Ăçта мĕн пур — пĕтĕмпех сăнаса астума тăрăш[
Май килет пулсан — часовойсене тирпейлеме юрать, [
чах — астăвăр, пĕр сас та пулмалла мар. Кам та пул[
пĕрре пăшал персе ярсан — пирĕн пĕтĕм операци пĕт[
ларма пултарать... Тепĕр сехетрен çакăнтах пухăнатпă[
Ăнлантăр-и пурте?

— Ăнлантăмăр.

— Кайăр...

— Ман ăçта каяс?—ыйтрĕ Мурат çав вăхăтра, хăйне парасса кĕтсе илейменнипе.—Каламарăн-çке...

— Эс манпа пыратăн, манăн связной пулатăн,—терĕ нат.—Санпа эпир ялваррине кĕретпĕр.

Пўрте саланчĕç. Таврара малтанхи пекех шăп пулчĕ, ăн анат вĕçĕнче çеç пĕр йытă кахаллăн вĕркелесе чĕ. Унтан инçетре çинçе саслă автан авăтса ячĕ. сах ăна тепри сас пачĕ, унтан тата тепри...

— Шăп çурçĕр,—терĕ Игнат,—вăхăт пур-ха пирĕн!

Вĕсем виççĕн—хăйсене ертсе килнĕ колхозник Прохор, нат, хыçалтан Мурат—паранкă йăранĕсем хушшипе аленсе пычĕç. Вăхăтран вăхăта чарăнса, итлесе выртрĕç, тан каллех малалла шурĕç. Пĕр сарай хыçĕнче ларакан рлăхан тĕмисем ăшне пырса кĕрсен, Прохор урамалла крĕ. Тўсме çук вăрăм пек туйăнчĕç ку минутсем... чăх Прохор нумаях тăмарĕ, часах таврăнса—шăппăн пĕлтерчĕ вăл:

— Урамра никам та курăнмасть...

Зара вĕсем виççĕшĕ те пахчаран тухса, çуртсем, хўме- çумĕпе йăпшăнса, уйрăм йывăççем кутĕнче чарăнса оса, ял тăрăх аналалла кайрĕç.

ыттă сăнарĕç вĕсем...

Шкул патнелле çывхарнă чух, ку вырăнта урам шех тĕттĕм пулнипе усă курса, тепĕр енне каçрĕç.

Авă, курăр...—терĕ Прохор сасартăк, пĕр аллă метр ісăн.

Гинкерсе пăхрĕç...

Шкул умне нимĕççем икĕ пулемет лартнă иккен. вантах икĕ часовой калле-малле ерипен кăна утса реççĕ.

Красноармеецсене хупнă сарайĕ хăшĕ?—ыйтрĕ Игнат.

— Килхушшинче...

— Кайса пăхас пулать.

— Атьăр...

Разведчиксем каллех карта урлă каçса пахчана кĕчĕç.

Улмуççисем, хăмла çырли тĕмĕсем хушшипе, ку
сем пек шăппăн шурĕç.

— Акă... Çак, хăма витни,—аллипе кăтартрĕ Про
Патнерех пычĕç. Игнат пĕшкĕнсе ларса, сапур шă
витĕр шалалла пăхма тытăнчĕ. Чылай вăхăт пăхрĕ.
тан тăчĕ те, аллипе каялла сулчĕ.

— Килхушшинче икĕ çăмăл оруди, темиçе пуле
темиçе купа винтовкă тăрать. Анчах вĕсем леш енче
ре те—лайăхах курăнмаççĕ,—терĕ вăл йывăççем айне
кайса тăрсан.—Акă мĕн, Мурат. Санăн куçусем ç
пулма кирлĕ. Сарай хыçĕпе шуса кай та леш енчи х
витĕр пăхса винтовкăсене шутлама тăрăш. Вĕсене
ласа кăларсан—салтаксен шутне пĕлеттĕмĕр. А эпир
чен сарайĕнче мĕн пуррине пĕлме тăрăшăпăр.

Мурат пĕр сăмах каламасăрах командир хушнине
нăçа кўртме кайрĕ. Малтан хăмла çырли тĕмĕсем х
шипе сарай пуçне тухрĕ, унтан, майĕпе, стена çумм
шума тытăнчĕ. Темле пулсан та, хăрамалла-çке...
пĕлет, тен пахчари кашни тĕмĕ хыçĕнчех тăшма
тискер куçĕсем сăнаççĕ, кашни самантрах вăл сан ç
кашкар пек сиксе ларма хатĕрленет? Темшĕн, Мура
сылтăм алли хăй тĕллĕнех умри штык аврине чăмăрта

Акă ĕнтĕ, вăл сарайăн тепĕр вĕçнелле çитрĕ.
утăмранах—кĕтесрен пăрăнмалла.

Таврара паçăрхи пекех шăп.

Тĕттĕм.

Мурат пĕр утăм малалла ярса пусрĕ...

Шăпах çав самантра, сасартăк, çĕр айĕнчен ўссе т
нă пек, ун умне нимĕç салтакĕ тухса тăчĕ. Хурçă к
паклă, мăн уссиллĕскер.

Вĕсем кăшт çеç пĕр-пĕрине перĕнсе çапăнмарĕç.
кĕшĕ те самантлăха юпасем пек хытса тăчĕç. Иккĕ
те пĕр-пĕрин çине вилĕм çине пăхнă пек пăхрĕç.

Паллах, вилĕм... Халех, çак самантрах... Тăхтаса
малли çук...

Мурат штыклă аллине çĕклерĕ те, мĕнпур вăйне пухса нимĕçе кăкринчен чикрĕ.

Нимĕç ним тума та ĕлкĕреймерĕ, сулахай аллипе кăкринчен тытса ерипен тĕшĕрĕлсе анчĕ.

Анчах кăшкăрма пултарнă-ха вăл. Кăшкăрсан вара партизансен пĕтĕм ĕçне пĕтерсе лартма пултарнă. Куна Мурат аван ăнланнă. Çавăнпа та, вăхăта пĕр секунда та ямасăр, вăл нимĕç тушки урлă сиксе каçрĕ те, хăй усĕнчи картусне хывса, унăн çăварне хупласа лартрĕ.

Нимĕç кăшт та хусканмарĕ. Тӳрех вилсе кайнă иккен. Хальь ĕнтĕ командир хушнине тумалли çеç юлчĕ. Сиксе тухас пек тапакан чĕрине пусарма тăрăшса, Мурат арайăн леш енчи хӳми çумне йăпшăнчĕ те, пĕр чышкă ĕмеллĕх шăтăк витĕр килхушшинчи винтовка куписене ухлама тытăнчĕ. Шутласа пĕтерсенех—чĕрне вĕççĕн утла, Игнатпа Прохор тăрса юлнă çĕре чупса кайрĕ.

— Пулчĕ-и?—ыйтрĕ Игнат.—Миçе шутласа кăлартăн?

— Сакăр купа,—терĕ Мурат.—Тата... тата эпĕ...

— Тата темскер куртăн-и?

— Çук, эпĕ... нимĕçе вĕлертĕм!

— Мĕ ĕн? Ăçта? Мĕнле майпа?—тĕлĕнсех кайрĕç Игнатпа Прохор. Вĕсен ку хыпара нимĕнпе те ĕненес килмерĕ.

Ĕç мĕнле пулнине Мурат хăвăрт-хăвăрт каласа пачĕ.

— Ĕненместĕр пулсан—кайса пăхăр...

— Атя-ха эппин!

Вĕсем виççĕшĕ те нимĕç вилли выртнă çĕре каялла кирса пăхрĕç. Унтан ăна сарайĕнчен чылай аякка, вăйлăн хусе кайнă вĕлтĕрен ăшне кайса пăрахрĕç.

— Эх, маттур та иккен эсĕ!—çурăмĕнчен хыттăн лăпласа илчĕ Мурата отряд командирĕ.—Чăн-чăн герой!

---

... Разведкăна янисем пурте малтанхи вырăна пухăннă. Кашниех хăй мĕн-мĕн курса асăрхани çинчен пĕлтерчĕç. Нимĕçсен хурал вăйлах мар иккен. Пур енчен

пěр харăс пырса çапсан—операци питех те ăнăçлă пулм пултарасси уççăнах палăрчě.

— Чуп отряда,—хушрě Мурата Игнат, разведчиксен итлесе пěтерсен.—Халех пурте кунта килччěр. Анча астутарма ан ман: шав-мěн ан пултăр!

Çавăнтах вăл разведкăран таврăннисене пěр çě вырттарчě те, партизансене ял патне ăçтан, хăш тěлте илсе пырса тăшмана епле тапăнмалли çинчен вěрентм тытăнчě. Унăн планěпе пурте килěшрěç. Вăрманта юл ытти партизансем пырса çитсен вара, командирсем вěсе хăвăртах хăйсен участкисене илсе кайрěç.

Мурат каллех Игнатпа пěрле пулчě. Вěсем хыççă тата вăтăр çын пычěç.

Каçхи тěттěмлěх витěр, пěр карта патěнчен тепě карта, пěр йывăçран тепěр йывăç патне, анкартисе ансăр тăкăрлăксем, пахчасем тăрăх шурěç партизансем Тăшмана вěсем пур енчен те хупăрласа илме шут турě Хěçпăшаллă çынсен тимěр унки хěсěннěçемěн хěсěн пычě...

Ерипен çутăлма та пуçларě. Шупкаланма тытăннă п лěт çинче, унта та кунта, пăч та пач çăлтăрсем сўнк лерěç.

Игнат хăйěн группине тек-текех васкатрě. Унăн тă ман вырнаçнă çере хыçалтан пырса тухса, ăна никамр малтан тапăнмалла пулнă. Çавăнпа васканă вăл. Опер ци ăнăçлă пуласси çавăнтан килнě.

Партизансем хăйсем те куна лайăх анланнă, вěсе хăйсем те çине тăрсах васкарěç...

Акă, вěсем шкул пахчине кěрсе, пěр сехет каялл Мурат нимěçе чиксе пăрахнă çěрелле çывхарма пуçл рěç. Тепěр темиçе минутран, темиçе ушкăн пулса, шк пахчин виç енне вырнаçса выртрěç. Йывăççем кутěнч тарăн курăк ăшěнче, аллисенчи винтовкăсене чăмăртас вěсем сигнал пуласса кěтрěç.

Ытти вырăнсене кайнисем те ку хушăра çавнашкал хатěрленчěç. Тимěр ункă тăвăрланса çитрě. Халь ěнт

...тан пěр фашист та тухса тарма пултарайман. Вěсем ...стан сиксе тухнă—çавăнтах пěтмелле пулнă!

Шăп тăвату сехетре шкул умěнче Игнат ывăтнă гра... та шартлатса çурăлса кайрě. Ун хыççăнах тата темиçе ...раната кěрслетрě. Вăл сасăсем ирхи шăплăха хускатса, ...нкартисем урлă, çырма-çатрасем тăрăх хумлăн-хумлăн ...раса саланса кайрěç.

Ку—партизансем çав тери кěтнě сигнал пулчě.

Самантранах, пěр харăс, пур çěрте те пеме тытăнчěç. Ял урамěсем, пěтěм тавралăх пăшал-пулемěтсен сасси... тулса ларчě. Уйрăмăнах, шкулпа тěлме-тěл çуртăн ...лхушшинче вырнаçнă икě ручной пулемěтпа автомат ...рăна пěлмесěр шатăртатрěç. Вěсем хăйсен умěнчи шкул чÿречисенчен тÿррěн печěç,—нимěç салтакěсен пы... к пайě унта пулнă вěт!

Ěçсем кун пек пулса тухасса пачах та кěтмен нимěç-...м, ăнран тухса кайса, ним йěркесěр чупкалама тапрат-...ç... Шкулта выртнисем хăшě чÿречерен, хăшě крыльца ...нчен тулалла сикрěç, карташнелле тарса ÿкме пикенчěç, ...чах вěсен çулне пур çěрте те пÿлсе лартнă иккен, ...та пынă—унта пereççě.

Çав вăхăтрах—пăшал сассисене, нимěç салтакěсем тис... ррěн кăшкăрнисене, йытăсем вěрнине, пěтěм ялěпе ...праннă шăв-шава хупласа, сывлăша хăватлă «урра» ...трентерсе илчě.

— Вилěм фашистсене!—çÿллě тенорпа кăшкăрчě тахă... ě.—Вилěм Гитлер йыттисене!

— Урра-а!..

— Урра-а-а...—янрарě таврара.

Партизансем, винтовкисемпе автомачěсене «на-пере-...с» тытса, шкул патне чупса çитрěç. Кунта вара хă-...тлă çапăçу пуçланса, пěтěмпех пăтрашса кайрě. Пар-...зансемпе пěрле çапăçава ку ялти колхозниксем те ...тшăнчěç, хăйсене асаплантарса мăшкăлланăшăн, пурлă-...сене туртса илнěшěн, ним айăпсăр çынсен юнне так-...шăн хаяррăн тавăрма тытăнчěç.

Нимĕçсене çывăхран тӳррĕн тĕллесе пере-пере ант
чĕç, чикрĕç, касрĕç, вакларĕç.

Тарма тăнисене хăваласа çитсе, çавăнтах тирпейлер

— Йытта—йытă вилĕмĕ!

Мурат çаксене пĕтĕмпех хăй куçĕпе курчĕ. Вăл п
вата йăмра çумне йăпшăнса, хăй тĕлĕпе чупа-чупа ир
кен нимĕçсене хăйĕн автоматĕнчи патронсем пĕтиччен
персе тăчĕ. Патронсем пĕтсен, кӳршĕри лутра пӳрт çу
не кукленсе ларнă Микулай мучи патне чупса каç
Унччен те пулмарĕ—урам вăрринчи кĕлет хыçĕнч
нимĕç кĕлетки курăнчĕ. Вăл хăйĕн парабеллумĕпе така
тĕллеме тапратрĕ.

— Авă, авă, пăх!—теме çеç ĕлкĕрчĕ Мурат. Микул
мучи персе те ячĕ. Нимĕç ӳкрĕ. Ун хыççăн тата теп
тăшман курăнчĕ. Мучи ăна та персе антарчĕ те, сик
тăрса малалла чупрĕ.

Шкултан икĕ кил урлă килхушшинчен икĕ старик п
фашиста урисенчен сĕтĕрсе тухрĕç,—лешĕ кĕлет ай
пытанма тапратнă-мĕн. Вĕсем патне тепĕр ватăрах хе
арăм чупса пычĕ.

— Çакă! Çакă мăшкăлларĕ манăн кинрен!—тесе кă
кăрчĕ те вăл, нимĕçе аллинчи виç юплĕ сенĕкпе ç
çумне пăталаса лартрĕ...

Хĕвел тухиччченех пычĕ урамри çапăçу...

Тăшмансенчен темиçе çын çеç хăтăлкаларĕç курăнат
Унта та кунта, урлă та пирлĕ выртрĕç вĕсен виллисе

Авчах партизансем енчен те çухатусемсĕр пулмар
Чăн малтан, Мурат хăйсене кунта ертсе килнĕ колхо
ник, хаихи Прохор Коровин, шкул крыльци умĕнче ӳпп
выртнине курчĕ.

— Шел, питĕ аван çынччĕ...—терĕ ун патне пухăн
тăнă çынсенчен пĕри, ăна çурăмĕ çине çавăрса хурс
Пуля унăн сулахай куçĕ айĕнчен кĕрсе, витĕрех ту
кайнă пулнă.

— Куртăм эп ăна,—терĕ тепри,—чи вĕри вăхăтра в
ак çакăнта, кĕтессе тăрса, крыльца çинчен сиксе анак

...çсене рычакла хуçа-хуçа тăратчĕ... Авă, рычакĕ те ...тах выртать.

— Хăй пурнăçне ахалех паман ĕнтĕ вăл...

Игнат ăна шкула кӳртсе хума хушрĕ.

...ат енчен тата ик сынна çĕклесе пычĕç. Пĕри—от...ри партизан, тепри ку ялти колхозник пулнă.

Вĕсене те шкула кӳртсе хучĕç.

— Пурне те чысласа пытарас пулать,—терĕ Игнат.—...плĕ вилĕм вĕсен, халăхшăн...

— Пиллĕк-ултă çын суранланнă иккен. Вăл шутрах—...улай мучи пулнă, ăна пуля сулахай хулĕнчен лекнĕ ...шăммине çĕмĕрсе кайнă. Мурат ăна суранне çыхма ...лăшрĕ.

— Ыратать-и, мучи?—ыйтрĕ вăл.

— Çу-ук, вăрăм туна çыртнă пек çеç,—пуçне пăркала...лешĕ.—Суран темеллĕх те çук, темиçе тумлам юн ...хрĕ те... Леш вăрçăра ун пек мар лекнĕччĕ те—ик ...ренех тӳрленсе çитрĕ. Пирĕн йăх—çирĕп вăл, парăн...сть.

Анчах куна вăл юри, хăйĕнчен çамрăккисем юнран ...кан пуласран, тата хăйне пĕр-пĕр яла вырттарса ...расран шикленсе каланă. Чăннипе, алли питĕ хытă ...тнă унăн, юнĕ те ниепле те юхма чарăнман. Аллине ...са пĕтеричченех сăнĕ шурса кайрĕ унăн...

Игнатпа темисе партизан çав хушăра шкул килкартин...çуртсене ухтарма ыткăнчĕç. Пурин алăкĕсене те пи...нĕ иккен. Вĕсем пĕр алăк çинчи çăраççине çапса ...трĕç, теприн çинчине аркатрĕç. Игнат чунранах хăйхи ...на лекнĕ суранлă красноармеецсене шырарĕ—анчах ...аймарĕ. Килкартинчи çуртсем пуш-пушах пулнă.

— Ăçта кайса чикнĕ-ши?—пуçне çĕмĕрсе тăчĕ Игнат ...р хушă.—Çакăнтах, терĕ-çке Прохор...

Савăнтах хăйне тавра пухăнна çынсенчен хыттăн кăш...са ыйтрĕ:

— Суранлă красноармеецсене ăçта хупнă вĕсем, кам ...лет? Куракан пулман-и?

— Ответ паракан тупăнмарĕ, çынсем пĕр-пĕрин „эс пĕлместĕн-и?“—тенĕ пек пăхса илчĕç кăна.

— Эппин—ăсатнă ăçта та пулин...—чĕрене касса рĕ шиклĕ шухăш, анчах çав самантрах тахăшĕ сас п

— Пахчара мар-и? Унта омшанник пур...

Метр та çурă çӳллĕш хăма карта урлă пахчана епле сиксе каçнине Мурат хăй те сисмерĕ. Тӳрех шанник алăкĕн урлуççине кăларса персе, урипе тап Шалтан темле нӳрĕк, çĕрĕк шăршă тапса тухрĕ.

— Кам пур кунта?! Тухăр халех!

Хирĕç сăмах чĕнес вырăнне, шалтан вăйсăррăн, юл ки сывлăшпа йынăшни илтĕнчĕ. Хăвăрт çутса янă сп ка омшанник урайĕнчи тахçанхи çĕрĕк улăм çинче уралла темиçе çын выртнине курма май пачĕ.

— Кунта!—кăшкăрса ячĕ Игнат.—Кунта, юлташсе

Пĕрин-хыççăн теприне, партизансемпе колхозник шаршлă омшанникрен тăватă красноармеец кĕлетк çĕклесе тухса, сывлăмлă курăк çине хучĕç. Вĕсем тери вăйсăрланса, хавшаса çитнĕ мĕн, калаçма мар куçĕсене те уçма пултараймаççĕ. Йĕри-тавра пухă халăх хушшинче тăракан хĕрарăмсен, вĕсем çине пăх нах, куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

Игнат красноармеецсем умне кукленсе, кашнин алтымарĕсене тыта-тыта пăхрĕ, юнпа, пылчăкпа ва ланса пĕтнĕ питкуçĕсенчен сăнавлăн пăхма т тăнчĕ. Виççĕмĕшĕн аллине тытсан, вăл картах си илчĕ те, унăн куçĕсем чарăлсах кайрĕç.

— Павăл!—пăчăртанса тухрĕ унăн пырĕнчен.—Пав эсĕ-и вара ку?

Халăх кĕпĕрр... турĕ малалла.

Ыттисемпе пĕрлех пăхса тăракан Микулай мучи çав тах чĕркуçленсе анчĕ.

— Ывăлăм! Юнăм!—урмашнă саспа йынăшса ячĕ вăл, сывă аллипе красноармееца хулпуççинчен ытала илсе, сассăр макăрма тытăнчĕ.

Халăх ним чĕнмесĕр тăчĕ, кансĕрлемерĕ Микулай

унăн куççулĕсенче—хуйхă çеç мар, савăнăç та нумай ні-çке. Ывăлĕн пурнăçне хăйĕн юнĕпе çăлнă вĕт вăл!.. Кинтăрла çитеспе Муратсен отрячĕ нимĕçсенчен тса илнĕ пĕтĕм пурлăха (хайхи, вĕсем ялçыннисенчен атса тултарнине) халăха каялла валеçсе пачĕ, пĕтĕм пăшала лавсем çине тиерĕ те, ялтан каялла, вăрмана са кайрĕ. Отряда ку ялтан пĕр çирĕм çын хутшăнчĕ, ни килтенех нимĕçсенчен пытарса хăварнă апат-çисене пыра-пыра пачĕç. Нимĕçсене таварнăшăн халăх тизансене тем пекех тав турĕ.

урат трофейлă çăмăл туппа кўлнĕ тĕреклĕ тимĕрак лаша çине утланса пычĕ. Çул тăршшипех унăн юркилчĕ, анчах партизан пурнăçĕ—вăрттăн пурнăç, н нихçан та шавлама юрамасть, çавăнпа та вăл хăй екен кĕвĕсене шăл витĕр çеç шăхăркаласа пычĕ. ялах, вăл савăнчĕ. Халь ĕнтĕ вăл хăйне чăн-чăн парлан тесе шутлама пултарнă, малашне ăна хăйсен кондирĕ пысăк ĕçсемех шанма пултарнă. Вăл ĕçсене а Муратăн вăй та, хăюллăх та çителĕклĕ пулнă...

Пĕр сĕм вăрманта, хăйсемшĕн килĕшўллĕ вырăнта нса тăрсан, партизансем чăн малтан суранлисене храх вырнаçтарма тăрăшрĕç. Вĕсене валли йывăç ттисенчен хўшĕсем турĕç, выртмашкăн курăк сарса выраnсем хатĕрлерĕç. Красноармеецсемпе пĕрле улай мучие те вырнаçтарчĕç,—вăл тем пек паттăрма тăрăшнă пулсан та, юн нумай кайни вăйсăрлатсах терчĕ ăна. Алли ыратнăçемĕн ыратса, темшĕн шыçса чĕ.

Отрядри хĕрарăмсем—медсестрасем вырăнче пулчĕç нта. Шура халатсем çеç çитмерĕç вĕсене.

— Астăвăр, суранлисене лайăхрах пăхса, часрах сыватарăр мана! Вăхăчĕ мĕнлине хăварах пĕлетĕр, кашни теме тăраты!—ваcкатрĕ Игнат хĕрарăмсене.

— Ахаль те чунранах тăрăшаççĕ-ха,—вĕсен хутне кĕчĕ улай мучи.—Пуринчен ытла—çакă... (Вăл Груша çине

кăтартрĕ).—Тухтăр пулмалла мĕн унăн, а вăл п
çакса çӳрет, салтак пулса тăчĕ...

— Чим-ха, тен тухтăр та пулăпăр акă, нимĕ
хăваласа ярар,—терĕ лешĕ.

— Ун чухне эп сана хамăн кин тăватăп-ха! Кур
куçне хĕссе илчĕ Микулай мучи.—Çамрăкрах пул
хам авланмалла та, çӳçсем кăштах сайраланчĕç çав...

Пурте кăмăллăн кулса илчĕç.

— Ытла инçетрине ĕмĕтленетĕн-çке эс!—терĕ Гр

— А мĕн?—пуçне çеклерĕ старик.—Эп яланах
ĕмĕтсемпе пурăнатăп. Телейлĕ пурăнăç таварнатех
пирĕн ната. Вăхăт нумаях та иртмĕ—пирĕн çĕр ç
пĕр нимĕç йытти те юлмĕ, вĕсен юнлă аттисем тап
уйхирсем каллех чечекленме тытăнĕç, пирĕн заво
каллех тулли кăкăрпа сывлĕç. Пурнăçра мĕн ҫир
пурте ытлашшипех пулĕ. Кăчухнехи кунсене халлап
пе юрăсенче çеç асăнăпăр... Ĕненĕр мана, çаплах пу
ку!—сывă аллипе сулса илчĕ вăл.

— Эс лăпкăн кăна çеç вырт-ха, мучи, питех хуск
юрамасть сана,—чарчĕ ăна Груша. Ĕнерпе паян Мик
мучин сывлăхĕ начарланнине сиснĕ вăл.—Аллу т
шыçать ав, эс пур—çаплах хускататăн ăна.

— Чăнах, лăпкăрах вырт,—ӳкĕтлерĕ ăна Игнат та

— Чĕрĕ çын ăçтан пĕрене пек выртăр ĕнтĕ?—ça
чарăна пĕлмерĕ Микулай мучи.—Чĕреллĕ вĕт эпĕ!

— Асту, апла пулсан яла ăсататпăр!—хуллен юн
Игнат.

Тин чарăнчĕ вара Микулай мучи. Игнат унăн ывă
тантăш çеç пулнă пулин те, вăл кăштах шикленнĕ
тан: командир вĕт, çитменне—питĕ пултаруллă,
çын...

Каçаллапа мучин сывлăхĕ татах начарланчĕ, шăми
калама çук вĕриленсе кайрĕ, вăл суранлă аллине
текех тыта-тыта пахрĕ.

— Шыçать вĕт, халера...

Унтан, вăхăчĕ-вăхăчĕпе тĕлĕрнĕ пек пулса, вăл

пуçларĕ. Улшу калаçма тытăнчĕ. Груша кун çин-
ăсрах Игната пĕлтерчĕ, анчах вĕсем иккĕшĕ те
ума та пĕлмерĕç, старикăн пурнăçĕ пысăк хăруш-
кĕрсе пынине çеç ăнтанчĕç: унăн алли шыçнăçемĕн
ĕ, тата шыçнă май темле хура-кăвак тĕслĕ пулса

ăн хыççăн тепри пухăнма пуçларĕç партизансем ун
Куыpă мар хыпара илтсен, Мурат та чупса кай-
выртакан хӳшше, çынсене сиркелесех кĕрсе тăчĕ
ла. Игната шутламасан, халĕ Микулай мучи унăн
ятнă çынни пулнă-çке, ăна вăл тăван ашшĕне
пекех юратнă. Çавăнпа та старикăн асапĕсем
ăхса тăма çав тери йывăр пулчĕ ăна... Микулай
ыгтăн авкаланса асапланчĕ, шăлĕсене шатăртат-
(утмăла çитсе те унăн пĕр шăл та ӳкмен мĕн),
на ылханса хаяррăн кăшкăра-кăшкăра ячĕ, ывăлне
командăсем пачĕ, йывăррăн йынăша-йынăша ил-
нтан ерипен лăпланма пуçларĕ вăл, кашни самант-
йсăрланса пыни палăрчĕ.
шер çулхи çӳллĕ юман тăррисене ирхи илемлĕ
ачашлама тытăннă чух—Микулай мучи сывлама
чĕ.
Мĕнешкел хĕрӳллĕ чĕре сӳнчĕ...—терĕ унăн пуç
че тăнă Игнат, шăпăртатсах тăкăнас пек куççулĕсе-
ан-аран чарса.—Ун пек чĕре пурин те пулмасть

рат вара тӳссе тăраймарĕ, хӳшĕрен чупса тухса
ывăç кутне, тарăн курăк ăшне выртрĕ те, калама
урланса, кӳтсе çитнĕ чĕрине çăмăллантаричченех
нĕ. Амăшĕ вилнĕренпе те макăрманччĕ вăл...
кулай мучи вилни—пĕтĕм отрядшăн пысăк хуйхă
Ытла та пурте юратнăччĕ-çке ăна, кашниех вăл
ке хăйĕн çывăх тусĕ тесе шутланă. Партизанра
ме пуçланăранпа пушшех пысăк хисепе хунă ăна:
трядра чи ватти пулнăшăн мар, çынсене çав тери
терме, хавхалантарма, ĕненекен тума пĕлнĕшĕн.

Унăн хăйĕн ырăлне кун çинчен пĕлтермерĕç. нимĕçсен тыткăнĕнче пулнă хыççăн тин çеç сама пуçланăччĕ-ха, вырăн çинчен те тăраймастчĕ, ка вĕриленсе выртатчĕ, апат та латлăн çиейместчĕ. Ç та Игнат ăна пăлхатас темерĕ.

— Сывалса çиттĕр, вара чĕрине кĕмелли тупăпăр...

Унпа пурте килĕшрĕç.

Микулай мучие унтан-кунтан тупса пынă хăма тĕреклĕ тупăк туса, пĕр ватă юман айне пытарчĕç вилтăприне вăрманта пухнă чечексен пысăк çыххи илемлетрĕç. Юманăн хуппине пĕр вырăнта варта сатрĕç те, çĕçĕпе касса кĕскен кăна çырса хучĕç:

> **Лăпкăн çывăр,**
> **хаклă Микулай мучи...**
> **Фашизм тĕп пулĕ!**

Тепĕр кунне отряд куçтан куçса тухрĕ. Çынсем сене кӳлнĕ, япаласене тиенĕ хушăра Мурат тата хут Микулай мучин вилтăпри патне чупса кайрĕ. Т самант вăл шанма пуçланă чечексем çине пăхса унтан пиçиххинчен çакăнса тăракан штыка туртса к чĕ те, юман çине çырни çумне васкаса хушса хучĕ:

**«Эпĕ саншăн тавăратăпах! Мурат».**

Ку сăмахсене вăл ыт-ахальрен çырмарĕ, ку вăл п тупăкĕ умĕнче тупа туни пулчĕ. Кайранхи вăхăтр самахсене Мурат пĕрмаях ĕçе кӳртсе пычĕ.

* * *

... Çаксене пĕтĕмпех йĕркипе аса илсе выргнă М хĕвел тухаспа тин çывăрса кайрĕ те,—питĕ хытă ç чĕ вара. Ытти партизансем епле тăнине те ним

Хӗвел нумай ҫӳле хӑпарса каҫхи сывлӑма типӗт-
кӗрсен тин куҫӗсене уҫрӗ вӑл. Татах та ҫывӑратчӗ
те, ӑна тахӑшӗ хулпуҫҫинчен лӑскарӗ:
Тӑр, Мурат... Мӗн йӑла вӑл ҫак таран ҫывӑрасси?
вӑратма Груша пынӑ иккен.
Мӗн пулнӑ?—ыйтрӗ Мурат, ун ҫине нумай ҫывӑр-
херелнӗ куҫӗсемпе пӑхса.
Ним те пулман. Апат ҫимелле те, пире иксӗмӗре
чӗнет, таҫта ярасшӑн пулмалла. Атя часрах...
рат йӑпӑр-япӑр сиксе тӑчӗ те, кутамккипе автомат-
рӗм хыҫне ҫакса Груша хыҫҫӑн утрӗ.
ат пӗр йывӑҫ айӗнче, майӗпе йӑсӑрланакан кӑвайт
че тем ҫинчен тарӑн шухӑша кайса, чӗлӗм туртса
ть мӗн. Унӑн чӗркуҫҫийӗ ҫинче ҫак районӑн картти

Ну, мӗнле кантӑн?—ыйтрӗ вӑл, Муратпа Груша ун
пырса тӑрсан.
Пит аван,—терӗ Мурат.—Ним сисми ҫывӑрнӑ.
Юрать апла пулсан...—Игнат чӗлӗм тӗпне кӑвайт
пӑрахрӗ те, чӗркуҫҫийӗ ҫинчи картӑна алла тытрӗ.—
е паян ик-виҫ яла кайса килме хушасшӑнччӗ те—
а хӑвармалла пулать халь.
Ма апла тата?—ыйтрӗ Груша.—Паян та кайма пул-
пӑр.
Сук, ыран каятӑр. Урӑх ӗҫ сиксе тухрӗ...
Темскер вара?
Калама та пӗлмелле мар-ха.—Игнат тарӑнӑн сывласа
.—Кӗҫӗр эпир пӗр хыпар пӗлтӗмӗр... Нимӗҫсем, пире
св, урсах кайнӑ, тет. Темиҫе кун каялла вӗсем
н яла пынӑ тет те, ялҫыннисене хӗнесе, тем тӗрлӗ
антарса пӗтернӗ, тет. Пӗр карчӑка ҫакса хӑварнӑ,
не ҫунтарса янӑ, тет. Ку хыпар—манӑн анне ҫинчен
, тетӗп... Ҫавна кайса пӗлес пулать паян. Кунтан
мар, пӗр вунӑ-вуник ҫухрӑм ҫеҫ пулать, ирчен
атпӑр...

— Кампа каясшăн вара эс унта?— ыйтрĕ каллех
— Пĕр виççĕн-тăваттăн кайсан çитет.
— Мана та илсе кай!—Игнат куçĕнчен пăхрĕ
— Сана илсе каяс тетĕп çав, эс кирлĕ пулатăн, ăна хирĕç Игнат.—Тата Петька Журкинпа Мишка нина илсе каяс,—çитет вара. Хатĕр пул!
— Игнат чĕрине пысăк хуйхă пусса илчи сисĕнч пĕртте ытти чухнехи пек мар, темле пусăрăнчăкл махсене тăсса каларĕ. Ăшчикĕ хытă вăрканă унăн...
Унăн сăмахĕсене илтсен, Мурат та пăлханса Неушлĕ нимĕçсем чăнах та çакса вĕлернĕ-ши Л инкене? Эх, урнă йытăсем!.. Ваттине те, вĕтт хĕрхенмеççĕ... Епле аван çынччĕ Лизавет инке! М амăшĕ вилсен—никам та мар, вăл илчĕ вĕт Мурат патне усрама, ăна хăйĕн тăван ачине пăхнă пекех усрарĕ.. Чăнах вĕлернĕ пулсан—тата хытăрах т тытăнас пулать нимĕçсене, ăçта май килнĕ—унта, кун, кашни каç, таттисĕр!
Каçченех çавăн пек шухăшсемпе çӳрерĕ Мурат. йывăç тураттисем хыçне пытанма пуçланă чух вара сем тăваттăн—Игнатпа Мурат, тата икĕ çамрăк, хăюллă та нимрен хăраман партизан—Петька Жур Мишка Есюнин, автомачĕсене кăкрисем умне вăрмантан тухса кăнтăр еннелле утрĕç.

---

Ял хĕрринчи тайлăк пӳртре пурăнакан тăлăх Парашка патне çурçĕр телĕнче такам пырса, пахча чӳречерен хуллен кăна шаккарĕ.
— Кам ку?—ыйтрĕ Парашка.
— Уç-ха...—терĕ тулти сас.
— Мĕн кирлĕ ара? Хваттер кирлĕ пулсан—вырăн хам та пилĕк ачапа пурăнатăп.
— Пĕлетпĕр ăна. Уç эсĕ, ан хăра...
Тулти сасă Парашкăна паллана пек туйăнчĕ.
— Игнат сассиех ку, ăçтан килсе тухма пĕлчĕ

?—терĕ те вăл хăй çумне пырса тăрса чĕтреме нă асла ачине, çеннĕке тухса уçрĕ.

л йăнăшман иккен, ку чăнах та Игнат пулнă. Унпа е тата виççĕн кĕчĕç—вĕсем те хăйсен ялĕсемех Мурат, Журкин, Есюнин,—анчах вĕсем пурте ялтан а кайса çухалнăранпа вăхăт нумай иртнĕ те—çавăнпа ка питĕ тĕлĕнчĕ...

Епле-ха эс, хамăр çынсене те кӳртесшĕн мар, ?—тесе малалла иртсе ларчĕ Игнат.—Сывă пурăна-а?

Тăруках паллаймарăм çав,—терĕ хыпкаланса ӳкнĕ ка.—Эсир килесси ман ăсра та пулман та... Тата— ă вĕт халь, темле çын та çӳрет те. Айăпа ан ах!

Çук, çук... Эпир сан патна ĕçпе кĕтĕмĕр.

Мĕн уса кӳрĕп-ши вара эп сире?

Игнат чĕлĕм чĕркесе тивертрĕ те юлташĕсем çине а илчĕ.

— Ялта нимĕççем пур-и?

— Юлмарĕç пулмалла, ĕнер каçхине пурте тухса ç. тенине илтрĕм.

— Камран илтрĕн?

— Паçăр çăл кутĕнче хĕрарăмсем каларĕç. Савели ч патĕнче пĕр пиллĕкĕн тăратчĕç, вара ĕнер каç, лавĕсене ăсатса пĕтерсен, вĕсем те кайрĕç, тет.

арашка «Савели Нилыч» тесенех, Игнат тутине а илчĕ. Ку çын вăл—ялан совет влаçне хирĕç пын çын пулнă, темиçе çул каялла ăна раскулачить ун хыççăн пĕр-икĕ çул хушши тĕрмере те ларса ă. Тĕрмерен таврăнсан вара, чире персе, вăл урама ухма пăрахнă, ялти пур çынсем çине те кашкăрла а пурăннă. Вăл ĕнтĕ совет влаçне, колхоз йĕркине, активистсене пĕтĕм ăшчиккипех курайманнине пĕл-ачах халь уççăнах сиен кӳменнине кура—тивмен ăна. та лешĕ, ватă йытăлла, хăйне валли майлă самант се тухасса çеç пăхса пурăннă иккен...

— Мӗншӗн-ха нимӗҫсем ун патӗнче пуранна?—
шухăшне ҫирӗплетме юриех ыйтрӗ Игнат.—Нимӗ
вăйпа пырса кӗнӗ-ши, е хăй чӗннӗ вӗсене?

— И-и, чунăм, ан та кала ӗнтӗ!—терӗ Парашка.
рӗншӗн чи хăрушă тăшман пулса тăчӗ халь вăл. П
пех сутăнчӗ. Старăстă вӗт! Пӗртте вырăс ҫынни пек
веҫех леш симӗс тирлӗ шуйттансем майлă ҫапта
Сăмах та хушмалли ҫук, тӳрех кăшкăрса пăрахать:
тăрринче сулăнкаласа тăрас килет-и?—тет. Миҫе
пуҫне ҫирӗ ӗнтӗ!—Парашка хурлăхлăн сывласа илчӗ

— Кама-кама тытса пачӗ-ха вăл?—ун ҫумнерех
ыйтрӗ Игнат.

— Аннӳ ҫинчен илтрӗн пуль вӗт?

— Кăшт ҫеҫ илтрӗм-ха...

— Хăвăр кил патне кайса пăхмарăн-и-ха эс?

— Ҫук, тӳрех сан патна кӗтӗмӗр.

— И-и, чунăм, апла пулсан...—Парашкăн сасартăк
си тытăнса ларчӗ, вăл ӳсӗрсе илчӗ.—Ялҫыннисене
Савели Нилыч шăп сан аннӳран пуҫларӗ... Сана
те йывăр пулӗ те-ха ун ҫинчен, йӗркипех каласа па
ха эппин.

— Кала ҫав, йӗркипех кала!

— Сан ҫинчен эс партизанра ҫӳрет тесе хыпар ту
Ахаль партизан та мар, партизансен пуҫлăхӗ, теҫҫӗ.
кам кăларнă вăл сăмаха, те—тӗрӗс, те—суя, пӗлмес
Ну, ку сăмаха Савели те илтнӗ ӗнтӗ... Темиҫе кун к
ла нимӗҫсен отрячӗ килсен вара, тӳрех сан аннӳне
роста патне сӗтӗрсе кайнă,—Савели кăгартнă ун ҫ
паллах, урăх никам та ҫăвар уҫас ҫук...

— Вара?

— Допрос тума тапратнă, сан ҫинчен пӗлесшӗн пу
Аннӳ каламан пулмалла, тен пӗлмен те-и вăл. Тыта
вара ăна хӗнеме.. Савели арăмӗ Гирка старикăн х
каланă тет: ну шуйттан карчăкӗ, тимӗр пекех ҫи
мӗн тӗрлӗ асаплантармарӗҫ пуль—пурӗпӗр тӳсрӗ, ы
ҫинчен ним те каламарӗ, пӗтӗмпех пӗлмӗш пулчӗ, т

арě тет. Нимěçсем ăна допросра мěн-мěн тунине пěр Савели арăмě çеç пěлет, эпир пěлместпěр, анчах ěр кунне мěн пулнине вара—аса илме те хăрушă! ки апат вăхăтěнче пěтěм ял халăхне урама хăваласа :рěç. Ниçталла пăрăнмалли те çук—пур çěрте те, йě-таврах пăшаллă салтаксем тăраççě. Кěçех, пире пурне урам варринчи çулăн икě енěпе тăратса тухрěç. Кашни ěк çын урлă—нимěç салтакě. Мěн пулать-ши ěнтě, ие валли кун пек тăратса тухрěç-ши, тетпěр. Унччен пулмарě—сылтăм енчен: „килеççě, килеççě!" тени ěнчě. Пурте унталла пăхрăмăр та, сан аннÿне илсе ние куртăмăр... Малта—пăшаллă салтак пырать, ун çăн—аннÿ... Çара пуçăн, çÿçěсем арпашса пěтнě, ě-куçě ним палăрми шыçса, кăвакарса, хуралса ларнă, ıиçе çěрте ÿчě татăла-татăла кайнă, хăрах ури çине ін пусать... Кăкри умне вара пěр аршăн çурă сарлакěш а çакнă, ун çине пысăк буквăсемпе „партизан" тесе рнă. Чěресем пăчăртансах ларчěç çав пирěн, ăна кур-!... Тÿсмелле мар вěт!..

Парашкăн питçăмартисем тăрăх куççулěсем сике-сике ıěç.

— Кала, инке, кала, ман кăна пěтěмпех пěлес пу-ь,—терě Игнат, йывăррăн сывласа.

— Халь те калатăп çав,—куçěсене çаннипе шăлса ě Парашка.—Ăçта тÿсен каламасăр? Санăн таварас ıать вěт куншăн, темле пулсан та таварасах пулать...

— Кайран мěн пулчě?

— Нимěç салтакěсене халăх хушшине сан аннÿне хě-ие тăратса тухнă мěн... Кашниех алла патак тытнă кен, кашниех ăна, хăй тěлне çитсен, мěнпур вăйпа пта-турта çапрě. Анчах аннÿ пěр сас та кăлармарě—ıěнтěмěр эпир!—салтаксем çапмассерен карт! та карт! ке-сике илчě кăна... Унтан хăвăр тěле илсе çитерчěç. ир пěлмен те: хăвăрăн пÿрте хирěç çакса вěлермелли кан тухса лартнă пулнă вěсем. Аннÿне тÿрех ун айне рза тăратса, пуçěнчен мăйкăç тăхăнтартрěç.

— Ну, ватă йытами, юлашки хут ыйтатпăр сан ывăлу ăçта санăн?—тесе кăшкăрчĕ ун патне пырса рăсла пĕлекен нимĕçĕ.—Асту, юлашки хут, урăх ы тăмастпăр вара. Калаǃ

— Аннӳ пуçĕпе çеç сулчĕ:

— Пĕлместĕп...

Нимĕç пуçĕнчи калпакне хывса сулчĕ... Çав саман вара темскер сасартăк кĕмсĕртетрĕ, шартлатрĕ, çĕр ренсе илчĕ, пирĕн куç умĕнче çулăм, тĕтĕм йăтăнса рĕ, темле пĕренесем, юпасем, çунакан улăм тĕрки сирпĕнчĕç. Вĕсем сирĕн пӳрте сывлăшалла сирпĕтр Пӳрт вырăнне çунăк турпас купи çеç йăтăнса вырт

Нимĕç калпакĕпе тата тепре сулчĕ. Аннӳке майкăç вĕренĕн тепĕр вĕçĕнчен тытса тăнă салтаксем ăна рех туртрĕç те—аннӳн пуçĕ çӳлти кашта пагне çит аялтан çыхса лартрĕç. Аннӳ темиçе хут туртăнка илчĕ, унтан вара алли-урисем лăстах тăсăлчĕç. В кайрĕ...

Эпир ни чĕрĕ, ни вилĕ тăтăмăр.

Кĕçех хайхи вырăсла пĕлекен нимĕç сасси илтĕ

— Куртăр-и, выльăхсем? Астăвăр халĕ: кам парти семпе çыхăнать, кам вĕсене пулăшать—вĕсене эпир не те çакăн пек тăватпăр. Саланăрǃ

«Саланăрǃ» тесенех, пĕтĕм халăх пур еннелле чу Пурин те çак хăрушлăхран часрах пăрăнса каяс ки ĕнтĕ, тата кашниех нимĕçсем хăйне тытса, айăпса айăплă çын тăвасран хăрарĕ пулас. Эп хам та киле е чупса çитнине астумастăп...

Парашка каласа пĕтерчĕ те, каллех куççулĕсене ш илчĕ. Партизансем пĕр хушă ним чĕнмесĕр ларчĕç. арăмăн калавĕ вĕсене калама та çук пăлхатса, хум са ячĕ. Вĕсенчен кашниех—çав шутрах Мурат та—И тăн амăшне сутса çав тери тискеррĕн вĕлерттернĕ велие епле майпа лайăхрах тавăрасси çинчен çеç ш ларĕ халь.

Никамран малтан Игнат тăчĕ.

— Айтăр,—терĕ вăл.—Каяр хамăр çулпа.
— Таçталла çул тытатăр ĕнтĕ?—ыйтрĕ Парашка.
— Хамăр та пĕлместпĕр-ха,—ответ пачĕ Игнат.—Сыв улса юл, спасибо сана хыпарсене пĕлтернĕшĕн...
— Хыпарĕ ырăскер мар та, мĕн тăвассу пур. Эп айăп мар ĕнтĕ...
— Айăплисене тупăпăр эпир.
— Партизансем пĕрин хыççăн тепри Парашкăн аллине ймартарĕç те, тулалла тухрĕç. Сарай хыçĕнче Игнат йĕн юлташĕсене тем çинчен пăшăлтатса калама тынчĕ. Лешсем, унпа килĕшсе, пуçĕсемпе сула-сула çеç ичĕç. Унтан вĕсем анкартисем хыçĕпе пĕр икçĕр-виççĕр лаш шăппăн кăна утса пычĕç те, пĕр килкартине кĕрсе ячĕç.
— Ну, Мурат, пуçла...—терĕ Игнат.
Вара Мурат тӳрех крыльца çине хăпарса çенĕк алăкĕнчен шаккарĕ.
— Савели пичче, уç-ха...
Шалтан тӳрех сас памарĕç, тата тепĕр хут шаккамалла пулчĕ. Тепрер çур минутран тин килхуçи сасси илтĕнчĕ.
— Мĕн кирлĕ?
— Уç-ха, сăмах пур...
— Кам вара эс?
— Эп—Парашка ачи, Ванька... Пирĕн патри çырмара нимĕççен машинĕ пыльчăк ăшне кĕрсе ларнă та, сана ĕнме ячĕç. Халех пĕр вунă çын тухмалла, тет, машинăна туртса кăларма...
— Вот, чортсем, çӳреççĕ вăхăтне пĕлмесĕр,—мăкăртатса ячĕ те Савели, алăка шанкăртаттарса уçрĕ.—Кĕр, çичас кайăпăр. Хăш тĕлтерех ара вĕсем?
— Инçе мар, кунтах, сана питĕ кĕтеççĕ... Старостăна илех тупса кил, терĕç. Васка. Çилленĕç тата!
Савели пӳртелле кĕрсе кайрĕ, Мурат крыльца çинчех ...а юлчĕ. Вăл кĕсйинчи революверне пăчăртарĕ... Тепĕр ...ик минутран вара, Савели нимĕççене пулăшма кай-

ма хатĕрленсе тухсан, крыльца çинчен ун хыççăн ут анчĕ те, шăппăн кăна, шăл витĕр команда пачĕ ăна:

— Тăр! Ниçта та каймастăн. Руки вверх!

Ун çине хулпуççи урлă çавăрăнса пăхнă Савели тăр ках юпа пек хытса тăчĕ. Арçын ача ăна револьвер тĕллесе тăрать иккен, халь тесен халь персе яма пу тарать!

— Мĕн эс? Чипер...—теме ĕлкĕрчĕ çеç Савели. Крыл цан тепĕр енчен виççĕн чупса тухрĕç. Пĕри унăн куç хупласа лартрĕ, тепри аллисене каялла çыхма тапрат

— Пĕр сас кăларсанах—пуля туянатăн!—асăрхаттарч ăна.—Эпир—партизансем. Ут!

Савелин хăйне мĕн хушнине итлемелли çеç юлчĕ.

Хĕвел тухнă вăхăталла ăна отряда илсе пычĕç те, п партизансене пухсан тин куçĕсене салтса ячĕç. Сав вара чăн та чăнах капкăна лекнĕ кашкăр пек чĕтре унталла-кунталла куç харши айĕпе сиввĕн пăхкал тăчĕ...

— Çак тискер кайăк,—терĕ Игнат партизансем ум тухса тăрса,—вырăс çыннисене нимĕç фашисчĕсене су са пурăннă. Вăл манăн аппене çактарнă, ман килçур сывлăша сиктернĕ... Ун кĕсйинче эпир тата икĕ спис тупрăмăр: пĕринче—партизансен ячĕсем, тепринче—Ге мание чуралăха яма юрăхлă çамрăксен ячĕсем... Акă в сем!—Игнат икĕ хут листи кăларса кăтартрĕ.—Пурĕ çынна сутма хатĕрленсе тăнă пулнă вăл.

— Эх, йытă...

— Хура юн, çĕлен!

— Ирсĕр чун...—пăшăлтатса илчĕç партизансем.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ ăна?—ыйтрĕ Игнат.

— Паллах, пемелле!

— Калаçса тăма та кирлĕ мар...

— Эп те çапла шутлатăп,—терĕ Игнат.—Ак çакна ç тивĕçлĕ ку урнă кашкăр!—Вал кăсйинчен пĕр патрон к ларчĕ те, карабинне авăрларĕ. Ирĕклĕ совет халă ячĕпе...

Игнат предателе тĕллеме çеç тытăннăччĕ—сасартăк leшĕ чĕркуçленсе ларчĕ те, пуççапма тапратрĕ:

— Ырă халăх! Тархасшăн каçарăр... Иăнăшрăм эпĕ... Каçарăр, малашне ун пек тумăп, сирĕн майлă пулăп... Кама хĕрхенмесен те—ачасене хĕрхенĕр...

Партизансем ун çине калама çук йĕрĕнсе пăхса тăчĕç. Савели мĕн тери ытларах ыйтнă—çав тери тарăху ўссе пычĕ вĕсен чĕрисенче. Тахăшĕ тўсеймерĕ, кăшкăрчĕ:

— Пер!

Çав самантрах пăшал сасси янраса кайрĕ.

---

Çакăн хыççăн тепĕр ик кунтан Игнат хăй патне Муратпа Грушăна чĕнтерчĕ те, вĕсене разведкăна каймалли çинчен пĕлтерчĕ.

— Пĕрле каймалла-и? — ыйтрĕ Мурат.

— Çук, уйрăм. Эс çак шыв хĕрринчи Н., Ж., В. ялĕсене кайтăн, Груша—ку еннелле, ак çак М., К., Ш. ялĕсене кайть. Игнат сылтăм аллин шĕвĕр пўрнине картă тăрăх шутарса пычĕ.—Ыран каçаллапа каялла таварнас пулать.

— Юрать, тăрăшăпăр.

Малалла Игнат çав ялсенчен мĕн-мĕн пĕлсе килмелли çинчен калама тытăнчĕ, анчах Мурат вăл задачăсене каль те пĕлнĕ. Вăл ĕнтĕ Микулай мучи вилнĕ хыççăн пĕрре кăна мар разведкăна кайса çўренĕ. Ыйткалакан ача пек, пĕр аллине хутаç, теприне туя тытнă та, кашни яла ситмессеренех унта нимĕçсем пурри-çуккине, пур пулсан—вĕсен йышне, мĕнле хĕçпăшал пуррине, ăçтан килнине ăçта ăçталла каяссине пĕлме тăрăшнă. Ыйткалакан пулнă пай, вăл кашни пўртех кĕме пултарнă, ăнсăртран нимĕçсем тăракан çурта кĕмелле пулсан—тăрăшсах сăх-сăхнă, тура ячĕпе „паян пурăнмалăх“ çăкăр ыйтса, хăвăртрах тухса шунă. Ăçта та пулсан хирте, çул çинче нимĕçсен разъездне е дозорне тĕл пулма тўр килсен—темĕн тĕрлĕ те суйнă вара: е вăл ыйткаласа çўрет, е килтен тухса тарнă ĕнене шырать, е кўршĕ ялне кукамăшĕ патне каять имĕш. Вара пĕр-пĕр нимĕç салтакĕ хăйĕн тăхлан

тёслё куçёсемпе пăхнă-пăхнă та—ирттерсе янă. Чăна та, пĕр-икĕ хутчен çурăм урлă нухаляпа хытă лектер ăна, анчах ку—Мурата хăратман, хаярлатнă çеç.

— Тăхтăр акă, лектерĕпĕр эпир сире, кун пек ма лектерĕпĕр,—тенĕ вăл хăйĕн ăшĕнче.—Нухаляпа ма пульăпа тавăрăпăр!..

Кун хыççăн Мурат тата çивĕчрех çӳрерĕ, тата хăю лăрах пулчĕ, Игнат пĕлме хушнисене епле пулсан пĕлсе тупса пычĕ вăл. Халь те, Игнат резведкăна каяс çинчен каласан, ку приказа вăл пысăк хавасланхпа йы шанчĕ. Хăвăрт кăна апат çирĕ, пиншакĕпе аттине, авто матне, пиçиххи çинчи штыкне отрядăн начхозне пач ун выранне хĕвне пистолет чикрĕ те, кăсйине икĕ симĕ чăмăркка граната хучĕ. Разведкăна вăл яланах çавăн пе хĕçпăшалланса çӳренĕ...

Çур сехет те иртмерĕ пуль—вăл Игнат патне каял пырса та тăчĕ:

— Эпĕ хатĕр, Игнат пичче!

Кĕçех Груша та çитсе тухрĕ. Вăл пит те çĕтĕк-çатă тумланнăччĕ, чирлĕ çын пек пулса аллине туя тытнăччĕ хăй çулĕнчен нумай ватăрах пек курăнатчĕ.

Игнат вĕсем çине унăн-кунăн пăхкаларĕ те, аллисен сăтăркаласа çеç илчĕ.

— Питĕ аван... Кун пек çипуçпа сире чăнах та пĕ фриц та партизан теме пултарас çук!..

— Çав кирлĕ те пире.

— Тĕрĕс, тĕрĕс. Пирĕн вăрттăн ĕçлеме пĕлес пулать.

Шăн кăнтăрла Игнат вĕсене чăтлăхри çырма тăрăх пĕ ансăр çул çине илсе тухрĕ. Ку çул хĕвелтухăçĕнчен хĕ веланăçнелле тăсăлса выртнă.

— Пирĕн дозорсем çак çырман икĕ енĕпе пулаççĕ, терĕ Игнат.—Ун пек—кун пек пулас пулсан, çакăнт тарса ӳкме тăрăшăр. Кунта вара вĕсене лайăх кучченеç лекĕ. Анчах тăшман йышлă пулсан—аяккалла пăрса яра пулать, хамăра палăртма кирлĕ мар.

— Пĕлетпĕр-çке, пирвайхи хут-и мĕн?—аллипе сулчĕ Мурат.

— Ну, вĕçтерĕр... Телей пултăр.

— Сывпул.

Груша пĕр еннелле утрĕ, Мурат—тепĕр еннелле.

Сăрт çине хăпарса пĕр километр пек кайсан, Мурат руках тӳп-тӳрĕ проççек çине тухрĕ те, вĕçĕмех ун тăрах пычĕ. Утма питĕ аван пулчĕ, хĕвел хĕртсе пăхнă пулин те—йывăççен хӳттинче шăрăх пулмарĕ, хăлхара ярмай вăрманти кайăксем юрлани янраса тăчĕ.

Тепрер сехетрен вăл тип-тикĕс те сарлака хире тухрĕ. Унта вăйлă çапăçу пулнă пулмалла... Çав тери хăватлă снаряд çуртыррине калама çук таптаса, пăтраштарса пĕтернĕ. Унта та кунта снарядсемпе бомбăсем ӳксе çурăлнипе пулнă шăтăксем курăнаççĕ, ванчăк тупăсем, сăмсипе çĕр ăшнелле тăрăннă хура хĕреслĕ танксем, çунса пĕтнĕ автомашинăсем выртаççĕ...

Вăрмантан тухсан ăçталла каясси çинчен Игнат калани астуса, Мурат вăрман хĕррипе сылтăмалла утрĕ. Айĕн куçĕсем тăтăшах йĕри-таврара мĕн пуррине сăнаса ынĕç. Ниçта та никам та курăнмарĕ-ха, аван пулчĕ.

Пĕр пĕчĕк çырма урлă каçнă чух ун сăмсине тӳсме çук йывăр шăршă пырса çапрĕ.

— Таçта виле пур пулмалла...—шухăшларĕ Мурат.— Кам-ши?

Çавăнтах лăпсăркка шĕшкĕ тĕми айĕнчен тимĕрленĕ аталлă ура курăнчĕ. Шиклене-шикленех Мурат тĕмĕ патнелле пычĕ. Нимĕç выртать иккен... Хăрах ури çук, сăнĕ кăвак тăпра тĕслĕ пулса кайнă, шăлĕсене йĕрнĕ, куçĕсем вырăнне—епресе тăракан хĕрлĕ шăтăксем кăна,—çăхансем кăларса кайнă пулмалла. Çав тери ирсĕр!.. Темиçе утăм кайсан—тата тепĕр виле тĕл пулчĕ, унтан тата, тата... Сăхалтан та пĕр вăтăр-хĕрĕх çын пулĕ. Пурте ĕнтĕ çĕрме тытăннă.

— Хытă шакканă кунта вĕсене...—терĕ Мурат хăйне

хăй.—Пулемётпа çулнă пулмалла. Ай снаряд лекнĕ. Çав кирлĕ!

Шаршăран хăтăлас тесе, вăл уттине хăвăртлатрĕ. В... рăнĕ-вырăнĕпе чупсах кайрĕ.

Часах малта икĕ çыран хушшипе кукăркаланса вырта... юхавшыв та курăнакан пулчĕ. Игнат калана тăрăх, М... рат разведка тумалли ялсем çав шыв хĕрринче пул... кирлĕ. Инçех мар пулас ĕнтĕ...

Сасартăк, Мурат тăпах чарăнса тăчĕ. Таçта çывăхра... йывăççем хушшинче, çын йынăшнине илтрĕ вăл. Ерипе... вăйсăрланса çитнĕ сасăпа йынăшрĕ такам:

— Ах... ах... ай...

Çурăм тирĕ сăр-сăр... туса кайрĕ Муратăн.

Мĕнле çын-ши? Хамăрăн ши, тăшман-ши? Пырса пăха... ши, иртсе каяс-ши?..

Татах итлерĕ... Йывăççем хушшинчи çын йынăшни та... тах илтĕнчĕ.

— Мĕн пулать, мĕн килет,—татăклăн шухăшларĕ Мурат.—Тен, хамăр çын пулĕ, пулăшас пулать-и тен?

Вăл кĕсйинчи гранатине кăларса хăвăрт кăна боево... взвод çине лартрĕ те, сасă илтĕннĕ çĕрелле хăюлл... утрĕ. Анчах та патне çитсен—аллинчи граната чута... тухса ӳкетчĕ...

Унăн умĕнче, таптаса лутăркаса пĕтернĕ курăк çинче... тахçан шурă тĕслĕ пулнă сараппанлă çамрăк хĕрарă... выртнă. Вăрăм хура çӳçĕсем чăлмаклансе пĕтнĕ унăн... пылчăкпа вараланнă çурăк-çарăк сараппанĕ çара юн пул... нă, хăй аран-аран, юлашки сывлăшпа сывлана...

Темиçе самант хушши Мурат нимĕн тума пĕлмесĕр тăчĕ. Паллах ĕнтĕ, çак вилес пек выртакан хĕрарăм—пирĕн çын пулнă, ăна—тем тесен те—нимĕççем асаплан... тарса пăрахса хăварнă-тăр... Куна Мурат тĕрĕсех тавçăр... са илчĕ. Анчах—мĕнле пулăшас ăна? Мĕнле çăлас? Час... рах пĕр-пĕр вăйпитти çынна чĕнсен пит аван пулмалл... та... Никама та тупас çук вĕт кунта! Çав тери пăчăр... танса килчĕ Муратăн чĕри... Тата пăртакках шухăшласа...

те вăл, пирвайхи яла çитсенех пĕр-пĕр хĕрарăма çинчен каласа парса, епле пулсан та çакăнта чĕнсе е шут турĕ. Иккĕн килсен—пулăшма пулатех ăна, çĕклесе кайма та пулать. Курса тăнă çĕртех, хамăр а епле пулăшу памасăр иртетĕн вара?

Мурат, часрах яла çитес тесе, сиккипех чупрĕ. Çав тра хĕрарăм каллех вăрăммăн йынăшса ячĕ:

— Ах, а-ах... шыв... шы-ыв!

Мурат ун патне каялла чупса пычĕ.

— Шыв!..—Чăнах та, суранланнă çынна шыв кирлĕ. Микулай мучи те вилес умĕн пĕрмай шыв ыйтрĕ... Нумай пулмасть урлă каçса килнĕ пĕчĕк çырма тĕпĕн-çăлкуç тапса тăратьчĕ,—Мурат çакна астуса илчĕ те, рех çавăнталла чупрĕ. Ун телейне, çăлкуç патĕнче шĕ пăрахса хăварнă, чылаях пысăк пушă консервă нки выртнă. Мурат ăна пĕр-икĕ хутчен чўхесе тăкрĕ хĕрри таранах куççулĕ пек таса шыв тултарса, каял-ыткăнчĕ. Хĕрарăм халь те малтанхи пекех ним хус-масăр выртнă. Мурат хăрах аллипе унăн пуçне ери-кăна çĕклесе, тепĕр аллипе консервă банкине тути е илсе пычĕ.

— Ĕç, ĕç... шыв илсе килтĕм...

Тутине сив шыв перĕнсен, хĕрарăм çавăнтах çăварне сах ячĕ. Мурат ăна ĕçтерме тытăнчĕ. Çур минутран кăра пĕр тумлам шыв та юлмарĕ.

— Тата кирлĕ-и? Илсе килес-и?—ыйтрĕ Мурат.

Хĕрарăм ответ памарĕ, анчах вăл çăмăлраххăн сывлама лани сисĕнчĕ. Тата ĕçтерсен—татах çăмăлланĕ, тесе, Мурат тепĕр хут шыв патне чупса кайса килчĕ. Халь а хĕрарăм çурри таран çеç ĕçейрĕ. Тайăнтарнă бан-и юлашки шыв унăн пичĕпе майĕ тăрăх юхса анчĕ...

Мурат унтан уйăрăлса кайма шутламарĕ-ха, малалла пулассине кĕтсе сăнаса тăчĕ. Ун шучĕпе, шыв ĕçнĕ çăн хĕрарăм кăшт та пулин самайланмалла пулнă. халĕ ку çын кам иккенне, мĕн майпа çакнашкал са выртнине пĕлесшĕн çунчĕ... Чăнах та, нумай кĕт-

мелле пулмарĕ унăн. Пĕр вунă минут пек иртсен—
арăм хуллен кăна куçне уçрĕ те, хăй умĕнче пĕшк
тăракан Мурат çине пăхрĕ. Темле тĕлĕнсе, ним ч
сĕр, халиччен курман япала çине пăхнă пек пăхрĕ.

— Кам эс?—чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ пăлханса к
Мурат.

Хĕрарăм чĕнмерĕ, анчах унăн куçĕсем тата тим
пăхнăн туйăнчĕ.

— Кам эс?—тепĕр хут ыйтрĕ Мурат.—Мĕн пулнă
Питĕ асапланатăн та, пулăшас терĕм...

— Эс ху кам?—аран сас кăларса ыйтрĕ куна х
хĕрарăм.

— Эпĕ-и? Эп—Мурат, тăлăх ача... Аннене нимĕçсе
лерчĕç те, пĕчченех çӳретĕп халь. Эс манран ан х
Шыв ĕçес килет пулсан, татах илсе килетĕп.

— Кирлĕ мар...

— Тен—çиес килет пуль, манăн пĕр татăк çăкăр

— Спасибо, эп халь çиме пултарас çук...

— Ура çине тăратсан, утма пултаратăн-и эппин?
сана киле кайма пулăшăп?

Хĕрарăм каллех халран кайрĕ пулмалла,—унăн куç
хăйсемех хупăнчĕç. Вăл темиçе хутчен йывăррăн сы
сывла илчĕ, унтан çывăрса кайнă пек пулчĕ. Чыла
тин куçĕсене тепĕр хут уçса, Мурат çине калама та
тархаславлăн пăхма тытăнчĕ.

— Манăн пĕртте вăй çук, утаймастăп эпĕ... Пуç ç
нать,—терĕ вăл.

— Вăл апла пуль те-ха, кунта выртсан та май кил
вĕт, мĕн те пулин тăвас пулать...

Хĕрарăм пĕр хушă шухăша кайса выртрĕ.

— Ака мĕн, шăллăм,—терĕ вăл унтан.—Мана пул
сах тетĕн пулсан, çакăнти пĕр яла кайса кил тархасш
Инçе мар, шыв хĕрринче, Журавлиха ятлă ял... Çав я
анат вĕçĕнче, шкул çурчĕпе юнашар, Акулина Петр
тенĕ карчăк пурăнать. Çавна шыраса туп та, ман па
килме хуш... Урăх нимĕн те кирлĕ мар вара.

Халлех чупатăп!—ура çине сиксе тăчĕ Мурат.
Ятне астурăн-и?
Акулина Петровна, терĕн вĕт?
Кай эппин...
урат каллех вăрман хĕррипе тăсăлакан канав çине
ĕ те, хăй паçăрах катаран курнă ял патнелле вĕç-
ĕ кăна. Асăрханас-тăвасси çинчен те манса кайрĕ ку
тлăха. Часах вăл юханшыв патне çитсе тухрĕ, чăнкă
ан тăрăх тӳрĕрен-тӳрĕ чупса анчĕ, шыв урлă йĕмне
емесĕрех шăмпăртаттарса каçрĕ те, яла кĕчĕ.
Ку ял çурри ытла çунса кайнă иккен: Илемлĕ улăхра
келлĕн вырнаçса ларнă типтерлĕ çуртсем халь кăмрăк
ĕл пулса тăнă. Çунса пĕтейменнисем ишĕле-ишĕле
. Урам хĕррипе тăвалла утнă май, Мурат пĕр харă-
икĕ ĕç туса пычĕ: хăйсен отрячĕ валли мĕн кирлине
не тăрăшрĕ, тата Акулина Петровнăн килне шырарĕ.
ĕсем пĕр енчен тепĕр еннелле сиккелесе çеç пычĕç
.
кă, вăл хăрах кĕтессине снаряд лексе хăйпăтса кайнă
ай чӳречеллĕ çурт тĕлне çитрĕ.
Çакă пулĕ-ха вĕсен шкулĕ...—шухăшларĕ те вăл,
самантрах çуртăн крыльци умĕнче хăяккăн выртакан
ĕс тимĕр листине курчĕ. Ун çине «Журавлихăри вă-
шкул» тесе çырнине вулама май килчĕ.
унта çитиччен тĕрĕсех килнине чухласа илсе, Мурат
ах шкулпа юнашар килкартине кĕрсе кайрĕ. Кунта
йĕри-тавралла пăхкаларĕ—анчах никам та курăнмарĕ.
Хуçисем пӳртре пуль-ха,—тесе пӳрт умне хапарчĕ.
кне уçас тесе тĕкрĕ—алăкĕ уçăлмарĕ, ăна шал енчен
ленĕ иккен. Шаккарĕ—сас паракан пулмарĕ. Татах
карĕ. Каллех ăна хирĕç никам та тухмарĕ.
Мĕн мурĕ? Килте çук-ши? Манăн епле пулсан та
ăс пулать вĕт вĕсене, тупмасан леш хĕрарăм пĕтме
гарать, эпĕ пĕр-пĕччен нимĕн те тăваймастăп...—пăл-
пуçларĕ те Мурат, алăка çине тăрсах, хыттăн хăн-
гаттарма тытăнчĕ.

Пĕр вицĕ минут иртрĕ çапла. Унтан тин шалта т хуллен кăштăртатни, пӳрт алăкне уçса çенĕкелле илтĕнчĕ.

— Кам унта?—ыйтрĕ шалти лăпкă сас.

— Уçăр-ха, ĕç пур,—терĕ Мурат.

— Кам вара эс?

— Пĕр ача... Акулина Петровна килте-и?

— Мĕн тума кирлĕ вăл?

— Уçăр, вара калатăп...

Алăка ерипен уçрĕç. Мурат умне хура тум тă çав тери кăмăлла карчăк тухса тăчĕ. Ун çине т кăна пăхрĕ вăл.

— Кам кирлĕ сана?

— Акулина Петровна...

— Эп пулатăп. Мĕн калас тетĕн?

Мурат сăнĕ çутăлсах кайрĕ. Вăл васкавлăн, пĕр хăшран тепĕр шухăш çине куçса, епле те пулин ч йăлантарма тăрăшса калама тапратрĕ.

— Мана сирĕн пата пĕр çын ячĕ... Вăл чĕп-чĕ выртать. Эпĕ канав хĕррипе утаттăм та, йывăççем шинче çын йынăшнине илтсе ун патне пытăм, а калаçма та пултараймасть. Шыв ĕçтерсен тин сирĕ килме хушрĕ. Чĕнсе кил, терĕ...

Мурат каланăçемĕн карчăкăн сăнĕ улшăнса пычĕ алли-урисем те, пĕркеленчĕк тутисем те чĕтреме тыт

— Кам вара вăл çын? Арçын-и, хĕрарăм-и?

— Хĕрарăм, хĕрарăм! Çамрăк-ха хăй. Эс ăна паллат

— Палласси... Ман кин пуль ĕнтĕ вăл!—Карчăкăн тăрăх шултра куççульсем шăпăртатса анчĕç.—Ăн мĕçсем тытса кайнăччĕ...

— Макăрса ан тăр, айта эппин ун патне,—терĕ рат.—Халь çинех каймасан, кайран тата япăхрах п пултарать.

— Каяс пулать çав...—лăпланма тăрăшрĕ карчăк.

Вăл пӳрте кĕрсе кăвак çӳçĕсем çине тутăр витсе т те, Мурат хыççăн утрĕ.

алтанах вĕсем нимех те калаçмарĕç, унтан, шыв кăсса вăрман патнелле çывхарма пуçласан, Мурат х кускатса, майĕпе унăн-кунăн ыйтса пĕлме тытăн-Iĕрмай ахлата-ахлата хуйхăрса пынă карчăк пăргак-лăпланнă пек пулчĕ, Мурат камне пĕлсен хăйсем шкки кунсенче мĕн-мĕн тÿссе иртернисем çинчен йĕр-ıх каласа пачĕ.

нĕ кун хушшинче нимĕçсем вĕсен ялне виçĕ хутчен са кайнă иккен. Яланхи пекех—çаратнă, çĕмĕрнĕ, лăплана. Ку карчăкăн ывăлĕ—ялти учитель пулнă-—нимĕçсем киличчен ялтан тухса кайнине пĕлсен, фашистсем вĕсем патне ушкăнĕпех пырса кĕнĕ те, йăкне те, унăн кинне те асаплантарма тытăннă: малтан лĕ çинчен тĕпчене, унтан аллисене каялла пăрма атнă, чĕрнисем айне йĕп чиксе янă... Юлашкинчен йăк ним пĕлми пулса выртса юлсан, вĕсем кинне илсе тухса кайнă. Мурат пырса каличчен карчăк ичен нимĕн те пĕлмен, ăна ăçта та пулин персе рнĕ пуль, е çакса хăварнă пуль, тесе шутланă. Му-ахаль вăл тем пекех тав турĕ, анчах кинне чĕррĕн аймасран пăшăрханса пычĕ...

ин аптрамасть пулĕ-ха, манран чиперех юлчĕ... Ан лявĕ-ха ытлашши, ăшна ан çунтар пустуй,—лăплан-ма тăрăшрĕ Мурат.

сах вĕсем хĕрарăм выртнă çĕре çитрĕç. Вăл татах çилланса кайнă мĕн, карчăк ыйтнисене хирĕç аран-темиçе сăмах калама пултарчĕ.

ем çен мăшкăлланă хыççăн, фашистсем ăна револь-тан персе пăрахса хăварнă иккен. Анчах та—темле п вĕлереймен, пуля чĕререн инçе те мар, сулахай пуççи витĕр тухса кайнă.

– Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?—куççуль тулли куçĕсемпе пăхса е Мурат çине карчăк.

– Суранне çых. Ахаль те юн нумай кайнă та унăн, ах юхма пултарать. Пĕтет вара...

арчăка çапла каларĕ те, хăй çавăнтах çĕçĕ кăларса

вăрман ăшнелле кĕчĕ. Кăшт тăрсан вăл ал гуни хул
икĕ кашта, тата вĕтĕрех хурăн тураттисем çĕтĕрсе
са, носилка майлаштарма тытăнчĕ. Ăна туса çит
вĕсем карчăкпа иккĕшĕ суранлă хĕрарăма ерипен çĕ
ун çине хучĕç. Хĕрарăм йынăшса ячĕ.

— Тӳс ĕнтĕ пăртак, Лиза... Епле пулсан та т
терĕ карчăк йăваш сасăпа. (Унăн кинĕ Лиза ятлă п
— Киле çитерес тетпĕр-çке сана...

Муратпа карчăк носилкăна ик вĕçĕнчен тытрĕ
часрах ялалла утрĕç. Анчах кунта та чăрмавсăр пул
Вăрмантан тухнă-тухманах вĕсен умне таçтан мур
виçĕ юланутлă нимĕç сиктерсе пырса тăчĕç.

— Хальт!

— Стой, русс!—тесе кăшкăрса ячĕç вĕсем.

Паллах, чарăнмалла пулчĕ...

— Кам ку?

— Àçта каятăр?—тĕпчеме пуçларĕç нимĕçсем.

Мурат пĕрре тăшмансем çине, тепре Акулина Пе
на çине пăхса илчĕ те, вăл хăранипе шурса-кăва
кайнине кура, пĕтĕм ответа хăй çине илме шут ту

— Чирлĕ çынна тухтăр патне илсе каятпăр,—терĕ

— Суятăн!

— Мĕн суяс манăн... Пăхсах курăнать вĕт.

Анчах ăна ĕненмерĕç. Пĕри хăйĕн лачкам шыв
лашине носилка çумнех ташлаттарса пычĕ те, сыв
пекех выртакан Лизăна пĕррех нухаляпа хырăмĕ
туртса çапрĕ.

— А ну, тăр-ха!

Карчăк аллинчи носилки вĕçĕ лачах тухса ӳкрĕ.
вăрăммăн йынăшса ячĕ. Мурат та чутах ăнран кая

— Ма тиветĕр чирлĕ çынна?! Вăл ахаль те вилет.
мастăр-и мĕн?—кăшкăрса ячĕ вăл, кайран-малган
пуласси çинчен шухăшламасăрах. Хăй аллинчи но
вĕçне часрах çĕре хучĕ те, Лизăна витнĕ тутăра вă
сирсе пăрахрĕ.

— Авă—епле юн юхнă!..

имĕççем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те, урăх ним
асăрах малалла вĕçтерчĕç—çул çинче тусан çеç
ланса юлчĕ. Мурат вĕсен хыççĕнчен чылай вăхăт
а çук хаяррăн пăхса тăчĕ. Пуринчен ытла, вăл
Лизăна нухаляпа çапакан ылттăн шăллă фашистне
астуса юлчĕ.

— Эх, уллахрах çĕрте тĕл пуласчĕ ăна... отряда пĕрле
—шăлĕсене шăтăртаттарса илчĕ те вăл, носилкăна
рĕ.

— Атя, шăвар...

ĕсем майĕпе каллех утрĕç. Лиза йынăшрĕ, карчăк
пула таттисĕр ĕсĕклесе пычĕ, Муратăн пуçĕнче
н пек йывăр шухăшсем çаврăнчĕç. Халь çеç пулса
ниепле те куç умĕнчен каймарĕ. Шухăшлана çе-
чĕрери тарăху вăйлансах пычĕ.

— Сынсем мар çав, чăн-чăн тискер кайăксемех вăл
сем! Игнат пичче тĕрĕс калать: фашистсем пек
чĕрчунсем те çук çĕр çинче... Мĕн чухлĕ юн юх-
ĕ, мĕнешкел хурлăх кăтартаççĕ ним айăпсăр
не...

ин хыççăн тепри—кимĕççем пĕтернĕ çынсем аса
Мурата: хĕненине тӳсейменнипе вилсе кайнă
, пулеметран персе вĕлернĕ Якур мучи, уй хап-
н çакнă виçĕ старик, чĕреллех шăтăка чикнĕ крас-
еец, разведчик Прохор, Микулай мучи... Мĕнешкел
çынсем пулнă вĕсем пурте!

—Ним хĕрхенмесĕр, кашни утăмра, кашни самантра
с пулать вĕсене, пĕр çын юлмиччен пĕтерес
ть!

хавлăн тапрĕ Муратăн чĕри...

на киле илсе çитерсен, карчăк ăна пăртак канма тата
çиме сĕнчĕ, анчах Мурат тек тăрасшăн пулмарĕ.

— Каймалла манăн, эп хам ĕççене туса çитермен-ха,—
вăл.—Каçалла сулăнчĕ ĕнтĕ, ав—хĕвел ăçта çитнĕ...

— Апла пулсан—çула май тепĕр чухне кĕрсе тух,

яланах кĕтнĕ хăна пулăн, эпир сана манас çук
çан та!

— Кам пĕлет, тен тӳр килĕ...

— Сывă пул эппин, çулу телейлĕ пултăр!—ыр
ăсатрĕ ăна Акулина Петровна.

---

Мурат кӳршĕри яла çул тытрĕ. Нимĕçсем кунт
çук иккен, анчах вĕсем темиçе кун малтан кунта
питĕ лайăх паларнă. Çавнашкалах çунна-ишĕлнĕ çу
ванчăк хапхасем, тем сăлтавпа урама кăларса пă
сĕтел-пукансем, темĕн те пĕр... Çыннисем курăн
те вăрмансене тарса пĕтнĕ, те пӳрчĕсенчех питĕ
лараççĕ. Пурĕ те пĕр карчăка çеç тĕл пулчĕ Мура
та хăлхи илтменскер иккен.

Виççĕмĕш яла пырса кĕрсен, вăл пĕр çурт тĕ
вунă-вунпилĕк çын пухăнса тăнине асăрхарĕ те, ним
сĕрех вĕсем патнелле утрĕ.

— Ахальрен пухăнман-ха вĕсем, темскер пулнă
пĕлес,—терĕ вăл. Патнерех пырсан—хапха умĕнч
метр çурă тăршшĕ тупăк хупăлчи тăнине курчĕ.

— Кам вилнĕ кунта?—ыйтрĕ Мурат хăйĕнпе пĕ
лалли шурă çӳçлĕ ачаран.

— Çаксен хĕрачи...—терĕ лешĕ.

— Мĕн... чирлесе пулнă-и?

— Çук...—Ача пуçĕпе пăркаларĕ.—Халь кам чи
вилет?

— Мĕн пулнă эппин?

— Тирне сĕвнĕ унне...

Мурат ним те ăнланмарĕ. Этемĕн тирне сĕвнин
халиччен нихçан та илтменччĕ. Йăнăш илтрĕм пул
се—тепĕр хут ыйтрĕ:

— Мĕн терĕн эсĕ?

— Тирне сĕвнĕ, тетĕп-иç...

— Эс чипер калаç-ха, тĕрĕсне кала!

— Халь те суймастăп,—кăмăлсăр пулчĕ шурă çӳ
сана улталама мĕн мана?

— Ененмелле мар...
— Эп те ёненменччĕ те—кайран ёненмеллех пулчĕ. м йуçпах кӳртăм вĕт: çурăмĕ çинчен, пĕççисем çинчен, миçе çĕртен тирнĕ лаптăкăн-лаптăкăн сĕве-сĕве илнĕ ..
— Кам тискерĕ хăтланнă вара ун пек?
— Камĕ паллă ĕнтĕ—нимĕçсем. Вĕсене хăйсен салтакĕ-н суранĕсене саплама çамрăк ӳт кирлĕ пулнă тет те, к хĕрачана хиртенех тытса кайса тирне сĕвнĕ вара... йран çул çине кăларса пăрахнă... Ăна каçхине хамăр сем тупса килнĕ. Илсе килсенех кăшт сывлатчĕ, тет, миçе сăмах калаçма та пултарчĕ, тет, ир енне вилсе йнă вара.
— Эх, шуйттансем...
— Мĕн калăн! Нумай пулмасть тата çавнашкалах вун-лĕк çынна тытса кайса, вăйпах юн партарнă. Хăшинне шер стакан ытла илнĕ, тет. Çыннисем халь те чир-ççĕ.
Çак вăхăтра килхушшинче хĕрарăм сассисем илтĕнчĕç. хашĕ ăнтăхса каяс пек макăрчĕ—вилнĕ хĕрачан амăшĕ лас.
— Пытарма каяççĕ,—терĕ шур çӳçлĕ ача.
Мурат çынсенчен уйăралчĕ те, тăвалла утрĕ. Малалла н пуласси не курса тăрас килмерĕ унăн. Çынсен куç-ьне вăл юлашки вăхăтра ахаль те пит нумай курнă. тла та нумай...
Нимĕçсем çак тавраšра çывăхрах пулнă, Мурат ăна тĕ тĕплен пĕлчĕ,—хăй куçĕпе те сăнарĕ, çынсенчен те ічерĕ. Анчах çак виçĕ ялта вĕсем пĕри те курăнмарĕç. çăр хирте тĕл пулнă юланутлă салтаксем хăш тĕлтен тухса ăçталла кайнине те пĕлме пулмарĕ.
«Игнат пичче çилленет пуль те-ха, ним тума та çук...»— хăшларĕ те Мурат ял вĕçне тухсан, вар пуçĕпе пă-нса хăйсен отрячĕ тăнă вăрман еннелле кайрĕ.
Ĕнел чылаях каçалла сулăннăччĕ ĕнтĕ, йывăççемпе ртсен ĕмĕлкисем вăрăмлансах пычĕç, майĕпе кăштах хăнлатма та пуçларĕ. Муратăн темиçе çырмапа икĕ

уй урлӑ каҫмалла пулнӑ, ҫавӑнпа та вӑл, каҫ пулса ла
чен отряда ҫитес тесе—хӑвӑрт утрӗ, анатэлла анма
вырӑнсенче кӗсъинчи гранатӑсемпе хӗвӗнчи пистолет
ҫапкаланса ыраттарасран—аллисемпе тытса чупсах п
Вӑрман хӗррине ҫитиччен йӗп-йӗне тара ӳкрӗ вара,
те хыттӑн кӑртлатса тапакан пулчӗ.

Паҫӑрхи проҫҫек ҫине тухсан, вӑл майпентерех у
пуҫларӗ.

— Инҫе мар ӗнтӗ, часах ҫитетӗп...

Вӑрманта халь кӑнтӑрлахи пек те мар илемлӗ пу
Темӗн ҫӳлӗш йывӑҫ тӑррисем каҫхи хӗвелпе ҫемҫен
релсе тӑнӑ, вӗсен хушшипе ҫутӑ-сенкер пӗлӗт курӑ
ура айӗнче кӗҫҫе пек ҫемҫе курӑк кӑштӑртатса п
Унта та кунта ывӑнма пӗлмен чӗвӗлти кайӑксем хӑ
хавасла юррисене таттисӗр кӗвӗленӗ. Сывлӑш уҫӑ, т
сывлама ҫӑмӑл... Нихӑҫан та тухас килес ҫук ку
мантан!

Мурат хӑйсен ялӗ ҫывӑхӗнчи вӑрмана аса илчӗ.
вӑрман кунтан пӗчӗкрех ӗнтӗ, анчах унта та пит а
Ҫуркунне, пирвайхи чечексем шӑтса тухнӑ вӑхӑтра—
ялан ӗнесене ҫитерсе ҫӳренӗ, уҫӑ сывлӑшра юрла-к
савӑннӑ. Ҫулла—тӗрлӗрен ҫырла ҫиме, кӑмпа татма ка
сӗткенлӗ ҫӑка тураттисенчен шӑхличсем туса янра
Кӗр енне вара, пӗтӗм вӑрман ылттӑн тӗсле витӗнме
ласан, пӗрни-пӗрнипе сап-сарӑ мӑйӑр пухса ки
Юлашки ик-виҫ ҫул хушшинче вӑл вӑрмана тата
шех ҫӳрес килекен пулчӗ: колхоз унта темӗн пысӑ
кӳлӗ туса—ҫут кӗмӗл тӗслӗ пулӑсем ӗрчетрӗ. Ча
ҫырман ик енӗпе сахалтан та икҫӗр вӗлле лартса
са—„пыл фабрикӗ" турӗ. Вӑрмантах фермӑ карти
ӳссе ларчӗҫ, унта кунӗн-ҫӗрӗн сӗт, ҫу, хӑйма юхтар
Чӑн та ҫав, пурнӑҫ „пыл та ҫу" пулнӑ! Анчах халь
ырлӑхран нимӗн те юлман: пулӑ кӳллине колхозни
хӑйсем татса ячӗҫ, утарпа фермӑна нимӗҫсен бомби
аркатнӑ...

Пӗрмай аса-илӳсем ӑшне путса пынипе, Мурата

роççек вĕçне пит час çитнĕ пек туйăнчĕ. Йăнăш килерĕм-ши, тесе, вăл юриех енчен енне пăхкаласа илчĕ. Анчах та килни тĕрĕсех пулнă иккен, вăл пасăр Игнат çке тухнă ансăр çул çинче тăнă. Çавăнпа та лăпкă кăлпах сылтăмалла пăрăнчĕ те—уттине хăвăртлатрĕ. Вăрманта майĕпе тĕттĕмленме пуçланăччĕ ĕнтĕ).

— Тепĕр кăшт кайсан—çул сулахаялла пăрăнмалла,—шухăшласа пычĕ Мурат,—вăл тĕлте снаряд лекнипе кĕеннелле çурăлса аннă вату хурама пур, унтан çырма... Вăрман ик енче—пирĕн дозорсем. Хуллен шăхăрсан...

Анчах шухăша вĕçне çитерме пулмарĕ: малта, çул çинче, юртăпа чупакан лашасен ура сассисем илтĕнчĕç. Мурат тăпах чарăнса хытса тăчĕ.

— Кам-ши?

Пĕр харăсах темиçе тĕрлĕ шухăш çуралчĕ унăн. Сасантран—вĕсенчен пĕри çиеле тухрĕ:

— Нимĕçсем ку, пирĕннисем каплах çӳрес çук... Мĕн вăхăтрасх? Часрах вăрман ăшнелле тапса сикес-и? Тен пытанас мар? Мĕн пуласси—пулĕ вара. Çук, пытанмастăп!

Сасартăках темле вĕри хăюллăхпа тулса ларчĕ унăн ăшĕ. Сылтăм аллипе кĕсъери гранатăна чăмăртаса тытрĕ, сулахайĕпе пуçĕнчи картусне пусса лартрĕ те—хытă пăшханнă пулин те—çирĕппĕн малалла утрĕ. Вăл темиçе утăм туна çĕре—çул кукринчен юланутла нимĕçсем чупатса тухрĕç...

Мурата курсанах, малта пыраканни лашине чарса тăратрĕ.

— Хальт!—терĕ те вăл, кайрисене чарăнма хушса аллине çĕклерĕ.

Муратăн та чарăнмалла пулчĕ. Çав самантрах вăл малти нимĕç çине пăхса—ăна тӳрех палласа илчĕ.

— Пасăрхи ку!.. Ылттăн шăллă... Татах тĕл пултăмăр иккен...—хăвăрт кăна шухăшласа илчĕ Мурат.

— Ăçта каятăн?—ыйтрĕ нимĕç.

— Кукамайсем патне... Çак вăрман хыçĕнчи яла,—ун пуçĕнчен чăрлаттарсах пăхса ответ пачĕ Мурат.

— Мĕнле ял вăл?
— Осиновка... (Ку ял ятне ирхине Игнат асăннăч унта Груша разведкăна кайрĕ).
— Хăш ялтан килетĕн?
— Журавлихăран. Ав çавăнта, шыв хĕрринче...
— Çул çинче кама та пулин куртăн-и?
— Çук, никама та курман...
— Аçу ăçта санăн?
— Атте çук, тăлăх эпĕ.
— Тен, красноармеец вăл? Е партизан?
— Çук, тетĕп вĕт.
— Асту, ан суй! Атту халех çак юманран кутăн ça хăваратăп! Момент!
— Туршăн та суймастăп. Акă...—Мурат пăт та пат хĕр хурса илчĕ.
— Нимĕç хăй хыçĕнчи салтаксене пăхса çавăрăн Пĕринпе тем çинчен хăйсен чĕлхипе калаçрĕ. Кай каллех унăн кăвак пăтранчăк куçĕсем Мурат çине рăнчĕç.
— Акă мĕн, сысна çури. Потапово ялне пĕлетĕн-и
— Ма вара?
— Ыйтса ан тăр эс, тӳррипе кала: пĕлетĕн-и?
Мурат ку ял ятне те илтменччĕ халиччен, анчах—х те пелмерĕ, темшĕн—пĕлетĕп, терĕ.
— Мĕнле каймалла унта?
«Аха, кусем çул шыраççĕ! Юрать...» çиçĕм пек хăвă тăн тавçăрса илчĕ Мурат.—«Паçăр Игнат асăрхаттă наччĕ...»
— Хамах ертсе кайма пултаратăп сире,—терĕ вăл.
— Эс пире каласа кăтарт.
— Калама пĕлмелле мар çав, çулĕ пит нумай юл унталла та кунталла пăрăнать...—юптарма тытăнчĕ М рат. Çав хушăрах унăн шухăшĕ калама та çук хăвă ĕçлерĕ, ун пуçĕнче çав тери хăюллă та хăрушă пл пиçсе пычĕ...

— Апла пулсан—илсе кай!—хушрĕ ылттăн шăлли.—Хăвăртрах, эпир васкатпăр!

— Атьăр...

Нимĕççем лашисене каялла çавăрма тытăнчĕç, Мурат çул хĕррипе пăрăнса вĕсенчен мала иртрĕ. Çав хушăрах вăл тăшмансем çине хăяккăн-хăяккăн пăхса, вĕсем миçен пулнине шутласа тухрĕ. Пурĕ вунвиççĕн пулнă.

— Нумаях мар... Шел—юланутпа, хăшĕсем тарса ӳкме пултараççĕ. Анчах та—курăнĕ-ха...

Пурте вырăнтан хусканчĕç. Мурат нимĕççем умĕпе ярăн ĕлкĕрсе пычĕ. Кашни темиçе утăмранах пĕр хушă чупмалла пулчĕ унăн. Чĕри вара чăн та сиксе тухас пекех тапрĕ. Пуçри шухăшсем пĕрин çине тепри сиксе пычĕç, йĕркене кӳртме те йывăр пулчĕ вĕсене.

— Мĕнрен пуçлас? Хамăрăннисене епле майпа лайăхрах систерес? Халех, халех татăклă шут тăвас пулать... Акă ĕнтĕ, хайхи снаряд хуçса ыватнă йывăç курăнма пуçларĕ, унтан çырма та инçе мар... Дозорсем...

Нимĕççем ку вăхăтра ун çурăмĕ хыçĕнче ним туймасăрах итем çинчи тарнасем пек какăлтатса калаçса пычĕç. Малти нимĕçĕн—леш ылттăн шăллин—лаши час та часах Муратăн пуçĕ çине вĕри сывлăшпа сывларĕ, çавăн пирки унăн пĕрмай малалла чупса каймалла пулчĕ.

Темиçе хутчен вăл кĕсъери гранатине тыта-тыта чăмăртарĕ. Лаша таптасран хăранă пек пулса, каялла çавăрна-çавăрна пăхрĕ.

Акă ĕнтĕ—çырма хĕрри. Кунта çул тата ансăртарах, сукмак пек кăна. Иккĕн, виççĕн юнашар пыма май çук. Çырма тĕпĕнче—лачака. Ун урлă та тăруках каçас çук, тытăнса тăмалла пулать

— Эх, дозортисем вăхăтра асăрхасассăнччĕ!—йывăррăн кашлатса сывласа илчĕ те Мурат, пысăк утăмсемпе анаталла чупса анчĕ. Çырма тĕпĕнчи лачака урлă вăл темиçе хутчен кушак пек çăмăллăн сиксе каçса кайрĕ, унтан йăпăр-япăрах сăрта çити улăхса каялла пăхрĕ. Нимĕççем çырманалла майĕпе, пĕрин хыççăн тепри анаççĕ

иккен, хăшĕсем лачака хĕрринех çите пуçланă. Самавт
ран вĕсен лашисем лачака ăшне кĕме хăраса чарăнс
тăчĕç. Салтакĕсем вĕсене атă кĕллисемпе тапса, шăй
шай кăшкăрса хăвалама тытăнчĕç...

— Шăтăрт!—тўрĕç Муратăн шăлĕсем. Çав самантр
вăл кĕсъинчен пĕр гранатине туртса кăларчĕ те, мĕнп
вăйне пуяса, ăна нимĕçсем кĕпĕрленсе тăнă çĕрел
вăркăнтарчĕ.

Пĕтĕм вăрмана янратса кайрĕ граната çурăлнă са
Кунпа пĕрлех, çырман ик енчен те ручной пулеметсе
чен янă черетсем шатăртатса илчĕç.

— Рра-та-та-та...

— Та-та-та...

Мурат иккĕмĕш гранатине кăларса ывăтрĕ.

Каллех янраса кайрĕ вăрман...

Халь вара пирĕн çамрăк партизан часрах пĕр пыс
йывăç хыçнелле сикрĕ те, хĕвĕнчи пистолетне алли
тытса—савăннипе чутах кăшкăрса яратчĕ. Паллах ĕн
пулеметсенчен дозорта тăракан партизансем пенĕ, ур
кунта никам та пулма пултарайман. Эппин, Мурат в
мĕççене ертсе килнине вĕсем курсах тăнă!..

Вăл йывăç хыçĕнчен пуçне кăштах кăларса çыр
тĕпнелле пăхрĕ. Унта, лачака хĕрринче, пилĕк-ултă ни
аллисене саркаласа выртнă, çавăнтах темиçе лаша, унт
та кунтан юн юхтарса, тапаланса выртнă. Кĕçех, Мур
çырмаран йывăç тĕмисем хушшипе сăрталла упаленек
салтаксене асăрхарĕ. Пистолетне—чĕтĕресрен—тур
çине хучĕ те, умлăн-хыçлăн тăват-пилĕк хут печĕ. Анч
тивни-тивменнине курма пулмарĕ—нимĕçсен енчен пе
тытăнни сисĕнчĕ. Ик-виçĕ пуля пĕр харăсах Мурат п
таннă йывăçа чăнклатса пырса çапăнчĕç.

Темиçе самант хушши тăхтаса тăрсан, вăл юман
тепĕр енчен пăхрĕ. Тăруках вăл никама та курма
çавăнпа та, пистолетĕнчен пеме ăна хатĕрех тытса, йыв
хыçĕнчен çур кĕлетки таранах тухрĕ. Тухма кирлĕ м
мĕн... Тахăш нимĕçĕ ăна сыхласах тăнă курăнать: Му

тăн кĕлетки курăнсанах, ун çинелле автоматран черет йăларса ячĕç, пĕр пульли унăн хулпуççине пырса çапрĕ, тепри питçăмартине шăйăрса иртсе кайрĕ...

Икĕ çĕртен суранланнăскер, Мурат ластах ӳкрĕ. Çав самантрах унăн куçĕ умĕнче çутă-сарă ункăсем шуса иртрĕç. Темле, питĕ ĕшеннĕ пек, çывăрас килнĕ пек пулса кайрĕ. Йĕри-таврара таттисĕр таклатакан пулеметсемпе уйрăм пăшал сассисем таçта инçетелле кайса, çемçелсе пынă пек туйăнчĕ. Тепрер минутран вăл ăна та илтми пулчĕ. Унăн айĕнчи чаплă кавир пек курăнакан лапăшка симĕс мăк вĕри юнпа хĕрелме пуçларĕ...

---

Вăл тепĕр ирхине, хĕвел илемлĕн хĕрелсе тухнă вăхăтра тин тăна кĕчĕ. Куçĕсене уçсанах, çав тери шыв ĕçес килнине туйса, çĕкленесшĕн пулчĕ, анчах кăшт хускансанах хулпуççийĕ тӳсме çук ыратса кайрĕ унăн. Вара вăл хăйне мĕн-мĕн пулнине йĕркипе аса илме тăрăшрĕ. Хăй хулăм йывăç хыçне пытанса нимĕççене пистолетран пеме тытăнни таран астуса çитерчĕ—унтан шухăшĕсем татăлчĕç.

— Кайран мĕн пулнă-ши? Нимĕççене тартман-ши? Хамăрăннисем ăçта-ши, епле-ши?—ыйту хыççăн ыйту çуралчĕ унăн пуçĕнче.

— Хама тупса пулăшнă-ха вĕсем,—шухăшларĕ вăл кăштах выртсан, хăйĕн пичĕпе хулпуççине çыхнисене сăпашласа.—Хăйсем ăçта-ши вара? Пĕччене пăрахса хăварма пултарайман-çке вĕсем мана? Ах, шыв ĕçесчĕ...

Нумай кĕтмелле пулмарĕ. Муратăн хăлхисем часах хăй хыçĕнче йывăç тураттисем чăштăртатнине, икĕ çын васкасах ун патнелле çывхарса пынине илтрĕç. Кусем — пĕри Игнат, тепри Микулай мучин ывăлĕ, хай пĕркунне нимĕççен тыткăнĕнчен хăтарнă Павăл пулнă. (Сывалса çитнĕ хыççăн вăл Игнатăн чи çывăх помощникĕ пулса тăнă). Вĕсем ирхи вăрманта чылай çӳренĕ пулмалла—урисем чĕркуççи таранах йĕпеннĕччĕ.

— А-а, тинех куçна уçрăн-и, герой?—тесе кукленса

ларчĕç Мурат патне Игнатпа Павăл.—Ну, сывлăхсем мĕ
ле пек?

— Аптрамасть те... шыв ĕçес килет.

Павăл ăна флягăран шыв пачĕ, Игнат унăн суранĕсе
мĕнле çыхнине пăхкалама тытăнчĕ.

— Тĕрĕс, аптрамаллах пулас çук-ха, Груша суран
сене çыхнă чух хам пăхса тăтăм,—терĕ вăл.—Суранĕсе
пысăк мар. Сывалас пулать часрах. Каçаллапа кунт
тухса каятпăр, халăх хатĕрленет ĕнтĕ.

— Груша таварăннă эппин? Ăна нимĕн те пулман-и?-
интересленчĕ Мурат.—Ман пек лекмен-и вăл?

— Çук, çук, чиперех таварăнчĕ. Таçта, икĕ юлан
хăваларĕç тет те—тытайман, тарса ўкнĕ ку. Хăй пи
лайăх сведенисем тупса килнĕ вара... Сан мĕнле? Мі
куртăн?

— Манăн нимех те çук. Никамах та курăнмасть унт
ялсенче. Пĕр хĕрарăма вилесрен хăтартăм çеç.

— Епле?

Мурат кĕскен кăна Акулина Петровнăн кинĕпе пул
историе каласа пачĕ.

— А ку кавалеристсемпе ун пек тума мĕнле ăс çите
тĕн эсĕ? Тĕлĕнтертĕн вĕт!

— Çапла май килчĕ ара...—лăпкăн кăна ответ пач
Мурат.—Çул ыйтаççĕ те—кăтартас, терĕм.

— Леш тĕнчене каймаллине-и?—кулса ячĕ Павăл.

— Ара, вĕсене пĕр çав çула çеç кăтартмалла ĕнтĕ...

— Тĕрĕс, Мурат, маттур!—ун куçĕнчен юратуллă
пăхса илчĕ Игнат.—Пĕрне те тарма памарăмăр вĕт, веçе
поминальнике çыртăмăр!

— Ылттăн шăллăскер пурччĕ вĕсен, командирĕ пул
малла...

— Çапла, çапла, обер-фельдфебель...

— Вăл та лекнĕ-и?

— Кăннă! Сан гранатупах тирпейленнĕ!

— Аван!—тарăнăн сывласа илчĕ Мурат.—Пуринче
ытларах манăн çавна тавăрас килетчĕ. Вăл йыгă манă

уҫ умӗнчех вилес пек чирлӗ хӗрарӑма хӗнесе тӑкрӗ. айран, вӑрманта тӗл пулсан, нимрен ытла ҫавна курипе ертсе килтӗм... Хам пӗтсен те—тавӑратӑпах, тесе утларӑм.

— Маттур, маттур, Мурат. Эсӗ чӑн-чӑн Сусанин пекех уна ку ӗҫе!—терӗ Павӑл.—Малашне эпир сана кущӑн усанин тесе чӗнес тетпӗр ӗнтӗ...

Мурат ку сӑмахсене ӑнлансах ҫитмерӗ.

— Ма ун пек? Кам вӑл Сусанин?

— Илтмен-и вара эс ун ҫинчен? Учитель шкулта каласа кӑтартманччӗ-и вӗреннӗ чух?

— Ҫук...

— Э-э, Сусанин вӑл вырӑс халӑхӗн питӗ чаплӑ ҫынни улла! Тахҫан ӗлӗк-авал, пӗр виҫҫӗр ҫул каялла, пирӗн ӗр ҫине халь нимӗҫ фашисчӗсем килсе кӗнӗ пек, поляксем килсе кӗнӗ... Ҫавнашкалах—ҫаратнӑ, пусмӑрланӑ, ӗлерне... Ҫавӑн чухне вӗсен пӗр ушкӑнӗ ҫул ҫухатнӑ а, Иван Сусанин ятлӑ пӗр ватӑ хресчене хӑйсене ҫул ӑтертса пыма хушнӑ. Сусанин тӑшмансене сӗм вӑрмаалла илсе кӗрсе кайнӑ... Ӗҫ хӗлле пулнӑ, шартлама ине, пилӗк таран юр... Кайсан-кайсан, Сусанин вӗсене риех нихҫан та каялла тухас ҫук вырӑнсене ертсе ӗнне кура, урса кайнӑ поляксем ӑна ҫавӑнтах вакласа ӑ... Анчах хӑйсем те хӑтӑлайман, ҫавӑнтах пӗтнӗ. Пит акла панӑ вара Сусанин хӑйӗн пурнӑҫне... Вот епле.

— Паттӑр старик пулнӑ!

— Вырӑссен пит нумай пулнӑ ун пек паттӑрсем, шутласа та кӑларас ҫук вӗсене,—ҫирӗплетрӗ Игнат.—Ют ертен тӑшмансем килсе кӗрсен, пурне те пӗтерсе тӑкӑ. Пӗрне те тӗрӗссӗн кӑларса яман!

аласу пӗр вӑхӑтлӑха чарӑнчӗ.

Мурат каллех Павӑлӑн флягине илсе темиҫе ҫӑвар шыв сыпса ҫӑтрӗ.

— Юрать хуть—урараи тивмен, тата кансӗртерех пулатчӗ,—терӗ вӑл, пӑрӑннӑ чух хулпуҫҫийӗ ыратнипе

аялти тути хĕррине çыртса.—Сывалсан, куншăн хут ытларах тавăратăп-ха...

— Паллах, тавăратпăр,—терĕ Игнат.—Малта çапăç нумай-ха пире валли.—Вăл ура çине тăчĕ те, вăйлă сене саркаласа, шăмă сыпписем шатăртатичченех ка са илчĕ.

— Кĕçĕр каллех çывăрман пулмалла ку,—шухăш ун çинчен Мурат.—Епле тӳсет кăна...

— Ну, хускалас пулать,—терĕ Игнат.—Эпир сана вăрма никам та ан кансĕрлетĕр тесе, юри халăхран карах выртарнăччĕ. Сан патăнта каçранпах Груша ла Халь атя ĕнтĕ, халăх патне кайăпăр, апат хатĕр малла.

Мурат çĕкленме тăчĕ, анчах çавăнтах сулăнса кай Игнатпа Павăл ăна иккĕшĕ ик хулĕнчен тытса çине тăма пулăшрĕç те вĕсем виççĕшĕ те çырма т анаталла утрĕç.

— Кун пек пулсан—часах иртсе каять!—савăнă шухăшларĕ Мурат.—Чиперех утма пултаратăп вĕт...

Анчах вĕсем çирĕм çирĕмпилĕк утăм та каяймарĕç п сасартăк çывăхрах пăшал сассисем кĕрслетрĕç.

— Мĕне пĕлтерет ку?—нимĕн ăнланаймасăр пĕр-п çине пăхса, виççĕшĕ те тăпах чарăнса тăчĕç вĕсем.

Пăшал сассисем татах илтĕнчĕç. Кĕçех автомат шă татса илчĕ. Тахăшĕ çывăхрах вăрăммăн шăхăрса ячĕ.

— Облава, юлташсем! Налёт!—куç ... ялкăшта илчĕ Игнат. Çавăнтах Мурата аллинчен тытрĕ:— майĕпе анаталла ут, эпир кайса халăха йĕркелер... А ан юл!

— Юрĕ, юрĕ...

Игнатпа Павăл часрах чупрĕç, пĕччен юлнă Му сулахай аллипе сылтăм чавсине тытса, мĕн май ки таран уттине хăвăртлатрĕ. Туратсем питĕнчен çапн те, йĕплĕ йывăçсем аллисене чĕрнине те пăхмарĕ вăл

«— Часрах, часрах... отрядран юлсан—пĕтетĕп.» васкатрĕ вăл хăйне.

Анчах шăпах çак самантра лаптак çинче вăл ... ... (неушлĕ) ... пуçларĕç.

...шал сассисем çывхарнăçемĕн çывхарма пуçларĕç.

— Мĕнле пулчĕ-ха ку? Пирĕн çинчен кам пĕлтерме итарнă вĕсене? Ĕнер пĕр фашистне те тартмарăмăр,— рĕçке Игнат? Хăшĕ те пулин тарса ӳкнех ĕнтĕ, шуйт-н!—тарăхупа тулчĕ Муратăн кăкри.

Унччен те пулмарĕ, унăн хăлхине мотор кĕрленĕ сасă рса кĕчĕ. Вăл çӳлелле пăхрĕ те, хăй çинеллех ик мо-рлă самолёт ыткăнса килнине курчĕ. Ку ĕнтĕ тăшман олёчĕ, Мурат ăна тӳрех палларĕ: çунаттисем айĕнче ăн тискер хура хĕрессем палăрса тăраççĕ. Пĕркунне ратсен ялне те çавăн пеккисем пырса бомбить турĕç...

— Пире шырать ку!—хăвăрт тавçăрса илчĕ те Мурат, срах тĕмĕ ăшне кĕрсе выртрĕ.—Ыттисем пытанма ĕл-рччĕрех!

Фашистсен самолёчĕ чăнах та совет партизанĕсене ранă. Çырма тăрăх анаталла пĕр-ик километр пек çсе кайсан, вăл вăшт кăна каялла çавăрăнчĕ... Такама ăрхарĕ пулмалла, умлăн-хыçлăн темиçе бомба пăрахрĕ. тĕм çĕр, пĕтĕм вăрман чĕтренсе-çӳçенсе илнĕ пек йăнчĕ бомбăсем сиксе çурăлсан...

— Неушлĕ лекрĕ пуль? Неушлĕ пĕтерчĕ ши?—Ниçта са кĕрейми пăлханчĕ Мурат.

Нимĕç çахане кунпа лăпланмарĕ, вăл ку çырмара пĕр рĕ вырăн та хăварас мар тесе шут тытрĕ пулмалла. урат çийĕпе тепĕр хут иртсе кайса каллех разворот рĕ те, тата аялараx анса, пур пулемĕчĕсенчен те пĕр рас пеме тапратрĕ.

— Вот сволачь, вот урнă йытă!—тесе пуçне вăрăм рăк ăшĕнчен кăларса пăхрĕ ун çинелле Мурат.—Эх, ... тнăй пулемет...

Анчах шухăшне вĕçне çитерейменрĕ вăл,—сылтăм пĕç-нчен ăна темле йывăр япала хыттăн çапнă пек туйăнчĕ. срах ăна аллипе тытса пăхрĕ те—ăнланчĕ:

— Каллех!..

Шалавар витĕр çăра юн пăчăртанса тухрĕ...

Игнатпа Павăл отряда чупса çитнĕ çĕре партизан
пуçтаранса тăма та ĕлкĕрнĕ пулнă.

Усăсăр çухатусем тăвас мар тесе, Игнат Павăла от
дăн пысăк пайне халех çырма тăрăх вăрттăн çĕре и
каймашкăн хушрĕ, хăй вара, пĕр çирĕм çынпа, вĕс
хўтлесе пыма юлас, терĕ.

— Шăв-шав ытларах тăвăр,—терĕ вăл хăйпе пĕ
юлнисене.—Эпир мĕн чухлĕн пулнине пĕлмеççĕ-ха вĕс
ан тив—пире пит нумайăн тесе шутлаччĕр... Вăрма
нимĕçсем ахаль те ытла хăюллах пулакан мар. Дист
ци—вунă метр, пĕр-пĕрине куçран ан çухатăр!

Партизансем курăнман тăшман еннелле пеме тытăнч
Анчах та кăшт перкелесенех пуç тăрринче фашист
молĕчĕ курăнчĕ, ирĕксĕрех ăçта килчĕ унта йăпшă
выртма тўр килчĕ. Çывăхрах темиçе бомбă ўкрĕ, ун
вăл вĕри тăхлан çумăрĕпе сапма пуçларĕ.

Питех те кансĕр пулчĕ пĕр хушă...

— Мурат... Вăл ăçта-ши?—çамрăк тусĕ çинчен аса н
пысăк чул хыçĕнче автоматне чăмăртаса выртакан
нат.—Кунталла тухма ĕлкĕрчĕ-ши, çук-ши?

Самолĕт тата тепĕр хут пульăсем тăкса иртсе кай
Пăшал сассисем çаплах çывхарса килчĕç.

— Улталас кусене!—шут турĕ Игнат.—Отряд ç
çинчен пăрас!

Çавăнтах цепь тăрăх приказ пачĕ:

— Пурин те çырман сулахай енне каçмалла!

Капла туни питĕ тĕрĕс пулчĕ. Отрядăн пысăк па
Павăл ертсе пынипе, çырма тăрăх анаталла, уллах
вырăнсене шурĕ, Игнат хăйĕн группипе пачах урăх
релле пăрăнса, нимĕçсене йăнăш йĕрпе илсе пычĕ. Пĕ
кунталла, тепре унталла пăрăнчĕ вăл... Пĕр-ик се
хушши çапла муталаса пынă хыççăн, нимĕçсен ен
пеме пăрахрĕç—партизансене хуса çитессе шанма
татăлса юлчĕç пулмалла. Тен, хăйсене ытла шала
илĕртсе кўртсе, сасартăк çавăрса илесрен хăрарĕ
Игнат вара хăй группине пĕр çĕре пухрĕ те, каç пул

Павăл ертсе кайнă партизансен ушкăнĕпе пĕрлешрĕ.
— Мурат пур-и санпа пĕрле?—ыйтрĕ Игнат нимрен алтан.
— Çук,—терĕ Павăл.
— Епле çук?
— Курман эп ăна... Иксĕмĕр ăна леш çырмара пĕччен ратса хăварнăранпа та курман.
— Вот тебе раз! А эп ăна санпа пĕрле килнĕ пуль, ... Çухатрăмăр вĕт ачана!
— Тен килĕ-ха ара...
— Аçтан килтĕр, вăл эпир ăçталла кайнине пĕлмест

— Неушлĕ нимĕçсем патне лекрĕ пуль?
— Эх, лекрех пулсан, асаплантарсах вĕлереççĕ ĕнтĕ.

— Епле хăвартăмăр-ха эпир ăна? Кама та пулин ăна шма хушмаллаччĕ... Ăс çитмерĕ!
Мурата çухатни пĕтĕм отрядшăн пысăк хуйхă пулчĕ. те шеллерĕç ăна, тек текех асăнса ырларĕç, хăй ĕнех çитсе тухасса кĕтрĕç. Анчах каç та пулчĕ, çĕр ртрĕ, ĕнерхи пекех хĕвел илемлĕн хĕрелсе тухрĕ— Мурат отряда пымарĕ.
— Шыраса пăхас пулать,—терĕ юлашкинчен Игнат.— а та вĕт шел ачана, отрядшăн питĕ усăллă çын а çитнĕччĕ вăл...
Тепĕр ирхине, апат çисенех, Павăл хăйпе пĕрле икĕ ăкрах партизана илчĕ те, ĕнер килнĕ йĕрпе Мурата ама тухса кайрĕ. Вĕсем таврăнасса Игнат кунĕпех е, темиçе хутчен çӳлĕ йывăççем тăрне улăха-улăха .
— Пулма пултараймасть... Пĕтмен вăл, ачи пит чĕ-лăмлантарма тăрăшрĕ Игнат хăйне хăй. Анчах каçхи вăхăтĕнче таврăннă Павăл та ырă хыпар илсе леймерĕ.
— Çук... Питĕ тĕплĕн шырарăмăр—усси пулмарĕ...
Çĕрле отряд малалла хусканса кайрĕ. Пĕрре нимĕçсен

куçĕ тĕлне пулнă хыççăн. унăн пĕр вăхăтлăха ку
аяккарах куçмалла пулнă. Çитменнине тата, отр
боеприпассем сахалланнă, вĕсене фронт çывăхнерех к
тупма тивнĕ.

Игнат çула тăршшипех хăйĕн пĕчĕк тусĕ п
хуйхăрса пычĕ. Мурат пуçĕпех çухалассине унăн ни
те ĕненес килмерĕ.

— Çук, пулма пултараймасть... Тупăнатех вăл!

---

Мурат чăнах та тупăнчĕ.

Талăк та çурăран, шăп çурçĕр тĕлĕнче, вăл Жура
хăри Акулина Петровнăсен алăкне пырса шаккарĕ...

Малтан, вăрманта, йĕмĕ витĕр вĕри юн пăчăрт
тухнине курсанах, вăл хăйне çак самантра никам
килсе пулăшас çуккине ăнланса, çĕтĕлмĕ пуçланă
аркине часрах туртса çурчĕ те, пĕççине хыттăн çы
лартрĕ. Самолёт татах пеме тытăнсан татах лект
тесе, темле йывăр пулсан та ку вырăнтан урăх çĕре
шуса кайрĕ. Çурхи шыв юххипе автăннă пĕр лупаш
çитсе выртрĕ. Сывламан пек пулса, малалла мĕн пу
сине кĕтрĕ вăл. Самолёт кунталла текех тавăрн
анчах пăшал сассисем çывхарсах пычĕç. Вăтăр хĕ
утăмра нимĕçле кăшкăрнисем те илтĕнчĕç.

— Кунталлах килеççĕ вĕт... Куç тĕлне пулсан—ça
тах чиксе пăрахаççĕ!—пĕтĕм кĕлеткипе çӳçенсе илчĕ
Мурат, лупашка тăрăх тăвалларах упаленсе кайса, çӳ
хупахсем ăшне пытанчĕ.

Чылай вăхăт иртерчĕ вăл кунта. Малтанах питĕ хı
пăлханчĕ, хăй патне кĕç-вĕçех нимĕç салтакĕсем пы
тухассăн туйăнчĕ ăна, анчах пуç тăрринче мотор кĕ
мерĕ ĕнтĕ, пăшал сассисем çырман сулахай енне
инçетрен инçете кайса пычĕç, унтан пачах та илтĕ
пулчĕç.

— Ăçталла кайса çухалчĕç-ши пирĕннисем?—шухă
са выртрĕ Мурат.—Мĕн пулса иртрĕ-ши унта? Ч
тупас халь манăн вĕсене?

Таврара пĕтĕмпех шăпланса çитсен, вăл ерипен кăна тупашкаран тухрĕ. Çавăнтах хăйĕн вăйĕ çуккине, пуçĕ ыратнине, пĕтĕм шăмшакĕ вĕриленнине сисрĕ, икĕ урине те темле шалтан туртса ыратрĕç унăн.

— «Мĕн тăвас? Ăçталла каяс?»—çак шухăшсем çĕмĕрлеç халь унăн пуçне.—Таçти ют вăрманта, пĕччен, сунарлă, пĕр татăк çăкăрсăр... Часах каç та пулать ĕнтĕ—ăвсăл самаях аялалла аннă. Çын килсе пулăшасса шанма çук. Чăнах та, партизансем килсе шырама пултараççĕ ĕнтĕ, анчах—те тупаççĕ, те çук? Тăрса май килмест, ниене те пулин шут тăвасах пулать...

Вăл çырма тĕпне анса шыв ĕçрĕ те, çавăнтах вăрăм курăк çине вырнаçса, пĕр кана çутă-сенкер пĕлĕтелле пăхса выртрĕ. Çакăнта вара ун пуçне килĕшӳллĕ шухăш ыр... са кĕчĕ пулмалла. Майĕпе ура çине тăчĕ, пĕр турата касса туя турĕ те—хĕвеланăç еннелле кăштăртатрĕ.

Нумай вăхăт иртрĕ. Вăрмантан тухиччене каç пулса ... Унтан яра кун иртрĕ. Мурат çаплах хăй çулĕпе турĕ. Кашни темиçе утăмран тенĕ пекех ларса канчĕ. Темиçе хутчен тĕлĕркелесе те илчĕ, унтан каллех малалла кайрĕ.

Вара çапах та хăй çитме ĕмĕтленнĕ пӳртĕн алăкĕнчен шаккарĕ!

— Кам ку?—илтĕнчĕ шалтан палланă карчăк сасси.

— Эпĕ,—терĕ Мурат, хал кайса çитнипе алăк хăлăпĕнчен тытса.

— Кам вара эс? Паллаймастăп-çке сана?

— Мурат эпĕ, виçĕмкунхи ача... Сирĕн Лизăна çĕклесе илтĕп.

Алăк шăнкăртах уçăлчĕ. Мурат суранлă урине аран-аран çĕклесе алăк урлă каçрĕ те, сулăнса кайрĕ.

— Мĕн пулнă сана, ачам, чирлерĕн-им?—хулĕнчен тытса ... Акулина Петровна.

— Кайран калăп... Вăй пĕтрĕ манăн,—теме çеç пултарчĕ Мурат.

Акулина Петровна ăна пӳрте çавăтса кӳртрĕ те, хы-

паланма тытăнчĕ. Çимелли те, ĕçме сĕт те сĕнчĕ, анчах Мурат нимĕн те йышăнмарĕ, суранĕсене лайăхрах çыхса яма çеç ыйтрĕ. Акулина Петровна вара пĕтĕмпех ăнланчĕ—урăх ăна-кăна ыйтса тăмарĕ, ахаль те вăйсăрланса çитнĕ ачана татах калаçтарса ывăнтарас темерĕ. Вăл унăн суранĕсене майласа çыхрĕ, çемçе вырăн сарса канлĕрех вырттарчĕ те—тепĕр пӳлĕме кĕрсе кайрĕ. Кунта вăл виçĕмкун вăрмантан илсе килнĕреннпех пуçне çĕклейместĕр выртакан Лиза çумне пырса ларса, Мурат суранлanса килни çинчен пĕлтерчĕ.

— Епле пулсан та лайăхрах пăх эс ăна, анне,—терĕ Лиза, куççулĕсене çăтса,—сыватма тăрăш. Ачи пит аван пулмалла, пĕчĕк пуçĕпех партизана кайнă...

— Пĕлетĕп ĕнтĕ,—таранăн сывласа илчĕ Акулина Петровна.

* * *

Йывăр чирлесе выртрĕ Мурат. Ури шыçса кайнипе вăл малтанласа вырăн çинчен те анаймарĕ. Апат та çиес килмерĕ унăн. Акулина Петровна ăна чăн та хăйĕн тăван ачине пăхнă пек пăхрĕ, йывăрлансах çитнĕ вăхăтсенче унăн пуç вĕçĕнчен те уйрăлмарĕ, килĕнчи пур-çук апат çимĕçне çине тăрсах сĕнчĕ:

— Çи, ачам, çи, унсăрăн вăй кĕмест сана... Ху часрах сывалса каллех фашистсемпе çапăçма каяс тетĕн вĕт!

Кун пек чух Мурат хăйне ирĕксĕрлесех çиме тăрăшрĕ, хăйшĕн Акулина Петровна питех те хыпкаланнине халласа, вăл ăна амăшĕ вырăннех хисеплерĕ, мĕн каланисене яланах иглерĕ.

Çамрăк ӳт-пӳ—тӳсĕмлĕ, пур суран-сăпана та часах çĕнтерет те, каллех малтанхи карта ларать. Муратăн те çавнашкалах пулчĕ. Суранланнаранпа ике эрне çитнĕ тĕле вăл вырăн çинчен тăрса ерипен çӳреме пуçларĕ. Малтан пӳртре кăна уткаларĕ, унтан килхушшине те тухрĕ, пахчаналла та кайса çӳрекен пулчĕ. Унта-кунта çӳресе таврăнсан вара, Акулина Петровнăн халь те

:амайланайман кинĕ выртакан пӳлĕме кĕрсе, яланах унпа калаçса ларчĕ.

Çапталăк вăл кунсенче калама çук аван тăчĕ—кулленех ĕртсе хĕвел пăхрĕ, пахчари чие çырлисем юнпа тулнă ек хĕрелсе çитрĕç, тутлă йышши панулмисем пиçсе ычĕç,—Мурат вĕсене татса кĕрсе Лизăна хăналарĕ. Теĕр чух унăн пуçĕ вĕçне çыххи-çыххипе илемлĕ чечексем лсе пырса лартрĕ.

Вĕсем питĕ туслашса кайрĕç. Мурат ĕнтĕ ун çинчен ĕтĕмпех ыйтса пĕлчĕ. Лиза çирĕм икĕ-çулта кăна иккен, ĕлтĕр çуркунне Смоленск хулинчи аслă шкултан вĕрене тухнă та, Акулина Петровнăн ывăлĕпе пĕрле кунти кула ĕçлеме килнĕ. Питĕ лайăх пурăннă вĕсем. Ĕçĕсем нăçемĕн ăнса пынă,—Лизăн упăшки художник пулнă, ем тери чаплă картинăсем ӳкернĕ, вĕсене Мускаври ыставкăна та янă; Лиза хăй шкулта вĕрентнисĕр пуçне ата тухтăр пулма хатĕрленнĕ... Унăн ĕмĕчĕсене пĕтĕмех çак тискер нимĕçсем килни аркатса тăкнă. Нимĕçсем илсе тухиччен пĕр эрне малтан Лиза та упăшкипе пĕрĕ хăй ирĕкĕпех фронта тухса каймалла пулнă, анчах ку хăтра Акулина Петровна чирлĕ пулни кайма чарнă. вăн пирки килтех юлмалла пулнă унăн.

Пĕрре Мурат хăй çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парсан, иза ăна хăй çывăхнерех чĕнсе илчĕ те—аллинчен тытса ашларĕ.

— Юл пирĕн пата. Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе киличчен епле пулин виçсĕмĕр пурăнкалăпăр...—терĕ вăл.

Мурат кăштах шухăшласа тăчĕ те—пуçне пăркаларĕ:

— Юлмастăп...

— Мĕншĕн?—ыйтрĕ Лиза.—Çавах никам та çук вĕт нăн, ăçта кайма пĕлĕн? Отряду та таçта...

— Çавах пултараймастăп, манăн нимĕçсене тавăрмалли май-ха,—терĕ Мурат.—Кама та пулин тупса пĕрлешеĕпех, нимĕçсене хирĕç çапăçакансем нумай вĕт...

— Вăл апла та-ха, çапах...

— Эп халь хăнăхнă ĕнтĕ, çапăçма пултаратăп!

Кун çинчен урăх калаçу пулмарĕ вара.

Мурат хăй ăшĕнче ку ялтан кайса, партизансен пĕр-пĕр отрядне кĕресси çинчен ытларах та ытларах шу-хăшлама пуçларĕ, анчах ку ĕçе тăруках тума пулмарĕ-ха. Пĕр енчен, ку вăхăта унăн ури пĕтĕмпех тӳрленсе çитменччĕ, тепĕр енчен—тăр пĕччен тухса кайсан, ни-тума та пĕлес çукки тытса тăчĕ ăна.

— Юлташ тупас пулать,—шухăшларĕ вăл хăй ăссĕн.—Анчах та—ăçта, кама тупмалла? Эпĕ кунта никама ту-палламастăп...

Чĕререн тухса тăракан ĕмĕте пурнăçа кӳртессине ирĕксĕрех кунран кун вăраха хăварса пыма тӳр килчĕ. Ку вара питех те кичемлетрĕ ăна, тунсăхлатма пуçларĕ. Кичемлĕхне сирсе яма вăл хӳшшăн-хушшăн Акулина Пе-ровнăсен пахчинчен тухса, хирсемпе çырма-çатрасем тăрăх çӳрерĕ. Унăн шухăшĕсем яланах кунтан тас инçетре вĕçрĕç, вăл кашни самантра тенĕ пекех хăйс отрядне, хăйĕншĕн чи çывăх çынсене—Игната, Грушăна, Павăла аса илчĕ.

— Ăçта-ши халь вĕсем? Мĕн тăваççĕ-ши?

Мурат çак ик виçĕ эрне хушшинче таврара мĕн пу-пынисене нимĕн те пĕлмен. Темшĕн, ку яхăнта ни-сем те питех курăнмаççĕ, тет. Акулина Петровнă ка-тăрăх, çак кунсенче вĕсен ялне пĕлтĕр колхозăн ар-не çаратнашăн Гжатск хулинчи тĕрмене хупнă Ми-Бутылкин тенĕ этем таврăннă тет те, нимĕçсем ăна пуçлăхĕ туса лартнă, халь пĕтĕм ĕçсене ун урлă т-ныраççĕ имĕш.

Пĕр ирхине Мурат çавнашкал шухăшсемпе пăтра-çĕрулми йăранĕсем хушшипе утса пычĕ-пычĕ те, сисмесĕрех çыран хĕррине çитсе тухрĕ. Аялта, çемçе, куписем евĕрлĕ хăва йывăççисем хушшинче, пĕр хăлаç сарлакĕш тап-таса шыв юхса выртать. Инçетре мар, ыттисенчен çӳлерех йывăç хӳттинче, пĕр шур çу-ача икĕ вăлтапа пулă тытса ларать.

— Пулă та пур ши вара кунта?—шухăшларĕ те Му-

çыраналла анчĕ.

— Çакланать-и?—тесе ыйтрĕ вăл, пулăçă патне ырса тăрса.

— Сана мĕн ĕç?—темшĕн пит сиввĕн йышăнчĕ лешĕ.

— Ахаль ара...

— Ахаль пулсан—иртсе кай, ан кансĕрле!—куç шуррисене кăтартрĕ пулăç.—Çӳреççĕ сулланса.

Мурата ку кулăшла пек туйăнчĕ.

«Пăх-ха эс ăна, епле паттăр ларать, çывăха та ан пырун патне... Эккей!»

— Пит хаяр-çке эс, тусăм,—юри çемçен калаçма тыăнчĕ вăл.

— Хаяр пулăн!

— Мĕн апла?

— Çавăнпах.

— Темскер пулнă-им?

— Пулнă пулсан та, эс пулăшас çук вĕт.

— Кам пĕлет, тен пулăшăп та.

— Ан сӳпĕлтет пустуй, вилнĕ çынна чĕртеймеççĕ.

— Кам вилнĕ вара?

— Атте.

— Нимĕç йыттисем вĕлернĕ ĕнтĕ ăна?

Шур çӳçлĕ пулăçă тинех пуçне Мурат еннелле çавăрса пăхрĕ.

— Аçтан пĕлетĕн?

Мурат унпа юнашар кукленсе ларчĕ.

— Халь пурне те вĕсем вĕлереççĕ, çавăнпа пĕлетĕп. Сан аçуна мĕн турĕç?

— Виçĕмкун ирхине ирех пирĕн пата виççĕн пырса кăтарчĕç. Сан патра хĕçпăшал пур, эсĕ партизансене пулăшатăн, терĕç... Тупасси—тупаймарĕç, анчах пурпĕрех аттене карти хыçне илсе тухса персе пăрахрĕç. Унпа пĕрле Хамăртан икĕ кил урлă пурăнакана печĕç тата.

— Хĕçпăшалĕ ăçта выртнă вара сирĕн?—Куçран тӳррĕн пăхса ыйтрĕ Мурат. Кун пек ыйтнипе, пулăçă пĕр вăхăт

ниепле ответ та параймарĕ, куçĕсене мăчлаттарса илчĕ çеç.

— Хĕçпăшал-и? Вăл... вăл çук пирĕн.

— Вуçех те çук-и?

— Çук, курман эп ăна...

Мурат урăх ыйтмарĕ. Туйса илчĕ вăл: ку ачасен хĕçпăшал чăнах та пур, анчах ăна тĕплĕн пытарнă. Паллах, Мурат хăй пулсан та калас çук ун çинчен.

Вăл халь пулăçăпа юнашар тăрса, поплавок çине пăхрĕ.

— Чим-ха,—терĕ пулăçă кăшт тăхтасан,—нумаях пулмасть эсĕ пирĕн яла пыманччĕ-и?

— Хăçан вăл? Ăçта?

— Пĕрре... Ку яла мар, теприне, Рыбья Слободана... Фашистсем тирне сӳсе вĕлернĕ хĕрачана пытарнă кун. Эс манран ун чухне çул ыйтса пĕлтĕн.

— Чăнах-çке!—Мурат та палласа илчĕ ăна.—Астăватăп.

— То тă çав, малтанах таçта курнă çын пек туйăнчĕ...

Пулăçăн Мурат çине сиввĕн пăхасси самантрах пĕтсе ларчĕ. Вăл унпа халь хапăл тусах калаçма, ыйтса пĕлме тытăнчĕ.

— Эс мĕн ятлă çав?

— Мурат. Эс ху тата?

— Митька, теççĕ мана. Хăшĕсем Димитрий Иваныч теççĕ. Атте Иван ятлăччĕ манăн, колхозра тимĕрçĕре ĕçлетчĕ.

— Аннӳ пур-и?

— Пур та—аттене вĕлернĕ хыççăн чирлесе ӳкрĕ-ха, выран çинчех выртать. Шăллăмпа йăмăк апат ыйтаççĕ, килте нимĕн пĕçерсе памалли те çук, пĕтĕмпех нимĕçсем шăлса тухса кайрĕç.

— Япăх ĕнтĕ вăл... Анчах манăн унтан та япăхрах. Манăн кил те, тăвансем те çук.

— Ăçта пурăнатăн вара, апла пулсан?

— Ăçта май килнĕ—çавăнта...

Калаçу ăнсах пычĕ. Пĕр çур сехет хушшинче пĕр-пĕрине тахçантанпа паллană пекех туслашрĕç вĕсем. Ка

лаçнă майăн Митька пĕр вăлтине Мурата тыттарчĕ те— иккĕшĕ юнашар ларсах шăкăлтатгма тытăнчĕç. Пулли аван кĕчĕ, Митькăн хăйпе пĕрле илсе пынă салтак котелокĕ часах çурри ытла тулчĕ. Пулă тытасси ăнса пыни Мурата пĕр вăхăтлăха пур хуйха-суйха та, ку кунсенче пуçран тухма пĕлмен шухăшсене те мантарчĕ. Вăл хăйсен колхозĕн кӳллинче епле чаплă пулăсем пуранни çинчен, сĕрекепе пĕрре сĕрсех пăчĕ-пăчĕпе кĕмĕл пек ялтăртатакан шултра пулă туртса кăларни çинчен Митькăна каласа кăтартрĕ.

Хĕвел кантăралла хăпарса çитме пуçларĕ, ирхине самаях сивĕ пулнă шыв, сывлăш ăшăнна май, лĕпех пулса кайрĕ.

— Атя, Мурат, шыва кĕрер,—сĕнчĕ Митька.

— Кĕмелле те, сурана тем пулмасть-ши?—иккĕленчĕ Мурат.

— Мĕнле сурана?

Мурат чĕлхине çыртсах лартрĕ. Хăйĕн çĕнĕ юлташне чылай япаласем çинчен каласа пачĕ вăл паян, анчах хăй икĕ хутчен суранланни çинчен çăвар та уçмарĕ: темле пулсан та, партизанра çӳренине çынна тӳрех пĕлтерме юрамасть вĕт! (Кун çинчен ăна Игнат темиçе хутчен те асăрхаттарнăччĕ). Анчах халĕ çăвартан сăмах тухса кайсан, ирĕксĕрех каласа памалла пулчĕ. Калани те усăллă пулчĕ—Митька ун çине пачах урăхла, чĕререн хисеплесе, юратса пăхма тытăнчĕ.

«Вăт епле харсăр ача иккен ку!»—шухăшларĕ вăл ун çинчен.

Вĕсем кĕпи-йĕмĕсене хывса хучĕç те, пилĕк таран шыва кĕрсе тăчĕç. Нумайранпа шыв курман кăвакал пек— Митька тӳрех ишме, чăмма, чăмпăртатма тытăнчĕ. Мурат пăртак тытăнса тăчĕ,—халь çеç çĕнĕ ӳтпе витĕнме пуçланă суранĕсене сиен кӳресрен хăрарĕ вăл. Кашни çуллах шыва кĕрсе пуранăскере, ăна ку та тем пекех туйăнчĕ. Вăл хăлхисене хупласа шыва чăмрĕ, месерле выртса ишенçи турĕ...

Туссем çак ытарма çук шывра тем вăхăтченех йăпанса киленетчĕç пулĕ те—кĕтмен çĕртенех пĕтĕм таврари сывлăш сасартăк моторсем кĕрленипе тулса ларчĕ. Муратпа Митька иккĕшĕ те пĕр харăсах çӳлелле пăхса, таса пĕлĕтре самолётсене шырама пикенчĕç. Унтан Митька çыраналла сиксе тухрĕ.

— Авă, авă!.. Кур-ха, кунталла килеççĕ!—аллипе вăрман еннелле кăтартрĕ вăл.

— Курăтăп,—терĕ Мурат, васкасах шывран тухса.

Вăл хĕвеланăç енчен виçĕ самолёт хытăран хытă вĕçсе килнине курчĕ: пĕри—чылай малта, иккĕшĕ—ун хыççăн. Вĕсем кун пек вĕçсе пыни ăна кăштах тĕлĕнтерчĕ.

— Чим-ха, епле ку?..

Куçĕсене хĕвел çутти çапасран ывçипе картласа, тинкеререх пăхрĕ. Çавăнтах вара ăнланса илчĕ:

— Икĕ нимĕç пирĕн лётчика хăвалаççĕ!—Пăлханма пуçласа, вăл хыттăн кăшкăрса ячĕ:—Пăх лайăххах! Малти—пирĕн „хурчка“, кайрисем—„мессершмиттсем“... Куратăн-и—пачах расна?

Йăнăшман иккен партизачăн куçĕ! Мурат хăй сăмахне пĕтеричченех кайри самолётсенчен пĕри пулемĕчĕсенчен темиçе черет кăларса ячĕ. Унтан тепри те çавăн пекех турĕ... Малта пыраканни вара кутăн-пуçăн çаврăнкаласа, питĕ хăвăрт ӳкме тапратрĕ.

Куна курсан, Муратпа Митькăн çамкисем çине шăпăрах сив тар тапса тухрĕ...

— Пĕтрĕ вĕт!

— Персе антарчĕç, шуйттансем!..

— Ма хуть парашютпа сикмерĕ-ши хăй!—ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр хумханчĕç вĕсем...

Анчах та ку пирĕн лётчикăн чеелĕхĕ çеç пулнă мĕн. Çĕр çумне çитесси пĕр хĕрĕх метр çеç юлсан „хурчка“ нимрен мехерле çаврăнса илчĕ те, тӳп-тӳрĕ кашта тăрăх хăпарнă пек, çӳлелле хăпарса кайрĕ. Ачасем „ах!“ тесе те илеймерĕç—совет лётчикĕ хăйĕн машинне пĕр нимĕç хыçне илсе çитерсе, пулемётран вăрăм черет кăларса

нĕ. Çав самантрах фашист самолётне вут хыпса илчĕ, вăл темĕн пысăкĕш вутпуççи пек çунса, çĕрелле чашкăрса анчĕ.

— Аха-а, лекрĕ-и!

— Хăй вилĕмне тупрĕ, çăхан!..

— Халех тепри персе анать акă, курăн!

— Тарать, тарать!

— Хуса çитет ăна вăл...

Ачасем самолётсем çинчен куçĕсене илмесĕр сăнаса тăнă вăхăтра, сывлăшра калама та çук хăватлă кĕрешӳ пуçланса кайрĕ. Самолётсем пĕрре çӳлтен пăрахнă чул пек аялалла чăмса анчĕç, тепре мĕнпур вăйĕсемпе ăмăртса çӳлелле хăпарчĕç, кăшт майлăрах самант пулсанах пĕр-перин çинелле пулемётсенчен печĕç... Вĕсем çине пăхса, Муратпа Митька вăлтисем çинчен те, хăйсем çаппа-çарамас тăнине те манса кайрĕç.

— Хăшĕ çĕнтерет-ши ĕнтĕ?

Чылай вăхăт пычĕ пĕлĕтри тытăçу. Юлашки самантсенче совет самолёчĕ пеме те чарăнчĕ, халĕ вăл пĕрехпай нимĕç самолёчĕн хӳри пагне çаврăнса тухма тăрăшрĕ.

— Эх, патронĕсем пĕтрĕç пулмалла!—хуйхăллăн сывласа илчĕ Мурат.—Çапăçура патрон пĕтнинчен усалли нимĕн те çук ĕнтĕ...

— Чим!—аллинчен çавăрса тытрĕ ăна Митька.—Хăвалать! Хăвалать! Çитет!

Чăнах та, питĕ маттурăн чăмса çаврăнкаласа илнĕ хыççăн, совет „хурчки“ нимĕç самолёчĕн хыçне тухрĕ те, ăна хăвалама тытăнчĕ. Вĕсем хушши çавтери хăвăртлăн пĕчĕкленсе пычĕ... Çĕр метр юлчĕ, çитмĕл, аллă... нтан тата сахалтарах... Çитрĕ!

Çиçĕм хăвăртлăхĕпе вĕçекен совет машини пĕтĕм пĕлеткипе тăшманăн хӳринчен пырса çапрĕ...

«Мессершмитт» тăруках малалла ыткăнса кайрĕ, унтан пĕрре пĕр еннелле, тепре тепĕр еннелле чалăшса илчĕ те, ним чарусăр йăванса анса кайрĕ.

— Пулчĕ!

— Ку та пĕтрĕ!—çămăллăн сывласа илчĕç хăйăр çинче тăракан çамрăк сăнавçăсем. Анчах вĕсен савăнăçне кĕтмен ĥурлăх сирсе ячĕ: нимĕçе хŭринчен пырса çапсассăн, совет самолĕчĕ хăй те ваннă пулмалла, вăл çилпе вĕçсе каякан турпас пек ывтăнма пуçларĕ. Темиçе самантран ун çумĕнчен хура панчă уйрăлса, аялалла чăмрĕ.

— Лётчикĕ сикрĕ!—терĕ Мурат.

— Парашютсăрах-и?—тĕлĕнсе, хăраса ыйтрĕ Митька.

— Каярахпа уçать пуль...

— Атя-ха, çŭле кайса пăхар! Тен—уçăлмасть?

— Атя!

Вĕсем сăрта хăпарса çитиччен—çывăхри вăрман çийĕнче, хĕрŭ хĕвел çуттинче, сенкер пурçăн парашют тăрри йăлтăртатма тытăннă мĕн. Икĕ нимĕçе персе ŭкернĕ совет лётчикĕ ерипен кăна çĕрелле ярăнса анса пычĕ.

— Шăп Хура Вар пуçне анчĕ!—терĕ Митька.

— Инçе-и вăл?

— Пĕр çухрăм çурă пулĕ. Ма ыйтан?

— Кайса пăхас пулать... Пирĕн лётчик вĕт вăл, пиреншĕн çапăçнă. Кам пĕлет, тен суранланнă, тен ăна пулăшу кирлĕ?

— А эпир мĕн тума пултаратпăр вара?—иккĕленерех тăчĕ Митька, тусĕ тăруках кун пек шут тунинчен тĕлĕнсе.

— Эпир-и? Тем те тума пултаратпăр,—хĕрŭленсех ĕнентерме пикенчĕ Мурат.—Суранне çыхса яма та, никам курман çĕре пытарма та, çул кăтартса яма та... Эс военный çын марри тŭрех курăнать çав! Пымастăн пулсан—эп пĕчченех каятăп.

Митькăн каясси те килчĕ, тытăнса тăмалла та пулчĕ.

— Эп киле кайса шăллăмпа йăмăка апат пĕçерсе парасшăнччĕ... Каларăм вĕт—анне чирлĕ.

— Ăна та тума ĕлкĕретпĕр. Атя часрах! Каяр!

Туссем васкасах тумланчĕç те, çырма хĕррипе тăсăлакан сукмак тăрăх Хура Вар патнелле чупрĕç.

Пĕр çухрăм пек кайса уçăрах вырăна тухсан, вĕсем çырма леш енчи уй тӳпинче кăвайт хунă пек тĕтĕм йăсăрланнине асăрхарĕç.

— Авă, хайхи çунса пĕтме те пуçланă!—хаваслансах тĕллесе кăтартрĕ ун çине Мурат. Тепĕр 300—400 чалăшран вĕсем сăмсипе çĕрулми ани çине тăрăннă тепĕр нимĕç самолĕчĕн çĕмрĕкĕсене курчĕç. Халь çеç сывлăшра вирхĕнсе çӳренĕ машинăран турпас кăна пулса тăнă.

— Ку та ĕнсине хуçнă!

— Çав кирлĕ те ăна...

Çапах та, вĕсене халь тăшманăн ванчăк самолĕчĕсем мар, парашютпа аннă хамăр лётчик интереслентернĕ. Вĕсем часрах ăна çитсе курасшăн пулчĕç.

— Тĕрĕссипе, хăш тĕлерех анчĕ-ха вал?—ыйтрĕ Мурат хăй хыççăн утса пыракан Митькăран, вăрман херрине çите пуçласан.

— Ав çавăнта... Калатăп вĕт—хам куçпах куртăм тесе,—аллипе тепĕр еннелле кăтартрĕ Митька.—Вар тăрăх хăпармалла.

Виç-тăват минутран вĕсем Митька кăтартнă çĕре çитрĕç. Анчах таврара никам та курăнмарĕ.

— Ăçта шырăпăр?—Муратăн куçĕнчен пăхрĕ Митька.

— Çак çырман тепĕр енĕпе каяр-ха... Асту вара, лайăхрах сăнаса пыр, пăхмасăр нимĕн те ан хăвар!

— Юрĕ.

Иккĕшĕ те, çак таврашрах аннă лётчика епле пулсан та тупас кăмăлпа тулса, ăна шырама тытăнчĕç.

* * *

... Лётчик Сергей Малинин паян тăшманăн тылне шалах кĕрсе кайса, разведка туса çӳренĕ. Вăл хăйсен командованийĕ валли пит те кирлĕ сведенисем пухнă та, часрах каялла килме васканă. Приказа ăнăçлăн пурнăçланă пирки унăн кăмăлĕ çавтери çĕкленнĕ, çавăнпа та вăл, самолёт моторĕ пĕр тикĕссĕн ĕçлесе пынă май, текех хăйĕн юратнă юррине юрласа пычĕ:

— А он, мятежный, ищет бури
Как будто в бурях есть покой...

Сасартăк ăна икĕ нимĕç истребителĕ тапăнчĕç. Ахалĕн хăтăлма май çуккине кура, Малинин вĕсемпе çапăçма шут турĕ.

Кун хыççăн мĕн пулнине вулакан пĕлет ĕнтĕ...

Иккĕмĕш нимĕçĕ ăна ик уринчен те суранланă,—Малинин медальсем çине те аран-аран пусрĕ. Çапах та, мĕнпур вăйне пухса, вăл нимĕçе хÿререн пропеллерпа пырса çапса ÿкерчĕ, унтан вара хăйĕн те вăрман çинех сикмелле пулчĕ. Çăра туратсем хушшипе шуса анса кайнă чух унăн парашючĕ йывăç тăрринчен çыхланса ларчĕ. Темиçе хутчен те вăл хăйĕн кĕлеткин йывăрăшĕпе туртăнса аяларах анма тăрăшрĕ, анчах та усси пулмарĕ. Çав хушăрах аттисем ăшне юн тулса пыни сисĕнчĕ.

Питех те кансĕр пулчĕ ăна, çапах та çухалса каймарĕ вăл. Хăрах аллипе парашют лямкинчен тытăнса тăрса, теприпе комбинезон кĕсъинчен çĕçĕ туртса кăларчĕ те, васкасах хăйне чăрмантаракан стропасене татма пуçларĕ...

Парашют тыткăнĕнчен хăтăлнă хыççăн, вăл суранĕсене çыхма ларчĕ. Асапланкаласа хăрах аттине хыврĕ — юн шăпăрах юхса анчĕ, теприне хывма тăчĕ — хываймарĕ, атă кунчине çĕçĕпе çурса кăлармалла пулчĕ.

Начар ман ĕçсем, — шухăшларĕ вăл. — Инçех каяс çук эпĕ ку урасемпе...

Сулахай урине пуля шăпах пакăлчак айĕнчен шăтарса тухнă иккен. Хускатмалла та мар ыратрĕ вăл. Çапах та, майлаштарса çыхса, юнне юхма чаркаларĕ. Тепĕр урине çыхма тытăнсан, Малинин хăйĕнчен инçетре те мар такам чылай хыттăн шăхăрнине илтрĕ. Ун хыççăнах, ик енчен икĕ çын калаçма тапратрĕç.

— Ăçта эс?—ыйтрĕ пĕри.

— Кунта...—сас пачĕ тепри.

— Мĕн те пулин куртăн-и?

— Çук. Эс тата?
— Эп те...
— Мĕн?
— Курман.
— Малалла каятпăр-и?
— Атя, ут...

Малинин ку калаçăва хăйĕн ĕçне пăрахса, сывламасăр итлесе ларчĕ. Вăл вĕт тăшман йышĕнса илнĕ çĕр çине сикнĕ-çке! Паллах, вăл парашютпа аннине нумайăшĕ курнă, куракансем хушшинче тăшмансем те пулма пултарнă. Çавăнпа та унăн халĕ епле пулсан та хытăрах асăрханмалла, тăшман аллине лекесрен сыхланмалла.

— Камсем пулчĕç-ши кусем? Нимĕçсем-ши, хамăрăннисем-ши? — иккĕленсе илчĕ лётчик. Анчах самантранах хăйне хăй лăплантарчĕ: — Çук, кусем хамăрăннисем пулмалла, ырăсла калаçрĕç... Анчах та, мĕн шыраççĕ-ха вĕсем кунта? Мана-ши?

Пĕр пилĕк минут та иртмерĕ пулĕ — вăрманта каллех паçăрхи пек шăхăрчĕç. Унтан пĕри теприне чĕнчĕ:

— Кил кунта...
— Темскер курăн-и?
— Кил, тетĕп!

Малинин часрах урине çыхса пĕтерме пикенчĕ.

— Хам патах килсе тухсан, тăшман пулсан — пурĕпĕр чĕррĕн тыттармастăп! — Вăл пистолетне кобурĕнчен кăларса хăй умне хучĕ. — Хама вĕлеричченех пĕр пиллĕкĕшне хуратăпах!

Анчах лётчик ахалех пăлханнă. Унăн никампа та çапăçмалла пулмарĕ. Лăпсăркка çамрăк йывăç тураттисене сиркелесе, ун умне Муратпа Митька тухса тăчĕç.

— Здравствуйте, лётчик юлташ! — аллине картус сăмси çумне тытса илчĕ Мурат.

— Здравствуйте... кулмастăр пулсан, — терĕ Малинин, хăй умĕнчи ача чунтанах çар çынни евĕрлĕ пулма тăрăшниччен кăштах кулса.

— Сывлăхсем мĕнле?

— Аван-ха. Хăвăр епле?

— Эпир те аван-ха...

— Пионерсем-и?

— Эп—пионер, куна—пĕлместĕп...—Мурат пуçĕпе Митька çинелле сулса кăтартрĕ.—Çапах та, аван юлташ вăл, шанма пулать. Унăн ашшĕне виçĕмкун çеç нимĕçсем вĕлерсе пăрахнă.

— Санăн хăвăн аçу ăçта тата?

— Вăл тахçанах вилнĕ! Аннене — нумай пулмасть нимĕçсем...

— Ну, пэллă ĕнтĕ.,.—Малинин ачасене тата тепĕр хут куçĕсемпе виççе хакласа илчĕ те: «Кусемпе ĕç тума пулать, лайăхрах калаçтарса ыйтса пĕлес-ха...» — тесе шухăшларĕ.

— Мĕн ура çинче тăратăр? Ларăр,—терĕ вăл, хăй таврашĕнчи çемçе курăк çине кăтартса.—Тĕл пулнă майĕпе, паллашар ĕнтĕ пĕр-пĕринпе!

Ачасем ларчĕç.

— Хăш ялтан-ха эсир?—ыйтма пуçларĕ Малинин.

Ответ параканни каллех Мурат пулчĕ:

— Митькăсен ялĕ кунта юнашарах, манăн—инçе, пĕр вăтăр-хĕрĕх çухрăма яхăнах. Пĕлместĕп, тен фрицсем халиччен тĕппипех çунтарса янă пуль...

— Ку таврара пит нумай-и нимĕçсем?

— Пур çав, выçă кашкăрсем пекех çӳреççĕ.

— Сирĕн ялта та-и?—Малинин Митька çине пăхрĕ.

— Мурат каларĕ вĕт – аттене вĕлерчĕç тесе...

— Так, так...

— Лётчик пирус кăларса чĕртрĕ те, пĕр вăхăт нимчĕнмесĕр шухăша кайса ларчĕ. Ачасен те калаçма сăмах тупăнмарĕ, вĕсем халь ун çинчен пĕлесшĕн çунса, куç илмесĕр пăхса ларчĕç.

— Эсир кунта мана курнипе килтĕр-и?—чылайран тин ыйтрĕ Малинин.

— Сана курнипе çав,—пуçĕпе сулса çирĕплетрĕ Мурат

— Куракансем татах пулнă-ши?

— Пĕлместпĕр.

— Эсир хăвăр шут тунипе килнĕ эппин, такам хушнипе мар?

Мурата ку ыйту кăштах тĕлĕнтерчĕ, ăна хăйне шанман пек туйăнчĕ.

— Никама та курман эпир... Митькăпа шыва кĕнĕ чух эсĕ парашютпа аннине асархарăмăр та... — ăнлантарма тытăнчĕ вăл, — тен пулăшу кирлĕ пуль, терĕмĕр. Тĕрĕссипе каласан, лётчик юлташ, эпĕ вĕт...

— Мĕн?

— Партизан эпĕ!

— Ну-у? — тăруках ĕненесшĕн пулмарĕ Малинин. — Хăçан пулна вара эс партизанра, ăçта?

Мурат темиçе сăмахпа хăй çинчен каласа пачĕ. Унăн хуть те епле пулсан та лётчикăн кăмăлне каяс, хăйне чăн-чăн боец вырăнне шутлаттарас килчĕ. Сывалма пуçланăранпах ним тума пĕлмесĕр тунсăхласа пурăннăскер, вăл халь çак лётчикпа пĕрлешсе, çĕнĕрен ĕçе тытăнма май пуласса шаннă...

... Питĕ аван ку, — терĕ лётчик унăн калавне итлесе пĕтерсен. — Эппин эсĕ те, ман манерлех, ирĕксĕр посадка тунă?

Унăн тутисем çемçен кулса илчĕç.

— Çапла пулса тухать çав, — кăштах именчĕ Мурат, — икĕ эрне ĕнтĕ ним усăсăр çапкаланса çӳрерĕм.

Лётчик пирус тĕпне аяккалла ывăтрĕ те, тарăнăн сывласа ячĕ.

— Ну, вăл нимех те мар-ха, тусăм, уншăн ан кӳрен эс. Пирĕн вăт халь малашне мĕн тăвасси çинчен шухăшламалла...

— Тĕрĕс, — килĕшрĕ Мурат. Хăйĕн чĕри вара çавтери савăнăçлăн тапма тытăнчĕ: капла каланипе лётчик хăех унпа пĕр пулса ĕçлеме чĕннĕ вĕт. Нумайранпа шыранă юлташ хăех тупăнчĕ эппин!

— Чăн малтан, ачасем, сирĕн мана ăçта та пулин, шанчăклăрах çĕре вырнаçтарас пулать. Манăн урасем

иккĕшĕ те суранланнă, пĕччен эпĕ ниçта та кайма пултараймастăп. Хăвăрах ăнланатăр пуль—манăн халь никама та курăнма юрамасть... Çавăн пек вырăн тупма пултаратăр-и?

Мурат Митька çине пăхса илчĕ.

— Мĕвле шутлатăн эс?

— Темле çке...

— Кетсе тăмалли çук, халех шутласа тупас пулать ĕнтĕ! Шухăшла-ха лайăхрах, эс кунти çын вĕт. Хамăр тăрăхра пулсан, эпĕ пĕр минут та тытăнса тăрас çукчĕ.

— Шырăр-ха, шырăр, ачасем,—тепĕр хут ыйтрĕ Малинин. Унăн суранĕсем халь ăна вăйсăрлатма пуçларĕç, çавăнпа та вăл ăçта пулин те часрах вырнаçасшăн пулчĕ...

Муратпа Митька темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕç—ниепле те кирлĕ пек вырăн тупăнмарĕ. Пур çĕрте те хăрушă пек, ют çынсем курма пултарас пек туйăнчĕ: ял хыçĕнчи çырмара юхăнса ларакан кирпĕч сарайĕнче те, вăрманти кивĕ утарта та, пахчари мунчара та...

— Хамăр патра, пӳрт маччи çинче епле-ши?—терĕ Митька юлашкинчен.—Унта пирĕн тем мурĕ те çакса тултарнă, пытанма пит аван...

— Чăнах та!—хапăлласах йышăнчĕ ку шухăша Мурат.—Унтан аван вырăн та кирлĕ мар. Вĕсен ашшĕне пурĕпĕр персе пăрахнă, текех партизан шырама пырас çук вĕсем патне. Лайăхрах маскировка тăвас та... Килешетĕн-и?—ыйтрĕ вăл лётчикран.

— Эсир аван тетĕр те—килĕшес пулать,—терĕ лешĕ.

— Хăçан каятпăр вара, халех-и?—ыйтрĕ Митька.

— Çук, каççăр каймастпăр,—терĕ лётчик.—Пирĕн никам куçĕ тĕлне те пулма юрамасть, терĕм вĕт.

— А эпĕ çапла шухăшлатăп,—куçĕсене хĕсерех пăхрĕ Мурат.—Эпир кунта юлăпăр, Митька киле кайтăр. Ăна унта килтисем те кĕтеççĕ, тата вăл вырăн хатĕрлетĕр те—яла пырса кĕме хăрушши-хăруш марри çинчен пĕлсе килтĕр. Кайран вăра виççĕмĕр пĕрле кайăпăр...

Куппа пурте килĕшрĕç.

Митькăна ялта мĕн-мĕн тумаллине вĕрентрĕç те—вăл кайрĕ, Малининпа Мурат юлчĕç.

— Çакна туртса антарасчĕ, — терĕ Малинин, халь те йывăç тураттисенчен çакăнса тăракан парашют çине кă-тартса.—Ытла паллă йĕр вăл—пĕр-пĕр тăшман ăна курсанах çак таврара ухтарма тытăнма пултарасçĕ...

Мурат уринчи аттине хывса пăрахрĕ, лётчик аллинчен çĕçĕ илсе, йывăç тăрнелле улăхса кайрĕ. Темиçе минутран пурçăн парашют шыв пекех çĕрелле юхса анчĕ. Мурат ăна аяккарах илсе кайса пĕр лупашкана пăрахрĕ, унтан, пачах курăнмалла мар тăвас тесе, çиелтен тураттисем хурса тултарчĕ.

Вăл тахçанганпах фронтри хыпарсене пĕлесшĕн çӳретчĕ те—халь шăпах май килчĕ. Малинин ăна Хĕрлĕ Çарăн пит те паттăр ĕçĕсем, çапăçусем çинчен каласа пачĕ... Вĕсене итлесе ларнă май — каç пулса килни те сисĕнмерĕ.

— Çапла, тусăм, пирĕн ĕçсем аванланçах пыраççĕ,— терĕ ăна Малинин юлашкинчен,—эпир халь куллен кунах фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене пинĕ-пинĕпе пĕтеретпĕр, вĕсен машинисене те, хĕçпăшалĕсене те аркататпăр... Ан куլян, хамăрăн тăван çĕршыва çав тискерсенчен тасатса çитерес кунсем çывхарсах килеççĕ. Курăн акă—тăшманпа эпир малашне хальхи пек те мар çапăçма пуçлăпăр!

Мурата Микулай мучин сăмахĕсем аса килчĕç:

— Телейлĕ пурнăç тавăрнатех-ха пирĕн пата —тенĕччĕ вăл вилес умĕн.

Эх, ма çук-ши вăл халь çакăнта! Епле савăннă пулĕччĕ вăл çак хыпарсене илтсен!

... Митька хĕвел аннă вăхăтра таврăнчĕ. Мурат, вăл киличчен лётчика малтанхи вырăнтан урăх çĕре, улахрах вырăна куçарнăччĕ те, Митька хăйсене тупаймĕ тесе, ăна вăрмантан çул çинех тухса кĕтсе илчĕ.

— Ну, мĕнле унта? — ыйтрĕ вăл, Митька хăй тĕлне çитсенех.

— Пурте йĕркеллĕ...

— „Кашкăрсем“ тĕл пулмарĕç-и?

— Çук.

— Вырăн хатĕрлерĕн-и?

— Готово.

— Анну пĕлет-и?

— Шарламарăм... Вăл самайланман та, пăлхатас темерĕм. Кирлех пулсан, кайран та калама пулать, вăл хирĕçех пулас çук. Эсир мĕнле пурăнатăр кунта? Выçса аптрарăр пуль? Ме акă...

Митька хĕвĕнчен пĕр чĕл çăкăрпа икĕ сивĕ паранкă тыттарчĕ.

— Çикеле çакна. Килте урăх нимĕн те çук та—тутлăраххине илсе килеймерĕм.

— Юрĕ-çке, ку та тем пекех,—тав турĕ Мурат.

Вĕсем çултан пăрăнчĕç те, таптанса пĕтнĕ хуратул ани тăрăх тухса, варманалла кĕрсе кайрĕç.

Малиния кăшт кăна тĕлĕрме тытăннă пулнă, анчах ачасем пырса тăнă-тăманах вăранчĕ. Ывăннипе тата сунăнĕсем туртнипе унăн куçĕсем хĕрелнĕ, сăнне чирлĕ тĕс çапма пуçланăччĕ. Митька ăна валли те çăкăр чиксе килнĕ мĕн, анчах вăл çиес килмест, терĕ. Ун вырăнне хăй кĕсъинчен пĕрер татăк шоколад кăларса хуçса пачĕ.

— Пысăк спасибо сире, ачасем... Нихăçан та манмăп эсир мана ыр тунине!

— Мĕн спасибо пултăр,—терĕ ăна хирĕç Мурат кăшт именерех,—пирĕн вырăнта пулсан, кашни совет ачиех çапла тумалла... Эпир такама мар — хамăр çынна пулăшатпăр вĕт!

Майĕпе тĕттĕмленчĕ; тăп-тăр уяр пĕлĕтре çут çăлтăрсем ахах пĕрчисем пек йăлтăртатма тытăнчĕç, инçетри ялсем хыçĕнчен вут çинче хĕртнĕ çурла евĕрлĕ уйăх хĕрелсе тухрĕ...

Туссем тăчĕç те, ялалла утрĕç. Харах ури çине пачах пусайман лётчик ачасен хулпуççийĕсем çине тĕренсе пычĕ. Яла çитиччен вĕсем темиçе хут та чарăнса канчĕç.

мĕншĕн тесен лётчикăн урисем ытларах та ытларах ыратакан пулса пычĕç. Хăй те халран кая пуçларĕ вăл.

Митькăсен анкартине пырса кĕрсен, вĕсем юлашки хут чарăнса тăчĕç. Митька хăйсен килĕнче ют çын тавраш пуррипе çуккине пĕлме кайрĕ.

— Кĕме юрать, пурте çывăраççĕ...—тесе пĕлтерчĕ вăл, пĕр ик минутранах каялла таврăнса.

Вĕсем пахчари улмуççисен хӳттинелле кĕрсе çухалчĕç.

---

Акулина Петровнăпа Лиза патне Мурат ирхине тин кайрĕ. Пӳрте кĕнĕ-кĕменех, вĕсем ăна иккĕшĕ те пĕр харăс тĕпчесе ыйтма тапратрĕç:

— Ăçта çухалса пурăнтăн?

— Мĕншĕн çавăн пек ним пĕлтермесĕр каятăн?

— Питĕ хăрарăмăр...

— Кам та пулин нимĕçсем аллине тытса пачĕ пуль тесе, чун юлмарĕ вĕт саншăн!

Анчах Мурат хĕрарăмсене темиçе сăмахпах лăпланарчĕ: хăруша çĕре ниçта та кайман, хама валли юлташсемпех пĕр ача тупрам та—унпа пĕрле пулă тытрăмăр, кайран вĕсем патне кайса çывăртăмăр, терĕ. Кăшт тăхтаран—тӳссе тăраймарĕ (улталама аван мар, терĕ пулмалла ав) лётчикпа пулнă историе каласа пачĕ...

— Куншăн мухтатап вара сана!—тăруках пуçне çĕклее, юратуллăн пăхса илчĕ ун çине Лиза.—Ăçтан кун пек маттур пулма пĕлнĕ вара эс! Тупата, орден парас пулать ана...

— Ачи—герой ĕнтĕ, калаçмалли те çук,—çирĕплетрĕ Акулина Петровна та, ирхи апат хатĕрлесе.

Часах вĕсем виççĕшĕ те сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç. Нертенпех тăрлавлăн çимен Мурат каçса кайсах çиме тытăнчĕ, хĕрарăмсем калаçнă май пăч-пач кăна сăмах. Шкаларĕ. Çитменнине, вăл каяллах Митькăсем патне кайма васкарĕ, унăн халь пĕрмаях хăйĕн çĕнĕ тусĕсемпе пĕрле пулас килчĕ...

Сасартăк тултан урам алăкне шаккани илтĕнчĕ.

— Кам килет-ши ĕнтĕ? — терĕ те Акулина Петровна чӳрече витĕр пăхрĕ. Унтан тăрук чӳречерен айккалла пăрăнчĕ:

— Пĕтрĕмĕр! Мишка Бутылкин! Нимĕçсен тумĕпе, пăшалпа... — Унăн сăнĕ çамантрах кăвакарса кайрĕ, тутисем чĕтреме тытăнчĕç. — Ырра мар ку! Пытан. Мурат, часрах пытан!

— Мĕншĕн? — ăнланаймарĕ Мурат. — Нимĕç мар вĕт вăл?

— Нимĕç мар та — нимĕçсен йытти вăл çын. Астумастăн-и, каланăччĕ вĕт сана. Нимĕçсем лартнă староста, бандит, хăйне „бургомистр" текенни! Пытан часрах, сисме пултарать...

— Ăçта пытанас! — çурăмран вĕри шывпа сапнă пекех сиксе тăчĕ Мурат.

Хапхаран татах шаккарĕç.

— Ман тӳшек айне! — терĕ Лиза. — Халь тин тулах тухма юрамасть ĕнтĕ... Тухса уç, анне!

Акулина Петровна тула тухса, Бутылкинпа пĕрле каялла кĕриччен — Лиза Мурата тӳшек айне туса, çиелтен одеялсемпе витсе хучĕ. Мурат вара сывлăшне пусарса, пӳртри çынсем калаçнине итлесе выртре...

— Каçарăр, чĕнмесĕр килнĕшĕн! — кĕçех илтрĕ Мурат ĕçкĕпе çĕгсе ларнă арçын сассине. («Ку ĕнтĕ Бутылкин.. Ыр çын пекех калаçма пăхать тата, пӳтсĕр...» шухăшларĕ вăл ун çинчен).

— Килех, килех, иртсе лар, — терĕ сĕтел хушшинчи Лиза. — Тен пĕрер стакан чей ĕçĕн? Сахăр çук та...

— Тав-ха, уншăн килмен, — илтĕнчĕ Бутылкин отвечĕ.

— Тем ĕçпеччĕ? — ыйтрĕ Акулина Петровна.

— Налог пирки. Нимĕçсен командованийĕ хушнă тăрăх, пирĕн ялăн çак икĕ кун хушшинче вĕсене валли апат-çимĕç пухса памалла. — Бутылкин ӳсĕрсе илчĕ. — Хушнă чухлĕ пухса памасан, пире питĕ вăйлă лекме пултарать. Никама та хĕрхенсе тăма хушман...

— Çапла пуль ĕнтĕ, çаплах пуль, — йӳнеçтернĕ пек

пулчĕ Акулина Петровна.—Эсĕ вара... вĕсен агенчĕ пекки пулатăн-и-ха?

— Çук, эпĕ фюрер хушнипе лартнă бургомистр.

— Ăнланаймастăп-çке ку хăрушă сăмахсене...

— А санăн вĕсене ăнланма та кирлĕ мар. В общем эпĕ—власть.

— Пурнăç çитрĕ эппин санăн? Пуçлăх пултăн?—чĕтресе илчĕ Лиза сасси.—Ыр курмалла кăна...

— Совет вăхăтĕнчи мар ĕнтĕ!—хăйĕнчен мăшкăлланине те сисеймерĕ Бутылкин.—Анчах вăл тарам-ха. Эпĕ тунă разнарядка тăрăх, сирĕн 5 кило çу, 20 литр сĕт, 100 çăмарта, 16 кило какай памалла. Ыран ирпе çаксем пĕтĕмпех ман патра пулмасан...—Бутылкин каллех ӳсĕрсе илчĕ.—Мĕн пулассине калама пĕлме çук. В общем—ырах пулмасть ĕнтĕ.

— Пирĕн нимĕн те çук-çке, иртнинче пĕтĕмпех тиесе тухса кайрĕç,—терĕ ку цифрăсенчен хăраса ӳкнĕ Акулина Петровна.—Ăçтан тупса парас, шухăшла-ха?..

— Пĕлместĕп,—шăл витĕр сурчĕ Бутылкин.—Пырса памасан—кайран хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр вара.

— Персе пăрахсан та, çакса вĕлерсен те тупаймастпăр...

— Ну, ку вăл сирĕн ĕç!—Бутылкин тăчĕ те, аллинчи винтовкине çĕре кĕмсĕрт! тутарса тăратрĕ.—Малтанах астутаратăп—каçару пулмасть. Сире—пушшех çăмăллăх памĕç, сирĕн вĕт ывăл хĕрлисем патĕнче. Ун çинчен нимĕçсен командованийĕ точнă пĕлсе тăрать. Çавăнпа та, вĕсен приказĕсене вăхăтра туса пымасан—хăвăр хапхаранах сулкаланса тăма тӳр килĕ...

— Тура пул...—Акулина Петровна, тархасласа, ун патнелле утма тăнăччĕ, анчах Лиза, тăруках хĕп-хĕрлĕ пулса кайса сиксе тăчĕ:

— Анне, намăса пĕл!

— Çапла!—каллех шăл витĕр сурчĕ Бутылкин.—Хăвăра сиен ан кӳрĕр. Паянах пырса парсан тата авантарах пулать.

Урăх нимĕн те каламарĕ вăл, тимĕрленĕ аттисемпе кĕмсĕртеттерсе тухса кайрĕ.

— Пĕтрĕмер, тинех пĕтрĕмĕр, пуçа çиетех ку!..—таттисĕрех хуйхарма тапратрĕ Акулина Петровна. —Мĕн тăвас пулать ĕнтĕ, ăçта кайса кĕрес, епле майпа çăлăнас?

Лиза чĕнмесĕр ларчĕ,—вăл та ĕнтĕ ку çĕнĕ хурлăхран епле те пулсан çăлăнмалли май шырарĕ пулмалла. Пăчланса çитнĕ Мурат тата кăштах выртрĕ те, хуллен кăна сас пачĕ:

— Мана тухма юрать-и?

— Ах, чăнах çке!—хыпăнса пырса уçрĕ ăна Лиза.—Эс пĕтĕмпех илтсе выртрăн-и, Мурат?

— Илтрĕм... Сиксе тухса пăвма тытăнас патнех çитрĕм çав.

— Э-эй, ун пек юрать-и? Вара эс хăвна та, пире те халех пĕтеретĕн вĕт!

— Халь те çавăнпа кăна тӳссе выртрăм.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?

— Виççĕн виç тĕрлĕ шухăшларĕç вĕсем, анчах ответ пурĕпĕр тупăнмарĕ, пуç çине капланса килнĕ хăрушлăха епле майпа сирсе ярассине пĕлмерĕç.

Кăнтăрла çитеспе Мурат анкартисем хыçĕпе Митькасем патне кайрĕ. Килхушшинче шанкă татса ларакан Митькăпа пĕр-ик сăмах хушса илсен, вăл мачча çине йăпшăнса хăпарчĕ.

Лĕтчик çывăрать иккен. Мурат пĕр кивĕ ещĕк çине ларчĕ те, шухăша кайрĕ. Çакă икĕ уйăх хушшинче мисемĕш хут ĕнтĕ унăн пуçĕ йывăр шухăшсемпе тулчĕ!.. Чăнах та, ку таранччен вăл яланах тĕрĕс çул тупса пыначчĕ, умма темле йывăр ыйту тухса тăрсан та, ăна çĕннĕччĕ. Анчах паянхи ыйтăва ниепле те татассăн туйăнмарĕ.

— Епле çăлас-ха Акулина Петровнăпа Лизăна? Паллах, вĕсем леш ирсĕр сутăнчăк Бутылкина нимĕн те тупса параймаççĕ, вара вăл хăй каланине тума та пултарать... Уншăн вĕсен вилĕмĕ нимĕне те тăмасть. Тытĕ те—çакта-

рĕ... Тепĕр тесен, Акулина Петровнăпа Лизăна çеç мар, ялти ытти çынсене те çав хурлăхах кĕтет, вĕсем те ним айăпсăрах пĕтме пултараççĕ... Çук, мĕнле те пулин май шухăшласа тупасах пулать! Тен—лётчик пулăшĕ?

Урам тăрăх автомобиль кĕрлесе иртсе кайрĕ. Мурат вăштах сиксе тăрса кăвакарчăн шăтăкĕ витĕр пăхрĕ те, урампа питĕ васкаса машина хыççăн машина пынине курчĕ. Пурне те тăп-туллиех тиенĕ, анчах вĕсем çинче çар хатĕрĕсем мар, кил таврашĕнчи япаласем. Тӳрех пăхсан—пĕр-пĕр колхоз таçта урăх çĕре куçса каять темелле: арчасем, тимĕр койкăсем, сепараторсем, çĕвĕ çĕлемелли машинсем, ача вăлашкисем, тĕкĕрсем...

Машинăсен шавĕпе Малинин та вăранчĕ.

— Мĕн пулнă унта?—ыйтрĕ вăл Муратран.

— Нимĕçсем пирĕн тупрана турттараççĕ...

— А-а... Паллă ĕнтĕ. Çаратуçă çар*) тесе вĕсене ахальрен каламан çав. Кашни утăмрах çаратаççĕ.

Совет çыннисене çаратса пухнă пурлăха тиенĕ машинăсем иртсе кайсан, урамăн анат вĕçĕнче выльăх кĕтĕвĕ курăнчĕ. Пӳрне хулăмĕш тусанпа витĕннĕ нимеç салтакĕсем сахалтан та 700—800 пуç тĕрлĕ выльăх хăваласа пыраççĕ мĕн. Хăисем ним майсăр кăшкăрашаççĕ, чупкалаççĕ, унталла-кунталла пăрăнакан выльăхсене рычак пысăкĕш патаксемпе çите-çите çапаççĕ... Муратăн чĕри калама çук пăчăрганса илчĕ. Кам пĕлет, тен вĕсен колхозĕнчи выльăхсем те пур çак кĕтӳре? Фашистла харампырсене валли пăхса ӳстернĕ-ши вара çак ăратлă сурăхсыснасене? Пăрахасчĕ çакăнтах пĕр икĕ бомба—тискер кайăксене тăрантариччен луччă ахаль пĕтчĕр!

Малинин çĕкленчĕ те, пӳрт çамки патнелле упаленсе пычĕ.

— Ну, тусăм, ку ахальтен мар!—терĕ вăл, хăмасем хушшипе урамалла пăхса.—Чăн калатăп сана—куншăн савăнмалла кăна пирĕн.

---

*) Вырăсла—грабьармия.

Мурат ун çине ăнланмасăр пахса илчĕ.

— Хамăрăн пурлăха илсе кайнăшăн савăнмалла-и?

— Уншăн мар, ăнлан эсĕ... Ку вĕт нимĕçсем каялла чакма тытăннине, тарма тапратнине пĕлтерет! Хăйсен ĕнсисене çапса хуçиччен, çаратнă пурлăха тартса ĕлкĕресшĕн. Вилĕмĕ çывхарса килнине сиснĕ вăл анчăксем — вот мĕн, тусăмçăм!..

* * *

Унăн сăмахĕсем тĕрĕсех пулнă.

Малининпа Мурат çак инçетри тот ялта, пĕчĕк пÿрт маччи çинче, нимĕçсем тарма тытăннине сăнаса ларнă вăхăтра, вĕсенчен 40—50 километртра питĕ вăйлă çапăçу пынă. Елерхи вăрмансен хÿттинчен нимĕçсен позицийĕсем çинелле йывăр орудисем таттисĕр персе тăнă, пĕлетре пĕр чарăнмасăр хĕрлĕ çăлтăрлă бомбардировщиксем кĕрленĕ, аплă хирсем тăрăх хăрăмпа, тусанпа витĕннĕ танксем вилĕм сапса ыткăннă. Нимĕçсем тунă укрепленисем, блиндажсем сывлăшалла сирпĕннĕ, унтан та кунтан каркаласа пĕтернĕ йĕплĕ пралук картисем çĕр ăшнелле таптанса кĕнĕ. Пĕтĕм сывлăш хăватлă взрывсен сассипе тулса ларнă, хурçă машинăсем чупнипе пĕтĕм çĕр чĕтренсе тăнă...

Юлашки темиçе кун хушшинче пирĕн полксем малтан мала куçса нумай ялсене, саласене, станцăсене тытса илнĕ, нумай пин совет çыннисене нимĕç тискер кайăкĕсен гытканĕнчен хăтарнă. Вĕсем пĕр чарăнмасăр Елатлă хула патнелле çывхарса пынă. Хĕрлĕ Çар çите-çите çапнипе, нимĕçсен ку вырăнта хăйсен машинисене, хĕçпăшалĕсене, вилни-суранланнисене пăрахса хăварсах чакма тÿр килнĕ...

Анчах каялла чакмалли çулĕ те такăр пулман вĕсен. Ытти чух та нимĕçсене пĕр канăç та паман партизансем халь пушшех хăюлланса кайнă. Ăçта çитнĕ унта хĕненĕ вĕсем нимĕç хурахĕсене. Вĕсен йышĕ те кунран кунах пысăкланнă.

Игнат Дубовăн отрячĕ те ку хушăра питĕ ӳссе кайрĕ. Мурага çухатнăранпа вăл хăйĕн отрядне нумай çĕре илсе çитерчĕ, нимĕçсене сахал мар сиен кӳчĕ, темиçе хутчен питех те пысăк налётсем туса, çĕнĕ хĕçпăшал туянчĕ. Вара çав ăнăçлă налётсем хыççăн кашнинчех унăн отрядне 30 — 40 çын хутшăнчĕç. Малтанхи пек мар ĕнтĕ халь, унăн ротăсем, взводсем пулчĕç, вĕсен пуçĕнче — çар ĕçне пĕлекен хăюллă командирсем тăчĕç. Нумай пулмасть, М. шывĕ хĕрринче вăл тепĕр пысăк отрядпа тĕл пулчĕ. Ку отряд фронт сывăхĕнче çӳренĕ иккен, çавăнпа та фронтри ĕçсене питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Вĕсен тата радиостанци те лайăх ĕçленĕ — Мускавпа çыхăнма пултарнă, Игнатпа нумай вăхăт калаçса, пурин çинчен те тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ хыççăн, ку отрядăн командирĕ — граждăн вăрçи вăхăтĕнчех Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ ватă коммунист — ăна малашнехи ĕçре питех те кирлĕ пулмалли канашсем пачĕ, унтан Игнатăн отрядне хисепе илесси çинчен Мускава пĕлтерчĕ. Ик кунтан вара Мускавран самолёт вĕçсе килчĕ те — отряд валли радистпа радиостанци антарса хăварчĕ.

— Ну, эпир халь текех вăрманти упасем пек пурăнмастпăр ĕнтĕ, пĕтĕм тĕнчере мĕн пулса пынине пĕлетпĕр! — савăнса кайрĕç кун пирки партизансем.

Кӳршĕри отряд командирĕ Игната çак вырăнсенчен Е. хули таврашнелле кайма сĕнчĕ:

— Нимĕçсем çак кунсенче чакма тытăнасси паллах, вĕсен çулне картласа — тарма парас пулмасть, пуринчен ытла — обозĕсене тата-тата илес пулать...

Игнат унпа килĕшрĕ те, икĕ кун хушшинче хăй отрядне аллă çухрăм таран каялла илсе кайрĕ, кунта вара нимĕçсен тылĕсене тата хытăрах çĕмĕрме хатĕрленчĕ.

Пĕр ирхине вăл вăрман хĕрринчи чи çӳллĕ йывăç тăрне улăхса йĕри-тавралла бинокльпе пăхса сăнама тытăнчĕ. Чылай вăхăт пăхрĕ, кашни çырманах, кашни хир лаптăкнех хыпашларĕ. Çĕре ансан вара хăйне аялта кĕтсе тăнă Павăлпа Грушăна хуллен кăна пĕлтерчĕ:

— Эпир вӗт каллех пӗркунхи выРӑнсене ҫитсе тухрӑмӑр. Хамӑр ҫине облава тунӑ вӑрман та инҫе мар кунтан. Сасартӑк, Мурат тупӑнсан, э? Вот, тӗлӗнмелле пулӗччӗ!

— Ҫук, шанмастӑп эп, вилнех пуль вӑл, — пуҫӗпе сулчӗ Груша. — Сывӑ пулнӑ пулсан — татахчӗ, атту вӗт суранпа. Вӑхӑчӗ те чылай иртрӗ унтанпа...

— Пӗлме ҫук, — терӗ Павӑл, — кӑчухне апла та, капла та пулма пултарать. Тен тупӑнӗ те...

* * *

Каҫалла сулӑнсан лётчик Муратпа Митькӑна хӑй патне чӗнсе илчӗ те, ҫапла вӗрентме тытӑнчӗ:

— Эпир кунта ларса пурӑннинчен ним усси те пулас ҫук, тусӑмсем... Урамалла тухса ҫӳрӗр-ха, нимӗҫсем ӑҫталла кайнине пӗлме тӑрӑшӑр. Малашне ку пире кирлӗ пулма пултарать. Ял ҫыннисем мӗн калаҫаҫҫӗ унта — ӑна та хӑлхана чикӗр. Тата... акӑ мӗн, ачасем. Малинин сӑмахне татрӗ те, хӑйӗн ҫамрӑк тусӗсене куҫӗсен ен пӑха-пӑха илчӗ.

— Митя, ку пуринчен ытла санран килет... — терӗ лётчик малалла. — Мана пӗр шанчӑклӑ ҫын кирлӗ. Вӑл — чӑн-чӑн совет ҫынни пултӑр. Аҫупа сывӑх пулнӑ ҫынсене аса ил-ха... Тӑрӑшса ӗҫленӗ колхозниксене... — Митькӑна шухӑшлама пулӑшса пычӗ вӑл. — Пур-и ҫавӑн пек ҫынсем?

— Пур, — терӗ Митька.

— Кам?

— Хамӑртан икӗ кил урлӑ ҫеҫ, Иван Степанч. Унӑн ывӑлне нимӗҫсем пирӗн аттепе пӗрле персе пӑрахрӗҫ.

— Во! Пигӗ лайӑх. Тен, татах тупӑпӑр?

— Анат кукӑрти Антон Сырков аттепе пит туслӑччӗ. Сапожник вӑл, хӑрах уралласкер.

— Урине мӗн пулнӑ?

— Ӑна вӑл ӗлӗкхи вӑрҫӑрах ҫухатнӑ, тет.

— Нимӗҫсемех татса янӑ пуль эппин? — ыйтрӗ Мурат.

— Çапла пулмалла.

— Ку та аван, — терĕ лётчик. — Тата пур-и тен, шыраса пăх-ха...

— Эс пĕр çын анчах терĕн вĕт? — тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине Митька.

— Ытларах пулни — кансĕрлемест вăл. Туссем мĕн тери нумайтарах, çĕр çинче пуранмз çав тери авантарах... Ну, урăх çук пулсан, малтанлăха ку та çитĕ эппин.

— Мĕн тăвас тетĕн вĕсемпе?

— Вăл халех паллă мар-ха, анчах эсир кĕçĕр, тĕгтĕмленсен, вĕсенчен хăшне те пулин ман пата чĕнсе килĕр. Малтан унпа эп калаçса пăхăп, унтан вара пурĕ пĕрле шут тăвăпăр...

— Юрĕ.

— Тепĕр кăшт тăрсан, ачасем мачча çивчен анса урама тухрĕç.

— Пăх-ха, пăх! — Мурат çаннинчен картах туртрĕ Митька, тепĕр аллипе хĕвелтухăçнелле кăтартса. — Пушар!..

— Çунтараççĕ... Эх, шуйттансем! — тарăнăн сывласа ячĕ Мурат.

Вĕсенчен виç-тăват çухрăмри яла темиçе çĕртен вут хыпса илнĕ иккен, шăрăхпа типсе çитнĕ кил-çуртсем çав тери вăйлăн, краççин сапнă пекех ялкăшса çунма тытăннă. Чарусăр çулăм пĕр çурт хыççăн теприне çаварса илнĕ, пĕлĕгелле йывăр хура тĕтĕм йăсăрланса хăпарнă...

— Мĕнрен тухнă-ши? — терĕ Митька, пушар çине сарлакан чарăлнă куçĕсемпе пăхса.

— Айван та иккен эсĕ! — кăмăлсăр пулчĕ кун пирки Мурат. — Паллах — нимĕçсем хыптарнă.. Ку ялти çынсем мĕнпе те пулин тарăхтарнă ĕнтĕ вĕсене! Ну, атя.

Вĕсем тăвалла, нимĕçсен машинисемпе обозĕсем иртсе кайнă еннелле утрĕç. Урамра никам та курăнмарĕ, ялти пур-çук çынсем, нимĕçсен куçĕ тĕлне пулас мар тесе, çурте ăçта килчĕ унта пытанса пĕтнĕ пулмалла. Çич-сакăр килтен иртсен, тăкăрлăк пуçĕнче, вĕсем нимĕçсен икĕ

машини чаранса тăнине курчĕç. Темскер пăсăлнă пулмалла — вĕсем патĕнче темиçе салтак шавласа тăрмашаççĕ. Хыçалта каллех мотор сассисем илтĕнчĕç — анатран улачăла сăрласа пĕтернĕ автобус евĕрлĕ машинăсем хăпарни куранчĕ.

— Атя хăвăрттрах, хире тухар! — терĕ Мурат. — Курса юлас пулать ăçталла кайнине...

Анчах нумай та каяймарĕç вĕсем — хайхи машинăсем (Мурат самантрах шутласа тухрĕ вĕсене — çичĕ машин) ял варне çитсе чаранчĕç. Вĕсен ăшĕнчен пĕр харăсах темиçе çын сиксе тухрĕç, хăшĕ-пĕрисем тăкăрлăк пуçĕнче тăракан машинăсем патне чупса кайрĕç. Пĕр пӳрт умĕнчи чие йывăççи çумне лăпчăннă Муратпа Митька вĕсем çине куç илмесĕр пăхса тăчĕç...

Фашистсем тем çинчен хыттăн шавласа, аллисемпе сулкаларĕç, унта-кунта тĕллесе кăтартрĕç.

— Темскер шыраççĕ, — Митькăна айăкĕнчен тĕртсе илчĕ Мурат.

Тата кăшт шавласа тăнă хыççăн, нимĕçсем машинисене каллех хускатрĕç те — тӳрех ялсовет çурчĕ умне пырса тăратрĕç. Муратпа Митька та вĕсенчен юлмарĕç: пĕлес пулать-çке вĕсем мĕн тунине...

Пĕри — асли пулмалла — темскер хыттăн кăшкăрса команда пачĕ. Вара салтаксем ялсовет çуртне темле ещĕксем, тимĕр арчасем, хут çыххисем çĕклесе кĕртме тытăнчĕç.

— Аха-а, кунта вырнаçаççĕ! — темшĕн савăнса илчĕ Мурат. — Лере вĕри пулнă пулмалла, аяккарах тарса килчĕç!

— Хире каяпăр-и? — ыйтрĕ Митька.

— Кирлĕ мар ĕнтĕ, — пуçĕпе сулчĕ Мурат.

— Эппин, Иван Степанча кайса чĕнер?

— Атя. .

Ачасем каялла кайрĕç. Паçăр икĕ грузовик чаранса тăнă тăкăрлăкран вĕсене хирĕç хура качака çавăтнă тем

ле çĕтĕк-çӑтӑк тумтирлĕ, пуçне пичĕ-куçĕ курӑнмиех чĕркесе лартнӑ хĕрарӑм тухрĕ.

— Журавлихӑна тӳррĕн каймалли çул ӑçта кунта, ачасем? — тесе ыйтрĕ вӑл, вĕсен çывӑхнерех пырса.

— Ак çапла, тӳрех... — кӑтартрĕ Митька .

— Инçе-и кунтан?

— Çук, пĕр çухрӑм çурӑ çеç.

Мурата ку хĕрарӑмӑн сасси паллана пек туйӑнчĕ. Тахçан, таçта — анчах та илтнех вӑл ку сасса...

— Мĕн тума каятӑн эс унта? Кам патне? — юриех ыйтрĕ Мурат.

— Качакана така патне илсе каятӑп, — лӑпкӑнах ответ пачĕ хĕрарам. — Унта лайӑх така пур, теççĕ...

Мурат пĕтĕм çан-çурӑмĕпе чĕтренсе илчĕ, ун пырне асартӑк темле мӑйӑр пек чӑмӑркка кĕрсе ларнӑн туйӑнчĕ. Вӑл пĕр утӑм малалла ярса пусса, хĕрарӑма куçĕпенчен пӑхрĕ.

— Груша! — чутах кӑшкӑрса ярасчĕ вӑл.

— Ан шарла, — терĕ хĕрарӑм, хӑрах куçне кӑшт çеç хĕссе илсе. — Эп сана курман та, илтмен те, нимĕн те пĕлместĕп...

Митька вĕсем çине ним ӑнланмасӑр пӑхса тӑчĕ. Мурат та ӑна тӑруках нимĕн те калаймарĕ: пĕрре Груша çине, тепре урама тӑрӑх унталла та кунталла пӑхса илчĕ. Арамра кӑчухне кун пек пухӑнса тӑма юраманнине пĕлсе, васрах аллине сулчĕ:

— Митька, эс Иван Степанч патне кай эппин. Каласса ах, анчах асту, асӑрханарах калаç.

— Эс пымастӑн-и мĕн?

— Эп çак хĕрарӑма çул кӑтартса ярам-ха... Халех тарнатӑп!

Мурат мĕн пирки кун пек шут тунине Митька ниепле те тавçӑрса илеймерĕ. Питех те тĕлĕнмелле пек туйӑнчĕ ӑна ку. Анчах ним те шарламарĕ, кайма хушнӑ çĕрелле утрĕ.

Вӑл кайсанах Мурат Грушӑна васкатма тытӑнчĕ:

— Атя часрах çав тăкăрлăкалла, унтан пĕр-пĕр пах
чана кĕрĕпĕр. Яла халь çеç нимĕççем килсе тулчĕç. Эп
малтан каям, эс ман хыççăн пыр... Асту, куçран ан çу
хат.

Çавăнтах вэл урам урлă каçса, хĕсĕк тăкăрлăкалла кĕр
се каирĕ. Чĕри çав тери савăнăçлăн тапрĕ унăн: вăл кал
лех хăйĕн чи çывăх тусĕсене тупрĕ вĕт!..

Темиçе минутран Мурат пĕр пĕчĕк çатан арпалăха пă
рăнса кĕчĕ. Часах Груша та çитрĕ.

— Ку качакине мĕн тума сĕтĕрсе çӳретĕн эс? — ним
рен малтан ыйтрĕ Мурат.

Груша кулса ячĕ.

— Юлташлăх! Пĕччен çӳреме кичем вĕт атту...

— Çук, эс чăннипе кала-ха.

— Ай ăнланмастăн?

— Çук.

— Ара, партизан сăн-сăпатне çухатма! Боец хăçан ка
чака çавăтса çӳренине курнă эс? Капла мана кам мурĕ раз
ведчик тесе шутлама пултартăр? Игнат тупса кăларч
ăна...

— А-а, маскировка иккен!

Вĕсем пĕлтĕрхи улăм купи çине ларчĕç те, пĕр-пĕри
çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕç.

---

Ывăлне нимĕççем персе вĕлернĕренпе Иван Степан
Додонов килтен ниçта та тухман. Хăй ăшĕнче вăл тă
тăклă тавăру кунĕ çаврăнса килессе çеç кĕтнĕ. Хутра
ситрен, вăл питĕ вăрттăн, асăрханса, çывăхри вăрма
кайса килнĕ, — унта, пигĕ шанчăклă вырăнта, сахалтан
пĕр взводлăх пытарнă хĕçпăшал выртнă. Вăл хĕçпăш
часах кирлĕ пуласса Иван Степанч çирĕппĕн шанса
рăннă.

Паян та кунĕпех килтен тухмарĕ вăл. Унăн тĕлĕпе пĕ
маях нимĕç ен машинисем, обозĕсем, выльăх кĕтĕвĕсе
иртрĕç, вĕсем çине пăхсан — чĕре юнпа тулчĕ.

— Хӑҫан ҫитӗ-ши ку хурахсене тавӑрмалли самант? — ыйтрӗ вӑл хӑйӗнчен хӑй, анчах ответ тупӑнмарӗ...

Каҫ пулнӑ чух унӑн ҫеннӗк алӑкне хуллен шакӑртаттарчӗҫ. Иван Степанч пӳртрен тухрӗ те, кам килнине ыйтнасӑрах алӑка уҫрӗ. Ун патне нимӗҫсем хӑйӗн ывӑлӗпе пӗрле персе пӑрахнӑ тимӗрҫӗн аслӑ ачи Митька килнӗ иккен.

— А-а, Митька! Килех, килех! — сасартӑках ҫемҫелчӗ Иван Степанчӑн кӑмӑлӗ. — Ма пӗртте кӗрсе тухмастӑн ак таранччен?

— Халь те килтӗм вӗт, — терӗ Митька, алӑк патӗнчи пукан ҫине ларса. — Ытти чух вӑхӑт пулмарӗ. Пӗлен — ҫлекенни эп кӑна...

— Вӑл ҫапла ӗнтӗ, шуйттан нимӗҫӗсем пире иксӗмӗре те тӑлӑха тӑратса хӑварчӗҫ вӗт...

Митька чӗнмерӗ, вӑл халь хӑй мӗншӗн килнине епле каласа парасси ҫинчен шухӑшларӗ. Ӑҫтан-ха тӑрук персе яратӑн ун ҫинчен?

— Ну, мӗнле хыпарсем пур ялта? — Каллех сӑмах пуҫларӗ Иван Степанч, пӑхӑр чӗлӗмне тултарса. — Эп ниҫта та тухса ҫӳреместӗп те — пӗлместӗп...

— Эп те пӗлместӗп, — терӗ Митька. — Настаҫ инке сук-и?

— Ҫук, таҫта тухрӗ.

— Эппин, эс килте пӗчченех ларатӑн-и?

— Пӗчченех. Сана Настаҫ инке кирлӗччӗ-и?

— Ҫук.

— Ма ыйтан эппин?

— Ахаль ара.

— Иван Степанч чӗлӗмне чӗртсе ячӗ те, пукан илсе Митька патнерех пырса ларчӗ.

— Ҫӗр ҫинче ахаль нимӗн те пулмасть, ачам, — терӗ вӑл. — Пур ӗҫелен та хӑйӗн сӑлтавӗ пур. Акӑ, эп чӗлӗм тӗртма пуҫларӑм—ӑш варкана пирки пулчӗ, нимӗҫсем пимӗн пурлӑха турттарса каяҫҫӗ — вӑл хӑйсен нимӗн те пулман пирки, тата вӗсем яланах ҫаратса пурӑнма вӗрен-

нĕ пирки... Çаратнă пурлăхпа пуясшăн, значит. Эс те ман пата ахаль килмен ĕнтĕ, тем сăмах пурах санăн — куçăнтан пăхсах куратăп.

— Пур çав... — сăмах çаврăнса килнĕшĕн савăнса кайрĕ Митька. — Пĕр ĕçпе килтĕм эп, Иван Степанч.

— Кала эппин, ан пытар.

— Питĕ вăрттăн ĕç... Никама та пĕлтерме юраманскер...

— Юрĕ, юрĕ. Кала эс, кунта эпир иксĕмĕрех.

— Пирĕн пата пыр-ха... Халь мар, тĕттĕмленсен. Унта пĕр çын пур, сана курса калаçасшăн.

Иван Степанч пуканне Митька çывăхнелле сиктерчĕ.

— Мĕнле çын, ывăлăм? Кам вăл? Тăшман-и, тус-и?

— Тус. Аманнăскер...

— Боец эппин?

— Лётчик.

— Епле лекнĕ вăл сирĕн пата?

— Хамăр тупса килтĕмĕр.

— А-авă мĕн! Иван Степанч, тĕлĕннипе, пуçне сулкаласа илчĕ. — Пит лайăх ăнлантăм...

— Пыратăн и? — ун куçĕнчен пăхрĕ Митька.

— Паллах, пыратăп! — Вăл тути хĕррине çыртса, темиçе самантлăха шухăша кайса ларчĕ. — Маттур, Митька, аçунах хывнă эс...

— Пĕччен мар эпĕ, манăн юлташ пур. Эпир иксĕмĕ тупса килтĕмĕр ăна. Самолёт çинчен сикрĕ те...

— Юлташĕ кам?

— Аякран килнĕскер, ман пекех тăлăх... Вăл та пирĕн патра халь.

— Ну, тĕлĕнтертĕн эс мана!

— Эппин — пыр. Иккĕшне те куратăн вара.

— Ним те ан шарла. Тĕттĕмлентĕр кăна — çитетĕп.

Митька тухса кайрĕ. Иван Степанч сӳннĕ чĕлĕмне вăс касах чĕртрĕ те, пӳртре каллĕ-маллĕ утма тытăнчĕ. Кутаранччен хăй ăшĕнче пусарса пурăннă шухăшсем сасартăках мăн пĕвене тагса кайнă çурхи шыв пек кĕрлеме

тапратрĕç. Туйрĕ вăл: тимĕрçĕ патне ăна ахаль чĕнмесçĕ, унта такам пысăк ĕç пуçласшăн...

Урамра çын сăнĕ палăрми пулсанах, Иван Степанч хăй килĕнчен тухса, пахчасем урлă Митькăсен килĕ еннелле кушак пек йăпшăнса утрĕ.

---

Пĕлĕтре çăлтăрсем ялкăшма пуçличченех калаçва ларчĕç Муратпала Груша.

Мурат ĕнтĕ калама çук савăнчĕ. Унăн тусĕсем пурте сывă иккен, ку хушăра темĕн тĕрлĕ чаплă ĕçсем туса тултарнă, Мускавпа çыхăннă... Вĕсем, çитменне, кунтан инçетре те мар тăнă, часах вĕсемпе пуринпе те тĕл пулма май килнĕ!

— Халь Митькăсем патне кайăпăр, — терĕ Мурат, тулта тĕттĕмленсе çитме пуçласан. — Унта мана тахçанах ...ĕтеççĕ ĕнтĕ...

— Каяр эппин, калаçмалли вăхăчĕ кайран та тупăнĕ, — ...есе килĕшрĕ унпа Груша. — Ну, тăр, партизан-развед...ик! — мĕшлетсе выртакан качакине урипе тĕртрĕ вăл.

Мурат кулса илчĕ:

— Ну, тупнă та вара... Фокус!

— Мĕн тăвассу пур, пытанмалли май тупас ...улать ...ĕт, — ответ пачĕ Груша. — Кирлĕ пулсан — упа та çа...ăтса çӳрĕн!

... Вĕсем Митькăсем патне çитиччен чылай малтанах ...нта Иван Степанч Додонов пынă пулнă. Ачасем хăйĕн ...атне „шаичăклă çынсене" илсе пырасса кĕтсе ларнă ...ётчик унпа паллашса самаях калаçма ĕлкĕрчĕ. Вăл ăна ...айĕн плавне каласа пачĕ: ялта юлнă вăйпитти çынсене ...ухас та, летучий отряд пекки туса, çак кунсенчех ни...ççене çунтарма тытăнас... Иван Степанч малтанах лёт...икăн сăмахĕсене ним чĕнмесĕр итлерĕ (вăл хăй татăклă ...ут тумасăр нихçан та калаçман), каярахпа вара, Мали...ин хăйĕн планне питех те тĕплĕн шухăшласа тунине ...ра, чĕринче мĕн пуррине темиçе сăмахпах пĕлтерчĕ:

— Эс каланисем — тахçанах пирĕн пуçра çӳреççĕ вĕсем, тăванăм. Ак çакăнта... — вăл хăйĕн кăкри çине кăтартрĕ, — вĕресех тăрать...

— Мĕн тытса чарать эппин сире? — ыйтрĕ лётчик.

— Ертсе пыракан тупăнмарĕ. Пĕркунне пурччĕ — вĕсене пере пере вĕлерчеç...

— Халь ун пирки тытăнса тăмăпăр. Çакна çеç каласа пар эс мана: çынсене пухаятăн-и? Вунпилĕк, çирĕм...

— Ытларах та тупăпăр.

— Питĕ аван! Халь ĕнтĕ хĕçпăшал тупмалли май шырас пулать.

Иван Степанч тарăнăн сывласа илчĕ.

— Вăл пур-ха пирĕн, ăна тахçанах хатĕрлесе хунă. Çавăн пирки пĕтрĕç те ĕнтĕ пирĕн ачасем.

— Апла пулсан, çынсемпе халех калаçма тытăн эсĕ. Кампа калаçсан усă пулассине хăвах чухлатăн ĕнтĕ...

— Ăна пĕлетĕп-ха.

— Кĕçĕрех кай вĕсем патне.

— Аялта, пӳрт умĕнче, такам ерипен кăштăртатни илтĕнчĕ. Лётчикпа Иван Степанч пĕр вăхăтлăха шăпăртах пулчĕç. Кĕçех пусма тăрăх хăпаракан Мурат хуллен сас пачĕ.

— Эс ăçта çухалтăн кĕçĕр? — кăмăлсăр пулнă пекрех ыйтрĕ Малинин. — Кĕтсе ывăнтăм сана... Мĕн пулчĕ?

— Ним те пулман, Серёжа пичче, — пăшăлтатма тытăнчĕ ăна хирĕç Мурат, — эп сан патна питĕ хаклă хăна илсе килтĕм...

— Кам тата вăл?

— Астăватăн пуль, эп сана темиçе хут та хамăр отрядри Груша ятлă хĕр çинчен каланăччĕ...

— Ну, ну, астăватăп.

— Çавă килчĕ вĕт!

— Епле? Эс вĕсене çухатнăччĕ-çке? — тĕлĕнчĕ Малинин. — Аçтан килсе лекнĕ вăл кунта?

Мурат ун çывăхнерех пычĕ те, пĕтĕм историе — мал-

тан пуçласах — каласа пама тытăнчĕ, анчах летчик нумаях итлемерĕ ăна, пĕр-ик минутранах чарчĕ.

— Хăйне илсе кил-ха кунта, ĕç хăвăртрах пулĕ.

— Çиччас! — килĕшрĕ Мурат. Вăл пусма тăрăх вăшт кăна анса кайса, темиçе самантранах Грушăпа пĕрле таврăнчĕ.

— Акă вăл, Серёжа пиччe!..

Лётчик тĕттĕм çĕртех Грушăн аллине тытса чăмăртарĕ.

— Мана—Сергей, теççĕ. Мурат сирĕн çинчен час-часах асăнатчĕ те, çав майпа сире эпĕ тахçанах пĕлетĕп. Анчах курса паллашма тӳр килессе ниепле те шутламан вара... Эсир питех те кирлĕ вăхăтра килсе тухрăр пирĕн пата.

— Аван апла пулсан, — терĕ ăна хирĕç Груша.

— Мурат пирĕн пурнăç çинчен каларĕ пуль сире...

— Кăштах каларĕ.

— Эпир те ĕçе тытăнас, тетпĕр. Вăйсем пухасшăн. Акă Иван Степанч — кунти çын — хăйсен ялĕнчи колхозниксенчен хăшне-пĕрне ура çине тăратма сăмах пачĕ. Тен, халĕ сирĕнпе çыхăнма май килĕ...

— Паллах, çыхăнас пулать.

— Ман шутпа, пире валли халь питĕ аван самант килсе тухрĕ. Ку ялта вĕт нимĕççен штабĕ вырнаçрĕ.

... Тĕттĕм урамсем тăрăх нимĕççен патрулĕсем çӳрерĕç, инçетре таçти ялсем çунни курăнчĕ, тахăш тĕлте çынсем кăшкăрашрĕç, темле çинçе саслă йытă вĕрчĕ — чĕнмен хăнасене килне кӳртесшĕн мар пулчĕ пулмалла. Унтан анат енчен каллех моторсен шавĕ илтĕнчĕ — яла çатах тулли машинăсем пырса кĕчĕç пулас. Вĕсем хыççăн темиçе çăмăл оруди, заряд ещĕкĕсем сиккелесе чăнкăртатса пычĕç.

Яла нимĕççем тулнăçемĕн тулчĕç.

Çав вăхăтра тимĕрçĕ пӳрчĕн маччи çинче пилĕк совет çынни — пилĕк патриот — таччăн пĕр çĕре пухăнса ларса, усал тăшмансене епле майпа вирлĕн пырса çапасси çинчен канашласа ларчĕç. Вĕсене пĕр ĕмĕт, пĕр туртăм,

хӗрӳллӗ чӗрисенче хӗмленсе тăракан курайманлăх пĕтĕçтерчӗ...

Кашни хăйĕн шухăшне каласа пачӗ. Кашниех нимӗçсене хăш енчен ытларах сиен кӳмелли, ялтан çапса кăлармалли майсене сӗнчӗ. Пӗрин сӗнӳне те ахаль ирттерсе ямарӗç вӗсем — пур енчен те сӳтсе-яврӗç. Юлашкинчен вара Малинин пурин шухăшӗсене те пӗтӗçтерчӗ:

— Çапла тăвăпăр эппин, юлташсем... Иван Степанч халех хăйӗн çыннисене хатӗрлет. Кĕçӗр май килмесен те — ыранхи кун пурне те хӗçпăшал валеççе парать. Грушăпа Мурат хăйсен отрядне каяççӗ... Отрядри хыпарсене эпир ыран каçаллапа пӗлетпӗр. Митька кунӗпех ялта мĕн пулса пынисене сăнать. Каç пулсассăнах эпир хамăр хатӗрленсе çитни çинчен систеретпӗр. Шăп çурçӗрте, е кăшт каярах, пирӗн налёт пуçланать. Пур енчен те пӗр харăс, сигнал тăрăх...

Çапла-и?

— Çапла тăвасчӗ, — терӗ те Иван Степанч, кайма хатӗрленсе тăчӗ.

— Питӗ лайăх план, — килӗшрӗ Груша та. — Часрах отряда çитсе пӗлтересчӗ ман ăна. Унта та хатӗрленме вăхăт кирлӗ.

— Кайăр, çулусем такăр пулччӗр, — ыр сунчӗ вӗсене лётчик.

Иван Степанч, Груша, Мурат — кашниех унăн аллине тыта-тыта чăмăртарӗç те, мачча çинчен шăппăн кăна анса, лупас айӗнчи хăма шăтăкӗ витӗр анкартинелле тухрӗç.

Тулта кăвак çутă та çапма пуçланă мӗн. Çырмаран çăра пăс пек шурă тӗтре хăпарнă, пӗлӗтри çăлтăрсем пăч та пач сӳнкеленӗ...

— Çутăласси нумай юлман, васкас пулать, — терӗ Иван Степанч шăппăн, йӗри-тавралла пăхса илсе. — Старӗн тата çулӗ те çывăхах мар...

Вӗсем ик еннелле уйрăлса кайрӗç.

Ялтан тухсан Муратпа Груша пĕр çур çухрăм пек çулсăр-мĕнсĕрех утса пычĕç те, тарăнах мар çырма хĕррине çитсе тăчĕç.

— Кунта ытла чăнкă, сĕвекрех вырăн тупар-ха, — терĕ Мурат, тĕттĕм çырма тĕпнелле пăхса. Чикеленсе кайсан, ĕнсене те хуçма пулать...

Вĕсем тата анатарах утрĕç.

Хирте пĕр сас-чӳ те илтенмерĕ, ура айĕнчи сывлăмлă курăк çеç чăшăртатса пычĕ.

— Çакăнтан пăрăнатпăр пуль, — терĕ Груша шăппăн, çырманалла пĕр лупашка аннине асăрхаса. Анчах кун хыççăн вĕсем ик утăм та малалла ярса пусаймарĕç — лупашкаран вĕсен умне икĕ хура кĕлетке тухса тăчĕç.

— Стой, русс!

— Хальт! Рука верх! — хăлхаран йывăр япалапа çапнă пек янраса кайрĕç ют сăмахсем.

Ытла та кĕтмен çĕртен пулчĕ ку. Муратăн сасартăках кӳçĕсем хуралса килчĕç, чĕри тапма чарăннăн туйăнчĕ.

— Тарас!.. Ăçталла тарас? Переççĕ... — çиçĕм пек шухăшсем вĕçсе илчĕç унăн пуçĕнче. Ответ тупиччен — пĕр нимĕçĕ аллисене тăсса ун патнелле ыткăнчĕ, тепри — Груша çинелле. Мурат хăйне хĕртнĕ тимĕрпе çапнă пекех каялла сиксе илчĕ, çав вăхăтрах ун куçне тĕттĕм çырма курăнса кайрĕ... Нимĕçĕн хытă алли вара Муратăн хулпуççине чавса юлма çеç ĕлкĕрчĕ — вăл хăй мĕн тунине лайăххăн чухламасăрах, пур вăйне пухса çыранран аялалла сикрĕ. Ун çывăхĕнчех умлăн-хыçлăн темиçе пуля шăхăрса иртрĕ, унтан пĕр вăтăр-хĕрĕх метр аяккарах граната çурăлса кайрĕ. Мурат çырма тĕпĕнчи хăмăш ăшне лăпчăнчĕ те, хăвăрттăн упаленме тапратрĕ. Унăн чĕркуççийĕсем çемçе пылчăк ăшне путрĕç, хытнă хăмăш аллисене касрĕ, анчах кусем çине пăхса тăма вăхăт пулмарĕ халь.

— Часрах... Часрах, кунтан аяккарах тарса ӳкес... — ыттăн тапрĕ Муратăн чĕри. Кунпа пĕрлех пуçĕнчи тепĕр шухăш самантлăха та уйăрăлма пĕлмерĕ:

— Груша епле-ши? Тытрĕçех-ши вара ăна?..

Чылайччен упаленнĕ хыççăн вăл пуçне çĕклесе, сывламасăр итлерĕ. Анчах темле тăрăшса итлесен те ун хăлхине пĕр сас та пырса кĕмерĕ. Паçăрхи пекех шăп, хăрушла лăпкă, тĕттĕм...

Муратăн тăнлавĕсенчи юн тымарĕсем çурăлса каяс пекех тапса тăчĕç. Чĕри те ниепле те лăпланма пĕлмерĕ.

— Таврăнас пулать... Серёжа пиччене пĕлтерес... Эх, асăрханса çитеймерĕмĕр! Пĕреххут, чăнкă çĕртенех анмаллаччĕ. Халь отряда çитесси те, Игната курасси те пулмарĕ!..— хурлăхлăн ӳкĕнсе илчĕ вăл. Унтан сăрталла чакаланса хăпарчĕ те, çĕрулми йăранĕсем хушшипе каллех Митькăсен ялĕ еннелле упаленме тытăнчĕ.

---

Груша ниепле те хăтăлаймарĕ...

Ансăртран тытнă çынсенчен пĕри çырмана сикнине курсанах, нимĕç салтакĕ ăна тӳрех прикладпа кăкринчен çапса ӳкерчĕ, унтан часрах унăн аллисене каялла пăрма тапратрĕ. Груша мĕнпур вăйне пухса кĕрешрĕ, нимĕçе чышрĕ, çыртрĕ, хĕвĕнчи пистолетне кăларма тăрăшрĕ, анчах Мурата тартнă тепĕр салтакĕ пырса пуçĕнчен атă кĕллипе тапсан — ăнран кайрĕ те, текех хирĕç тăраймарĕ вара.

Унăн аллисене чĕн пиçиххисемпе каялла туртса çыхса лартрĕç.

— Встайт! — винтовкипе çурăмран чышрĕ ăна пĕр салтакĕ.

— Пошел, руссиш зобак! Форверст марш! *)

Аллисенчен çыхса лартнă пирки, Груша ниепле те тăраймарĕ. Вара нимĕçсем ăна иккĕн ик енчен тытса, вăйпа туртса тăратрĕç.

— Мах шнель! Ходи быстро! **)

---

*) Шагом марш!
**) Васка часрах! Хăвăртрах ут!

Грушăн пуçĕ çаврăнма тытăнчĕ, вăл тайăнса кайса чутах ӳкетчĕ, анчах нимĕççем ăна малалла тĕртсе ячĕç.

«Пĕтрĕм пулас... Тинех кусенчен вĕçернес çук эпĕ... Шел,—чĕри пăчăртанса илчĕ Грушăн.—Допрос тума илсе каяççĕ ĕнтĕ. Анчах пурĕ-пĕр нимĕн те пĕлеес çук вĕсем манран, асаплантарни çеç пулать...»

Хыçалтан такам хуса çитесрен хăранă пекех. нимĕççем ăна питĕ хăвăрт уттарчĕç. Çине-çинех çурăмĕнчен прикладсемпе тĕке-тĕке илчĕç, хăйсен хушшинче тем çинчен хаяррăн калаçса пычĕç...

Хĕвелтухăçĕ майĕпе хĕрелме пуçларĕ, улăхран ирхи нӳрлĕх туртăнчĕ, анчах Грушăна пăчăх пулчĕ. Ял патне çитиччен унăн çанçурăмĕ тарласа кайрĕ, хăйне сывлама пăчă пек, майĕпен такам пăвса пынă пек туйăнчĕ. Урампа хăпарнă чух вăл пур еннелле те тинкерсе пăхса пычĕ, анчах нимĕç часовойĕсемсĕр пуçне никам та курăнмарĕ...

Ана ялсовет çуртне илсе кӳртрĕç. Пĕр салтакĕ алăк патĕнче сыхлама юлчĕ, тепри коридорăн леш вĕçĕнчи алăкран кайса шаккарĕ.

Пӳлĕмре—алăк хыçĕнче—темскер кĕмсĕртетсе анчĕ. Сĕтел хушшинче ларакан çын сасартăк сиксе тăрса, йĕнчи пуканне тӳнтерсе ячĕ курăнать.

Алăкран, кăшт тăрсан, шала кĕнĕ салтакăн пуçĕ курăнчĕ. Вăл Грушăна сыхласа тăраканнине кăчăк туртрĕ:

— Комм гер! Ляуф!..*)

Хуралçă Грушăна хулпуççинчен тытрĕ, анчах Грушан аллине йĕрĕнчĕклĕн сирсе пăрахрĕ те, пĕтĕм кăкрипе сывласа илсе, коридор тăрăх çирĕппĕн утса кайрĕ...

---

Обер-лейтенант Эрих Клебер юлашки кунсенче питĕ кăрăхнă пулнă. 1939-мĕш çултанпа вăл Европăри нумай çĕршывсем тăрăх турист пек кăна çӳренĕ: Норвеги, Франци, Бельги, Голланди, Греци çитнĕ. Пур

*) Кил кунта! Чупшне!..

çĕрте те çăмăллăнах çĕнтерсе пыма хăнăхни унăн пуçне çаварсах янă, вăл,—выльăх кăшманĕ пек тăрăхла пуçлă-скер, ытти нумай офицерсем пекех—нимĕç çарне никам та çĕнтерме пултараймасть, тесе каппайнă. Совет Союзĕ çине килсе тапăнна чух, хăйсен „фюрерĕ“ хыççăн—пĕтĕм вырăс çĕрне темиçе эрне хушшинчех тытса илетпĕр, тесе кăшкăрнă. Чăнласах, ĕненсех кăшкăрнă вăл... Вăрçăн малтанхи кунĕсенче Совет çĕре çинелле чылаях кĕме май пулни ун кăмăлне тата пушшех çĕклентерсе янă. Вăл кашни ик-виçĕ кунрах Гамбург хулинчи хăрах куçлă лавкаçăн тип пулă пек хĕрĕ патне мухтанчăк çырусем ярса тăнă.

«Ик эрнерен эпир Мускавра пулатпăр...»

«Наполеон тăвайманнине эпир тăватпăр!»

«Пирĕн пĕр вилла Мускавра, тепĕр вилла Атăл çинче, виççĕмĕшĕ Крымра пулать, çакна шансах тăр, чунăмçăм Эльза»,—тесе çырнă вăл.

Унтан—хăйĕн савнийĕ валли умлăн-хыçлăн посылкăсем „организацилеме“ тытăннă. Ниме те тиркесе тăман вăрă хурах йăлисене йышăнса, вăл алла мĕн лекнĕ—çавна тултарнă: пальтосем, пушмаксем, кĕпесем, кăкăр çакки сем, кĕмĕл кашăксем, ача ĕмкĕчисем, эрех черккисем-пĕтĕмпех хута кайнă. Вунă посылка ытла ярса панă вăл çавăн пек.

Анчах совет боецĕсем калама çук хытă хирĕç тăнă, вĕсем хирĕç тăрасси кунран кунах вăйланнă. Нимĕçсем шĕн малалла каймалли майсем пĕтсе ларнă. Эрих Кле берăн роти çапăçусенче сайралса юлнă пирки, ăна виç тăватă хутчен пополнени панă, анчах вăл та ик-виç кун тах пĕтнĕ.

«...Ивансем урса кайрĕç пулмалла,—тесе çырнă вара обер лейтенант хăйĕн савнийĕ патне.—Паян вырăссен артил лерийĕ сакăр сехет хушши пĕр чарăнмасăр печĕ. Тавралă çĕмĕрĕлмен пĕр çĕр лаптăкĕ те юлмарĕ... Тăватă унтер офицер, хĕрĕх çичĕ салтак пĕтрĕç манăн паян...»

Ĕçсем кунран кунах начарланса пынă. Совет войски

сем ир те, каç та, кăнтăрла та канăç паман нимĕççене.
«Пурнăç мар ку, тамăк!—тесе çырнĕ Клебер пĕринче, питĕ вăйлă бомбĕшка хыççăн.—Ним те ăнланмастăп, пуçа тăм тултарнăн туйăнать. Вырăссем пире пачах та сывлăш çавăрма памаççĕ. Иккĕмĕш кун ĕнтĕ продовольстви çук, эпир выçă. Пирĕн пата килекен обоза партизансем тапăнса туртса илнĕ, тет. Хăрушă сăмах вăл—партизан! Сисĕнет—салтаксем халь киле каясси çинчен çеç шухăшлаççĕ... Ĕнер иккĕшне çар судне патăм—юри хăйсене суранланă. Сана текех курăп-ши эпĕ, чунăмçăм Эльза?»
Совет полкĕсем хĕссе пынипе вĕсен участокĕнче талкишĕпех отступлени пуçланса кайнă. Клеберсен батальонне те хĕвеланăçнерех куçса тăма хушнă. Вĕсен пĕрмай вăрманлă, шурлăхлă вырăнсемпе пымалла пулнă. Кунта вара фронтринчен те кансĕртерех килнĕ вĕсене: партизансем пĕр канăç та паман... Е сасартăк налёт туса харăсах аллă-утмăл çын чакараççĕ, е обоза татса юлаççĕ, е дозорта тăракансене сĕтĕрсе каяççĕ! Хăйсене—курса юлма та çук...
«Пĕрне те пулин тытасчĕ! Пĕрне кăна!.. Кăтартăттăм вара эп хам мĕн тума пултарнине... Ĕмĕр асăнĕччĕç!» шăлне çыртса чышкисене чăмăртанă Клебер, партизансем çинчен асăнсанах.
Кĕçĕр секретра пулнă салтаксем совет партизанне тытса килни çинчен пĕлтерсен—тăруках пĕтĕм кĕлеткипе чĕтреме ернĕ вăл.
Груша пӳлĕме пырса кĕрсен, темиçе самант хушши вăл нимĕн те калаçаймарĕ, Грушăна çисе яма хатĕрленнĕ пек пăхрĕ çеç. Груша та ун çине куç харши айĕпе сиввĕн, епле пулсан та татăклă ответ пама хатĕрленсе пăхрĕ.
— Русс?—хыттăн ыйтрĕ Клебер, тăрсан-тăрсан. Тĕрĕссипе, вăл пĕр хушă тĕлĕнсе тăчĕ: партизана илсе килтĕмĕр, тенине илтсен—вăл хăй ларакан пӳлĕме халех калама çук хăрушă, çӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, кĕреçе анлăш хура сухаллă, урлă та пирлĕ пулемет лентисем, гранатăсем, револьверсем çакса тултарнă хаяр сăнлă

этем кĕрсе тăрасса кĕтнĕччĕ. Ун вырăнне кунти ялсенче кашни кунах тĕл пулакан хресчен хĕрне курчĕ вăл. Ним хăрушши те çук ун çумĕнче... Неушлĕ çак партизан вара?

Тĕплĕрех тĕпчесе пĕлме шут турĕ вăл. А пĕрте-пĕр, ку чакăр куçлă хĕрача чăнах та партизан пулсан, вара— мĕн тумаллине пĕлĕп, терĕ.

— Русс?—татах ыйтрĕ Клебер.

— Вырăс,—терĕ Груша, куçĕсем çине анма пуçланă çӳçĕсене тӳрлетсе.

Клебер алăк патĕнчи салтака тем хӳшрĕ те, лешĕ хăвăрт чупса тухса кайрĕ.

— Партизан?—ыйтрĕ нимĕç.

Груша пуçне пăркаларĕ.

— Çук.

— Кольхозник? Коммунист? Комсомоль?

— Çук...

Обер-лейтенант васкасах сигара чĕртсе ячĕ те, çăра тĕтĕме çине-çинех çăтма тытăнчĕ. Хăйĕн куçĕсем Грушăна çаплах çирĕç, йывăррăн сывланипе унăн сăмса çунаттисем сиккелерĕç, хăлхисем хĕрелсе кайрĕç...

Груша инçетри тăван ялĕнче юлнă ватă амăшĕпе йăмăкне аса илчĕ... Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем çак самантра? Туяççĕ-ши мĕн те пулин? Ашшĕ ăна хытă сыхланса çӳреме хушнăччĕ—май килмерĕ... Текех тавăрнасса кĕтеççĕ пулĕ-ха... Кĕтсе илеймĕç çав ĕнтĕ. Вăхăт нумаях та иртмĕ—нимĕçсене хăваласа ярĕç, сывă юлнисем пурте тăван килĕсене таврăнса ĕçе тытăнĕç, анчах Грушăна кĕтни—кăлăхах пулĕ. Çапах та, палланă çынсем пурте ыр сăмахпа асăнĕç-ха, çамрăк пуçне халăх телейĕшĕн хучĕ, тейĕç...

Майĕпе Грушăн шухăшĕсем отрядри юлташĕсем çине куçрĕç.

— Мурат пĕлтерчĕ-ши вĕсене, çук-ши? Ытла та ним калама ĕлкĕреймерĕм. Хăй чухласа илсен кăна ĕнтĕ...

..Алăкран халь çеç таçга тухса чупнă салтакпа пысăк куçлăхлă унтер-офицер килсе кĕчĕç. Обер-лейтенант ăна хăйĕн патнелле чĕнсе темскер каларĕ. Ку—тăлмачă пулнă иккен, ăна юриех Грушăна допрос тума чĕнсе пынă.

Тăлмачă куçлăхне хывса шăлчĕ, унтан кайлех тăхăнса Грушă çине чалăшшăн пăхрĕ те, тĕпчеме тытăнчĕ.

— Кала-ха, хитре хĕр, мĕн ятлă çав эс?—терĕ вăл, вырăс сăмахĕсене кутăн-пуçăн çавăркаласа.

Мĕн тума кирлĕ вăл сире?—тӳрех татса хучĕ Груша.

— Ыйтнине калас пулать, унсăрăн эпир урăх майпа калаçтаратпăр,—тутине пăркаласа илчĕ тăлмач.

— Ăна эпĕ эсир каламасăр та пĕлетĕп.

— Асту çав. Мĕн ятла?

— Маруська.

— Аван ят... Миçе çулта?

— Пĕлместĕп.

— Çирĕме çитнĕ-и?

— Ну, çитнĕ пултăр.

— Хăш ял çынни эсĕ?

— Инçетрисем, кунтан курăнмасть.

— Партизана хăçан кайнă?

— Ниçта та кайман эп. Партизан та, никам та мар. Ӑана ахалех тытса килчĕç кунта. Эп тăвансем патне айма тухнăччĕ... Çĕрле çул çухатрăм, йăнăш пулчĕ.

Тăлмачă ун сăмахĕсене обер-лейтенанта куçарса пачĕ. Iешĕ ун çине хаяррăн пăхрĕ те, чышкипе сĕтел çине ıаккаса илчĕ.

— Найн, найн!..*) — Çавăнтах салтака приказ пачĕ. алтак вара ним каламасăрах Грушăна хăй патнелле арт! пăрса тăратрĕ те—малтан тутрине сӳсе илчĕ, унтан инжакне хывтарчĕ, кĕпине вĕçертме тытăнчĕ...

— Ан тив!—салтака чавсипе аяккалла сирчĕ Груша. ăл хăйне ухтарма тытăннине ăнланчĕ. Ку ăна пĕтемпех ĕтерсе хума пултарнă, мĕншĕн тесен унăн хĕвĕнче пис-

*) Çук, çук!.,

толет пулнӑ. Вӑл ӑна паҫӑр, ҫырма хӗрринче кӗрешнӗ чух, ниепле те кӑларса пӑрахма ӗлкӗреймерӗ.

Груша салтака пӗррех ҫупса ячӗ.

— Ан ҫыпҫӑн, ирсӗр!

Клеберпа тӑлмачӑ пӗр харӑс сиксе тӑчӗҫ.

— Молчайт! Зобак!—темле ҫинҫен ҫухӑрса ячӗ Клебер. Унччен те пулмарӗ—Груша патне хӑй ыткӑнса пырса, салтакпа пӗрле ун тумне ним хӗрхенмесӗр турткаласа ҫурма, сӗвсе пӑрахма тапратрӗ. Урнӑ йытӑ пекех пулса кайрӗ вӑл.

— Кӑптӑрт!—тухса ӳкрӗ Грушӑ хӗвӗнчен пистолет.

— О-оо!—куҫлӑхне йӑпӑр-япӑр хывса пӑхрӗ тӗлӗнсе хытнӑ тӑлмачӑ.—Халь пӗтӗмпех паллӑ!

— Партизан!

— Кала, ӑҫта сирӗн отряд?

Груша нимӗн те чӗнмерӗ, хӑйне халех асаплантарма тытӑнасса кӗтсе шӑлӗсене хытӑрах ҫыртса лартрӗ ҫеҫ.

— Кала тӳррипе, ӑҫта сирӗн отряд?

Груша чӗнмерӗ.

Тӑлмачӑпа обер-лейтенант пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ.

— Игле эсӗ,—терӗ кун хыҫҫӑн тӑлмачӑ, юриех йӑваш пек пулма тӑрӑшса.—Хӗрхен хӑвӑн пурнӑҫна! Ҫӗр ҫинче пурӑнасах тетӗн пулсан—эпир ыйтнисене пӗтӗмпех калас пар. Ҫӑлӑнмалли май—пӗр ҫав кӑна санӑн. Пурин ҫин чен те йӗркипе каласа парсан—халех кӑларса яратпӑр хуть те ӑҫта кай. Анчах калаҫмасӑр тӑрсан... хӑвах пӗ летӗн... Ну?

Груша тутисене те хускатмарӗ.

— Ну?—ун куҫӗнчен шӑтарасла пӑхрӗ тӑлмачӑ.—Кал йӗркипе. Халӗ ӗнтӗ тунса тӑмалли ҫук, эпир эс партиза пулнине тӗп-тӗрӗс пӗлетпӗр. Сана таҫта ӗҫ хушса ян пулнӑ, анчах эс пирӗн салтаксен аллине лекнӗ. Сан пӗрле юлташ пулнӑ, вӑл тарнӑ. Ҫапла вӗт?

— Ҫапла пулнӑ пултӑр...

— Халь кала ӗнтӗ йӗркипе: ӑҫта тӑрать сирӗн отря Миҫе ҫын унта? Кам сирӗн командир? Мӗнле хӗҫпӑша

пур сирӗн! Ҫак сведенисене парсан, каллех калатӑп, ҫак самантрах кӑларса яратпӑр. Ну?..

Сӑмахпа илӗртни ҫитмест—тӑлмачӑ сӗтел хушшинчен тухса Грушӑпа юнашар тӑчӗ те, аллине ун хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ. Хайӗн йытӑлла куҫӗсем чарӑна пӗлмесӗр сиккелерӗҫ.

— Вӑхӑта ан тӑс, кала часрах... Хӑвӑн пурнӑҫна ҫӑлатӑн вӗт. Эс халӗ ҫамрӑк-ха, санӑн пурӑнас пулать...—ачашланҫи турӗ вӑл.—Итле пире.

Груша тӳсӗмлӗ пулса ҫитрӗ. Вӑл нимӗҫӗн аллине йӗрӗнчӗклӗн илсе пӑрахрӗ те, питӗнчен лач! сурчӗ...

— Ан ҫыпӑҫӑр! Пурӗпӗр пӗр сӑмах та илтейместӗр манран! Вӗлерӗр, ҫакӑр, ҫунтарса ярӑр—пурӗпӗр! Мана эсир нимӗнпе те хӑратас ҫук!..

Нимӗҫсем иккӗшӗ те юпа пек хытса тӑчӗҫ. Анчах ку пӗр самантлӑха ҫеҫ пулчӗ. Тепӗр самантӗнчех обер-лейтенант ӑна пистолет аврипе янах шӑмминчен ҫапса ӳкерчӗ. Унтан вара, чӑннипех урса кайса, ӑна вӑл тапрӗ, чышрӗ, ҫӳҫӗнчен ҫӗкле-ҫӗкле пуҫӗпе урайне ҫапрӗ, таптарӗ...
— Татах! Лайӑхрах! Хытӑрах!—мӗкӗрчӗ тӑлмачӑ. Груша ӗнтӗ вӗҫне ҫитичченех тӳсес, терӗ пулмалла. Вӑл пӗр йынӑшнӑ сас та кӑлармарӗ, хӗрхенме те ыйтмарӗ, чи хӗнлӗ самантсенче шӑлӗсене шӑтӑртаттарчӗ ҫеҫ. Нимрен ытла, вӑл хӑйӗн пуҫне, тата чӗре таврашне сыхлама тӑрӑшрӗ.
Хашкакан пулса ҫитсен, офицер сӗтел пуҫӗнчи пукан ҫине йывӑррӑн пырса ларчӗ. Салтака пуҫӗпе сулчӗ те, лешӗ пачах анраса ҫите пуҫланӑ Грушӑна вӑйпах тургаласа ура ҫине тӑратрӗ. Укес мар тесе, Груша стена ҫумне тайӑнчӗ, нимӗҫсем ҫине урӑх пачах та пӑхмарӗ. Унӑн тӑнлавӗсем тӑрӑх ҫӑра юн тумламӗсем сӑрхӑнса анчӗҫ, пуҫӗ ҫавтери шавларӗ, шӑмӑ сыпписем сӑрлатса сурса тӑчӗҫ...
— Халь калаҫатӑн-и? Пӑртак ӑс кӗчӗ-и?—сӑмахӗсене шӑл витӗр пӑчӑртаса кӑларчӗ тӑлмачӑ.

Груша çамки тăрăх куçĕсем çинелле юхса анакан юна шăлса илчĕ те, пуçне ерипен кăна пăркаларĕ.

— Пĕр сăмах та каламастăп...

— Курăпăр!

— Куратăр ĕнтĕ...

— Молчать! Халех кала, сысна ăратти: ăçта сирĕн отряд? Миçе çын унта?

Груша пĕр хушă шухăшласа тăчĕ те, сулăна-сулăнах сĕтел патне пырса тăчĕ. Куçĕсем темле уйрăммах хыттăн ялкăшрĕç унăн...

— Питех пĕлес килет-и?—ыйтрĕ вăл хуллен.—Итле эппин: пирĕн отряд—пур çĕрте те вăл... Сирĕн алла лекнĕ ялсенче миçе çын пур—çавсем пурте партизансем! Шутласа кăларăр!

— Санпа кулса калаçмаççĕ!—чышкипе сĕтел çине çапрĕ тăлмачă.—Эс тĕрĕсне кала! Халех кала!

— Урăх каламалли нимĕн те çук,—терĕ Груша.—Пĕр сăмах та çук, илтрĕн-и?

Тăлмачă кăна обер-лейтенанта куçарса пачĕ, вара çав самантрах, Клебер хушнă тăрăх, салтак Грушăн аллисене каялла пăрса лартрĕ. Ыратнипе Груша куклентсех ларчĕ, анчах пĕр сăмах та каламарĕ.

— Ăçта?!—кăшкăрчĕ тăлмачă.—Ăçта сирĕн отряд?

Салтак унăн аллине татах пăрса, мăкăлтас патнех çитерчĕ. Груша пурĕпĕр шарламарĕ.

Кун хыççăн нимĕççем ăна виççĕн тытса асаплантарма тапратрĕç. Малтан ал пӳрнисене алăк хушшине хĕстерчĕç... Ытла та тӳсме çуккипе Груша ӳкме тапратсан, ăна çӳçĕнчен туртса тăратрĕç. Унтан пĕр хушă сывлăш çавăрса илме пачĕç те, каллех отряд çинчен ыйтрĕç. Паçăрхи пекех ниепле ответ та илеймесен, Грушăн кăкрисене йĕплеме пуçларĕç...

Груша тăнран кайрĕ.

---

Яла Мурат хĕвел тухнă вăхăтра тин çитрĕ. Нумаях та пулмасть çыварса кайнă лётчика вăл хулпуççинчен

хуллен кӑна тӗртсе ваӑрагрӗ. Тӗттӗм ҫӗрте лешӗ ӑна тӑруках пэллаймарӗ пулас, часрах пуҫ айӗнчи пистолетне ҫавӑрса тытрӗ, анчах палласа илсен—каҫама та ҫук тӗлӗнчӗ.

— Мӗн пулнӑ? Ма килтӗн?—темскерле ырӑ мар ӗҫ пулнине сиссе ыйтрӗ вӑл.

— Анмарӗ...—хаштах сывласа ячӗ Мурат.

Малинин ӑна хулпуҫҫинчен пӑчӑртаса тытрӗ.

— Мӗнле апла? Груша ӑҫта?

— Лекрӗ пулмалла, эп ӑна кураймарӑм,—терӗ те Мурат салхуллӑн, ӗҫ мӗнле пулни ҫинчен каласа пачӗ.

— Кӗтсех тӑрас пулать ӗнтӗ—халӗ вӗсем хуралсене темиҫе хут вӑйлатаҫҫӗ, килрен киле ухтарма тапратаҫҫӗ. Ялти ҫынсене хӗҫпӑшал парса организацилеме хӗн пулать. Игнат Дубовӑн отрячӗ пирӗн ҫинчен нимӗн те пӗлмест, унпа ҫыхӑну ҫук... Мӗн мурӗ тӑвас пулать?—пӑлханса кайрӗ Малинин.

— Калама та пӗлмелли ҫук ҫав,—килӗшрӗ Мурат.—Ытла та кӗтмен ҫӗртен пулса тухрӗ ку...

— Ну—юрӗ, кӑшт кӗтер-ха, ӗҫсем малалла мӗнле пулса пырӗҫ,—терӗ пӑртакках ларсан Малинин.—Кам пӗлет, тен Груша хӑех хӑтӑлнӑ?

Ҫапах та, вӑл Муратпа Митькӑна урама сӑнаса ҫӳреме кӑларса ячӗ. Ачасем нумай та ҫӳремерӗҫ—хашкаса чупса таврӑнчӗҫ. Вӗсен сӑнӗ ҫине пӑхсанах, лётчик ялта халиччен хи пек мар хӑрушӑ событисем пуҫланнине ӑнланчӗ.

— Ялсовет умӗнче фашистсем ҫын ҫакмалли тӑваҫҫӗ... Виселица,—тесе пӗлтерчӗ Мурат. Унӑн кӑвакарса кайнӑ тутисем чӗтресе тӑчӗҫ.—Ик юпине лартнӑ, халь урлӑ каштине хураҫҫӗ...

— Чорт пӗлет!—Малинин та сӑнран палӑрмаллах улшӑнчӗ. Ун пуҫӗнчи шухӑшсем тата хытӑрах ӗҫлеме тапратрӗҫ.

— Мӗн тӑвас?!—ҫак ыйту чалӑш ҫӳлӗш саспаллисемпе ҫырнӑ пек тухса тӑчӗ ун умне. Ответне халь пит те кӑвӑрт тупмалла пулнӑ, пӗр минут та кӗтсе тӑма юра-

ман. Халех татăклă ĕçсем тумасан—калама çук пысăк хурлăх пулма пултарнă!

— Дубов отрячĕ хăш тĕлте тăнине пĕлетĕн-и эс?— ыйтрĕ Малинин тепĕр темиçе самантран, Мурата куçĕнчен пăхса.—Груша каларĕ-и сана? Е?

— Каларĕ...

— Кайсан—ăна тупма пултаратăн-и?

— Тупатăп.

— Апла пулсан—халех вĕçтер. Хуть епле пулсан та, вĕсем кунтарах килме тăрăшчăр, пĕрмай çыхăну тытма май пултăр. Эпир кунта мĕн пулнине сăнаса пырăпăр... Анчах та эс хăвăртрах гавăрăнма тăрăш!

Мурат хăпăл-хапăл пуçтарăнчĕ те, урамалла тухрĕ. Унта та кунта нимĕç салтакĕсем çӳреççĕ. Пĕр хушă иккĕленсе тăчĕ: урампах каяс-ши, анкартисем хыçне тухас-ши? Унта та, кунта та курса чарма пултараççĕ...

— Ара, манăн маскировка пур-иç!—Груша çавăтса килнĕ качакана аса илчĕ Мурат.—Манăн та усă курас унпа!

Мурат килхушшинче çӳрекен качакана çавăтрĕ те, урампа хăюллăнах утрĕ. Нимĕç салтакĕсем ун çине çавăрăнса та пăхмарĕç. Ялсовет тĕлĕнче çеç, Мурат виселица çине пăхма чарăнса тăнă пирки, пĕри алăпа хаяррăн сулчĕ:

— Иртсе кай часрах!

Мурат малалла утрĕ. Уй хапхинчен тухсан, вăл Журавлиха енчен темиçе çын килнине асăрхарĕ. Варринче—чечеклĕ сараппан тăхăннă çара пуçлă хĕрарăм. Ку ăна татах темле ырă мар япала пек туйăнчĕ...

Юриех качакине çул хĕрринчи курăка çитерně пек хапха патĕнче тытăнса тăрса, çулпа утакансем çине куç илмесĕр пăхма тытăнчĕ вăл. Чăнах та—иккĕленни ахаль пулмарĕ мĕн. Журавлиха енчен темиçе нимĕç, вĕсем пе пĕрле ахаль тум тăхăннă тепĕр çын—Акулина Петровнăкинне, Лизăна, тытса килеççĕ. Лизăн çав тери шурăхса,

улшӑнса кайнӑ питне темиҫе ҫӗртен шӑйӑрса пӑрахнӑ, кӑрах хулпуҫҫийӗ ҫинчи сараппанне ҫурса антарнӑ.

— Эх! Ку та лекнӗ!—яштах турӗ Муратӑн чӗри.—Никам та мар, хайхи Бутылкин сутнӑ ӗнтӗ ӑна. Ахаль тумли ҫавӑ пуль-ха. Чӑнах ҫавӑ! йытӑ, сутӑнчӑк!

Ҫынсем хӑйӗнпе танлашсан, Мурат темиҫе самант хушши хӗртнӗ тимӗр ҫинче тӑнӑ пекех тӑчӗ. Лиза ӑна палларӗ. Вӑл картах сиксе илчӗ те, темскер калама тӑчӗ,—анчах сӑмах хушсан Мурата та пӗтерсе хурассине тавҫӑрса илнипе ҫеҫ нимӗн те чӗнмерӗ.

— Чупас!.. Халех отряда ҫитсе пӗлтерес!

Вӑрман хӗррине ҫитсен качакине вӗҫертсе ярса, вӑл ҫырмасемпе шурлӑхсем урлӑ Игнат Дубовӑн отрядне ҫырама чупрӗ.

---

Ниҫта чарӑнса тӑмасӑр, мӗнпур вӑйне пухса чупрӗ вӑл... Ытла хашкакан пулса ҫитсен, сывлӑш ҫавӑрса илме, темиҫе минут хушши утса пычӗ, унтан каллех чупрӗ. Лачкам шыва ӳкрӗ хӑй, кӗпи ҫурӑмӗ ҫумне ҫыпҫӑнса ларчӗ. Хытӑ чупнипе суралӑ ури ыратма пуҫларӗ, анчах та вӑл пурӗпӗр малалла ыткӑнчӗ.

— Пӗтӗмпех манран килет... Эп отряда вӑхӑтра ҫитсе пӗлтермесен—Грушӑпа Лиза иккӗшӗ те пӗтеҫҫӗ, пулаймасть вара вӗсене ҫӑласси...—мӑлатукпа шакканӑ пек янраса пычӗ унӑн пуҫӗнчи шухӑш.

Акӑ ӗнтӗ, вӑл икӗ уй урлӑ каҫса пӗр пысӑк, вӑрманлӑ ырма хӗррине ҫитсе тухрӗ. Ҫырмара—самаях анлӑ шыв юхса выртать, сахалтан та пӗр вунӑ метр пулӗ. Анат енче Мурат ҫак шыв урлӑ каҫмалли кӗпере курчӗ. Кӗперӗн ик вӗҫӗнче те нимӗҫсен часовойӗсем ҫӳреҫҫӗ.

— Тытаҫҫӗ кусем мана,—шухӑшларӗ пӗчӗк партизан.—Вӗсене улталама хӑтланса калаҫса тӑрсан, вӑхӑт тем ериех иртме пултарать!

Вӑл тек шухӑшласа тӑмарӗ, ҫырма хӗррипе тата тӑваларах кайрӗ, унтан, кӗпер курӑнми пулсан, сӑртран

чупса анчӗ те, шыва кӑкӑр таран кӗрсе, вӑрӑм хӑмӑшсем кушшипе ишме тытӑнчӗ...

Сив шывра пулни ун шӑмшакне тем пекех усӑлтарса ячӗ, ҫавӑнпа та халь вӑл татах ҫӑмӑллӑн чупрӗ.

Хӗвел кӑнтӑр тӗлнелле ҫитме пуҫларӗ.

Мурат ансӑр проҫҫек тӑрӑх унталла та кунталла пӑхса пычӗ. Груша каланӑ тӑрӑх, вӗсен отрячӗ таҫта ҫак таврашра тӑмалла пулнӑ.

— Тӗрӗс, тӗрӗс... Акӑ, такам пӑрахса хӑварнӑ хыҫлӑ ҫуна выртать...—сӑнаса утрӗ Мурат.—Акӑ, вӑрман чиккине кӑтартакан юпа... Ҫакӑнтах вӗсем, ҫакӑнтах!

— Стой!—терӗ тахӑшӗ ҫак самантра. Ҫамрӑк йывӑҫ тӗмӗсем хыҫӗнче винтовка затворӗ шакӑлтатса илчӗ.

Мурат гӑпах чарӑнса тӑчӗ. Вӑрмантан вӑл палламан икӗ ҫамрӑк сиксе тухрӗҫ. Картусӗсем ҫинчи хӗрлӗ хӑюсем тӑрӑх, Мурат вӗсем партизансем пулнине тавҫӑрса илсе, пӗртте ҫухалса каймарӗ.

— Кам эс?—ыйтрӗҫ ҫамрӑксем.

— Мурат... Курмастӑр-им?

— Ӑҫта каятӑн?

— Сирӗн пата килтӗм. Дубов отрядне шыратӑп.

— Кам ячӗ сана кунта?

— Никам та яман, хам килтӗм...

— Отряд ҫинчен ӑҫтан пӗлетӗн эппин?

— Каларӗҫ!

Партизансем пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ. «Ку—юри ябӑ шпион мар-ши?»—терӗҫ пулмалла.

— Кӗр-ха кунта!—Мурата вӑрманалла чӗнчӗ пӗри.

Мурат тарӑхма пуҫларӗ. Ара, патне ҫитнӗскере чӑрмантарса тӑраҫҫӗ! Дозорныйсем татах ыйтса тӗпчеме пуҫласан, вӑл тек тӳссе тӑраймарӗ, тӳррӗн каласа хучӗ вӗсене:

— Сирӗнпе юмах ярса тӑма вӑхӑт ҫук манӑн! Ӑҫтине пӗлетӗр пулсан—часрах Игнат патне илсе кайӑр! Ман васкас пулать. Лере нимӗҫсем партизансене ҫакаҫҫӗ, эсир шӑл хӑйратӑр...

— Мĕнле партизансене? Ăçта?—пĕр харăс, тĕлĕнсе ыйтрĕç çамрăксем.

— Грушăна пĕлетĕр-и?—çилĕпе пăхрĕ вĕсем çине Мурат.

— Пĕлетпĕр...

— А ăçта вăл халь?

— Разведкăна кайнăччĕ...

— Кайнăччĕ!—витлесе илчĕ Мурат.—Ăна нимĕçсем тытнă, пĕлетĕр-и? Хальччен çакмарĕç пулсан—пырать-ха, виселицине ирех туса çитернĕччĕ. Ну? Тата мĕн пăхса тăратăр? Ăçта Игнат?—хăтăрса тăкрĕ Мурат.—Атьăр часрах ун патне!

* * *

...Нумайччен йынăшса выртнă Груша тăна кĕрсе куçĕсене уçсанах, обер-лейтенант Клебер ăна каллех хăй патне çавăтса кӳртме хушрĕ.

— Юлашки хут тĕрĕслесе, тĕпчесе пăхар, тен мĕн те пулин калĕ,—терĕ вăл тăлмача.—Паçăрхи пекех кутăнлашса тăрсан, халех çакатпăр вара!

— Ох, вăл совет халăхĕ!—тарăхан сывласа илчĕ тăлмачĕ.—Вилеççĕ, çапах та парăнмаççĕ! Эпир ĕнтĕ миçе çынна çакнашкал тытса асаплантартăмăр пӳль, анчах камран пĕр пӳтлĕ сведени илтĕмĕр?—Никамран та илеймерĕмĕр çав,—килĕшрĕ Клебер. Вал сĕтел çине чавсаланчĕ те, пӳрнисемпе тăнлавĕсене пăчăртарĕ.—Нихçан та парăнтараймастпăр пуль эпир ку ивансене!—терĕ вăл.—Эрех юлнă-и унта пирĕн?

— Пур пăртак...

— Пар кунта, пуç ыратать...

Тăлмачă тепĕр пӳлĕмрен мăн хырăмлă бутылка илсе килсе лартрĕ. Иккĕшĕ те пĕрер бокал ярса ĕçрĕç.

— Виселицине туса пĕтерчĕç-и унта?—ыйтрĕ Клебер.

— Халех пулать, терĕç.

— Пĕтĕм халăха хăваласа пухас, пурте курччăр эпир мĕн тума пултарнине! Сыснасем...

— Юрать.

Клебер бутылкăри юлашки эрехе ĕçрĕ. Çав вăхăтра пÿлĕме икĕ салтак Грушăна ик енчен çавăтса кÿртрĕç. Грушăн пичĕ-куçĕ талккишпех кăвакарса, хуралса çĕрсе ларнă, çăварĕ тавра юн типсе хытнă. Ирхине кăна, çак пÿлĕме пĕрремĕш хут кĕнĕ чух, вăл çутă сăнлă, çаврака питлĕ, çавтери илемлĕ хĕр пулнă,—халь вара ăна çывăх тусĕсем те тăруках палласа илеймен пулĕччĕç,—нимĕç тискерĕсем Грушăна калама та çук ватса, çĕмĕрсе тăкнă. Анчах çапах та унăн сăнне çеç пăсма пултарнă çав вĕсем! Темле хĕнесен те, темле асаплантарсан та унăн чĕринчи çулăма сÿнтерме пултарайман, унăн кăмăлне хуçайман, хуçма та пултарайман. Халь, иккĕмĕш допроса илсе пырсан, обер лейтенантпа тăлмачă каллех темĕн тĕрлĕ те асаплантарса пăхрĕç—усси пулмарĕ...

Юлашкинчен, тăлмачă ăна чÿрече патне сĕтĕрсе пырса урамалла кăтартрĕ:

— Куратăн-и—виселица? Çакатпăр сана халех!—терĕ вăл, кăпăкланнă тутисене чăмласа.—Санăн пĕтĕм пурнăçу та пилĕк минут çеç юлчĕ! Ăнлан çавна! Анчах партизансем çинчен каласа парсан—хăтăлма пултаратăн-ха эс...

Халран кайнă Груша пĕр хушă чÿрече янахĕ çумне тайăнса урамалла пăхса тăчĕ те, хуллен кăна:

— Часрах çакăр,—терĕ...

Кун пек ответ нимĕççене пачах ăнран кăларса ячĕ. Вĕсем çак тыткăна лекнĕ вырăс хĕрĕ, виселицăна курнă хыççăн, тăруках чĕркуçленсе ларса каçару ыйтасса, партизансем çинчен хăй мĕн пĕлнине пĕтĕмпех каласа парасса кĕтнĕччĕ,—анчах ун вырăнне хĕрĕн чĕри тата ытларах çирĕпленнине курчĕç.

— Çитет!—кăшкăрса ячĕ обер-лейтенант, хăйне вĕри шывпа сапнă пек сиксе тăрса.—Çитет! Урăх пĕр ыйту та ан пар ăна! Халăха пухас та—çакас! Халех çакас!..

Сасартăк алăк уçăлчĕ. Пÿлĕме Журавлихăри полицейски Мишка Бутылкин кĕрсе тăчĕ.

— Господин обер-лейтенант, –терĕ вăл, салтак пеке-

честь парса.—Эсир хушнă тăрăх партизан арăмне тытса килтĕмĕр...

— Кам вăл?

— Лиза... Елизавета Бабкова, учительница, комсомолка. Упăшки—партизанра çӳрет, хăй Германи влаçĕсене пăхăнмасть, налог илме пырсан мана, сирĕн представителе, питрен сурчĕ... Ун çинчен эп сире ĕнерех рапорт çырса патăм...

— Илсе кӳртĕр!—куçĕсене ялкăштарса илчĕ Клебер.

Бутылкин, честь парса, пӳлĕмрен тухрĕ, тăлмачă Клебер умне чупса пырса тăчĕ.

— Ман шутпа, герр обер-лейтенант, ку сысна калани чăнах пулсан, иккĕшне пĕрле çаксан хитре пулать...

— Кама—иккĕшне?

— Ку партизанкине, тата халь илсе килнине...

— Эпир çакмастпăр вĕсене...—Клебер пукан çине ларчĕ те, пушă бутылкăна тытса пăхрĕ.—Эпир вĕсене вут çинче çунтаратпăр! Пĕтĕм халăх умĕнче чĕррĕн ăшалатпăр. Ун пек опыт туса курман-ха эп, тен ахаль çакнинчен авантарах пулĕ... Пар-ха кунта тепĕр бутылкине!

Тăлмачă эрех патне тухрĕ, Мишка Бутылкинпа икĕ нимĕç салтакĕ Лизăна илсе кӳртрĕç.

— Ак çакă ĕнтĕ вăл, партизан арăмĕ. Германи влаçĕсене пăхăнмансскер, ман çине сураканскер!—пĕлтерчĕ Бутылкин обер-лейтенанта.

Клеберпа Лизăн куçĕсем тĕл пулсанах, нимĕç ку хĕрарăмпа калаçни ăна нимĕнле усă та парас çуккине ăнланчĕ. Çав тери хăяр, нихçан сӳнес çук курайманлăхпа пăхрĕ ун çине Лиза...

* * *

Мурата партизансен отрядне пулăшу ыйтма ăсатса янă хыççăн лётчик Сергей Малинин пĕр самант та лăпкăн ларма пултараймарĕ. Нимĕçсем кĕç-вĕçех туса хума пултармалли тискер ĕçе епле майпа та пулин пĕтерсе хурасси çинчен çĕр тĕслĕ те шухăшласа пăхрĕ вăл. Нимĕçсем Грушăна каçарас çуккине, вĕсем ăна çакассине

е персе пăрахассине лайăх ăнланчĕ... Митька урама тухса çӳресе, нимĕçсем ялсовет тĕлĕнче виселица тума тытăнни çинчен килсе пĕлтерсен, Малинин пушшех пăлханса кайрĕ.

«Эппин, паянах çакаççĕ... Партизансем килсе ĕлкĕреймеççĕ ĕнтĕ... Кăнтăрла вĕт, каç мар, ăçтан килме пултарччăр вĕсем? Хамăр вăйпах мĕн те пулин тăвас пулать...»

Вăл хушнипе, Митька ун патне Иван Степанча чĕнсе пычĕ.

— Ну, старик, пирĕн ĕçе тытăнмалли вăхăт çитрĕ,— терĕ ăна лётчик.—Нимĕçсем мĕн тума хатĕрленнине пĕлетĕн-и эс?

— Пĕлетĕп,—тарăнăн сывласа илчĕ Иван Степанч.— — Хам куçпах кайса куртăм вĕсем мĕн шут тытнине... Такама пăвасшăн вара, ăна пĕлместĕп...

Малинин ăна кĕскен кăна Грушăпа пулнă историе каласа пачĕ.

— Ав епле канитель...—терĕ Иван Степанч, лётчикăн сăмахне итлесе пĕтерсен. — Мĕн шутлатăн-ха вара эс?

— Хăвна итлеме пултаракан çынсене пухас пулать, старик.

— Вара мĕн?

— Хĕçпăшаллантарас та, виселица таврашĕнчи пӳртсен маччисем çине вырнаçтарас... Вăхăчĕ çитиччен ларччăр, кайран мĕн тумаллине курăпăр. Ăнланатăн-и?

— Ăнланатăп.

— Пигĕ шиклĕ утăм ĕнтĕ ку, анчах урăх ним тума та май килмест, Иван Степанч. Вĕсен гарнизонĕ пысăках мар курăнать, тен хамăр çынсене хăтарса вăрманалла пытанма ĕлкĕрĕпĕр. Эп пaçăрах партизансем патне чуптартăм, тен вĕсем килсе тухĕç. Вара пирĕн ĕç питех те çăмăлланатчĕ...

— Эс ху ăçта пулас тетĕн?

— Мана валли эс е хамăрăн ручной пулемета, е нимĕçсен автоматне туп. Патронсем ытларах пулччăр. Вара эпĕ те виселица çывăхнерех куçатăп. Пĕр çирĕм-

вăтăр ни.лĕçĕн çамкине шăтармасăрах парăнмăп, гесе шутлатăп!

Тепĕр вунă минутран Иван Степанч лётчикăн аллине хыттăн чăмăртарĕ те, Митькăсем патĕнчен васкасах тухса кайрĕ.

---

Кăнтăрла иртсен шăп икĕ сехетре ялăн пур урамĕсенче те халăха хăвалама тытăнчĕç:

— Халех пурин те ял варрине, площăде пухăнмалла!

— Кам та кам çирĕм минутран унта пымасть—хăйне валли аллă розга ĕçлесе тупать...

— ыни-пыманнине список тăрăх тĕрĕслеççĕ!

Хăраса ӳкнĕ çынсем ирĕксĕрех ял варринчи площăделле туртăнма пуçларĕç. Ваттисем—туясем çине тайăнса, хĕрарăмсем—чĕчĕ ачисене çĕклесе, кăшт пысăкрах ачисем—амăшĕсен кĕпе аркисенчен тытса утрĕç. Хăйсене мĕн пирки кун пекех васкавлăн пухнине малтанах никам та пĕлмерĕ, анчах та хушнă çĕре çитсен, урамра çӳлĕ те тĕреклĕ виселица тăнине, унăн урлă каштинчен çĕрелле вĕренсем усăнса тăнине курсан, кашниех ăнланчĕ.

— Такама çакаççĕ...

— Пире çавна пăхса тăма хăваласа пухнă...

— Эх, çынçиенсем, хураюнсем!

— Пĕрерĕн-пĕрерĕнех пĕтереççĕ пуль ĕнтĕ вĕсем пире...

— Чим-ха, тен шалчи тулĕ!

— Асту, хуллен калаç, такам илтсен...

Çынсем тем пекех пăлханнă пулин те, пĕр-пĕринпе пăшăлтатса çеç калаçрĕç. Халăха йĕри-тавра хĕçпăшаллă нимĕç салтакĕсем хуралласа тăчĕç.

---

Çак вăхăтрах Игнат Дубовăн отрячĕ пытаннă вăрмантан нимĕçле тумланнă кавалеристсен эскадронĕ сиктерсе тухрĕ те, Журавлиха еннелле каякан çулпа вĕçтерчĕ. Эскадрон хыççăн икшер пулемётлă виçĕ тачанка, тата икĕ çăмăл тупă кисренсе пычĕ.

Эскадрон командирӗ пит те васкарӗ, ахаль те ҫил пекех ыткӑнса пыракан хура лашине пӗрмай хӑваларӗ, час часах каялла ҫавӑрӑнса пӑхса, хыттӑн кӑшкӑрчӗ:

— Впере-ед! За мно-ой!

Анчах та вӑл нимӗҫле мар, вырӑсла кӑшкӑрчӗ. Урӑхла пулма та пултарайман ҫав: ку „эскадрон командирӗ"— Игнат Дубов пулнӑ. Мурат ун патне ҫитсе нимӗҫсем кӗҫӗр Грушӑна тытни ҫинчен, ӑна валли урамра виселица тума тытӑнни ҫинчен каласа парсанах вӑл хӑйӗн чи маттур партизанӗсене, 60 ҫынна, нимӗҫле тумлантарнӑ та, лашасем ҫине утлантарса—Грушӑна тӑшман аллинчен хӑтарма васканӑ.

Кун пек чухне пӗр минут та теме тӑрать... Нимӗҫсем Грушӑна кашни самантрах ҫакма е персе пӑрахма пултарнӑ, ҫавӑнпа та партизансен пӗтӗм вӑя хурса васкама тивнӗ. Ҫавӑнпа ниҫта чарӑнса тӑмасӑр, лашасене хӗрхенмесӗр ыткӑнчӗ партизансен эскадронӗ. Лашисем пурте нумай пулмасть пӗр ҫапӑҫура нимӗҫсенчен туртса илнӗскерсем пулнӑ, халь вӗсем партизансене нимӗҫсен гарнизонӗ ҫине сасартӑк тапӑнса ҫӗмӗрсе тӑкма илсе кайнӑ...

Игнатпа юнашар, илемлӗ кӑвак лаша ҫинче, командиртан пӗр утӑм та юлмасӑр, ыттисем пекех нимӗҫ тумне тӑхӑннӑ Мурат вӗҫтерсе пычӗ.

---

Виҫӗ сехетре урамра, виҫелица патӗнче тӑракан халӑх сасартӑк пӑлханса, хумханса, малтан шӑппӑн, унтан вӑйлӑрах, хытӑрах шавлама тапратрӗ.

— Ҫакмалли ҫынсене илсе килеҫҫӗ!..

— Ӑҫта, ӑҫта?

— Авӑ вӗсем, авӑ... Иккӗн,—иккӗшӗ те хӗрарӑм.

— Камсем-ши вара вӗсем?

— Ютран тытса килнӗ пулмалла.

— Пӗрне паллатӑп эпӗ, Журавлихӑри учительница...

— Эх, мӗскӗнсем...

— Чӑнах ҫакаҫҫӗ ши вара?

— Ахальрен туман ĕнтĕ ку виселицине!

— Хăйсенеччĕ... Хăйсене çакасчĕ кашни йывăçран!

— Ш-шш, кунталла пăрăнчĕç...

— Çул парăр, сирĕлĕр!

Вунă салтакпа икĕ унтер-офицер, халăха ик еннелле сирсе, виселица умне Грушăпа Лизăна илсе пырса тăратрĕç. Ялçыннисем, вĕсене курсан, шăпах пулчĕç. Кашниех шăлĕсене çыртса лартрĕ, кашниннех чĕри кӳтсе килчĕ. Çамрăк хĕрарăмсен çĕрсе, кăвакарса, юнланса пĕтнĕ сăн-питне, урлă-пирлĕ çурса пĕтернĕ сараппанĕсене курсан—нимĕçсем вĕсене çакăнта çакма илсе киличчен маттан мĕн тери асаплантарнине пурте пит лайăх ӑчухласа илчĕç. Çавăн пирки ĕнтĕ нумайĕшĕн чĕрисем тапма чарăннă пек пулса тăчĕ, çамкисем çине сив тар вăчăрăнса тухрĕ...

Самантранах, виселица юпи çумне ятарлэса тунă трибуна пекки çине обер-лейтенант Клебер, тăлмачă, тата вĕсем хыççăн Мишка Бутылкинпа икĕ салтак улăхса тăчĕç. Клебер аялти салтаксене темскер хушрĕ. Лешсем йăпăр-япăрах таçтан икĕ каска-пукан тупса пычĕç те, Грушăпа Лизăн майĕсене вĕрен майкăçсем тăхăнтарса, вĕсене çав пукансем çине хăпартрĕç.

Пăхса тăракан ялçыннисен кăкрисенчен çак самантра сывлăш тухма та пăрахрĕ... Халех, çак минутрах вĕсен куçĕ умĕнче калама та çук тискер те хăрушă ĕç пулмалла, икĕ совет çыннине пăвса вĕлермелле пулнă-çке!

Мĕншĕн? Мĕн айăпшăн? Тискер тăшмана парăнманшăн, хăйсен ирĕкне хӳтĕленĕшĕн, чура пулма килĕшменшĕн, этемле пурăнма ĕмĕтленнĕшĕн, тăван çĕршывпа тăван халăхшăн кĕрешнĕшĕн!..

---

...Партизансен эскадронĕ, çул тарăх куç-пуç курăнми тусан мăкăрлантарса, вĕт вăрманлă çырма пуçне çитрĕ те—тапах чарăнчĕ. Игнат Дубов лашасене йывăççен хӳттине кӳртсе, пурне те çапăçăва хатĕрленсе тăма хушрĕ.

Унтан тӳрех Мурата ăнлантарма тытăнчĕ:

— Халех яла чуп, пĕтĕмпех пĕлсе кил... Мĕн пулса иртет унта? Нимрен ытла, вĕсен салтакĕсен йышне пĕлме тăрăш. Май пулсан, хăвăн лётчик тусна курса тух, эпир килни çивчен пĕлтер...

— Юрать.

— Чуп. Анчах асту, ан лек, часрах таврăн!

Мурат нимĕç тумне хывса пăрахрĕ те, вĕт вăрман витĕр тӳрĕрен тӳрĕ, тĕмескесемпе лупашкасем урлă кушак пек сиксе, Митькăсен ялнелле ыткăнчĕ. Яла çитсе, висе лица патне халăх пухăнса тăнине курсанах, вăл нимĕçсем Грушăна пăвма ĕлкĕрейменнине ăнланчĕ, анчах тĕрĕссипе пĕлме, пĕр ватăрах хĕрарăмран хуллен кăна ыйтрĕ:

— Такама çакаççĕ-им, инке?

— Çапла тет çав, çакаççĕ тет,—тарăнăн сывласа ячĕ лешĕ.

— Кама-ши?

— Пĕлместĕп ăна... Тем пек курас мар тесен те—куратпăрах ĕнтĕ, юри хăваласах илсе килчĕç ав. Хăранипе халех чĕтреме ертĕм...

— А эс куçусене хупса тăр,—терĕ Мурат.—Пăхмасан çăмăлтарах пулĕ!

Урăх унпа калаçса тăмарĕ вăл. Тата мĕн те пулин пĕлеймĕп-ши, тесе халăх хушшипе унăн-кунăн çӳрекелерĕ, салтаксем йышли-йышлă маррине пăхкаларĕ. Вара Митькăсем патне чупса анчĕ. Анчах килте никам та çук иккен. Митькăн кĕçĕн йăмăкĕ çеç юлнă.

— Пиччу ăçта?—ыйтрĕ Мурат.

— Митька-и?—Ун çине куçĕсене хĕссе, шанман пек пăхрĕ пĕчĕк хĕрача.—Калама юрамасть çав.

— Нимĕçсене калама юрамасть вăл, мана—юрать!—ĕнентерме тăрăшрĕ ăна Мурат.—Эпĕ унăн тусĕ вĕт, эпир унпа яланах пĕрле пулнă. Астумастăн-и мĕн, кашни кун килеттĕм...

— Çавах каламастăп. Хушман.

Мурат ним тума аптăрарĕ. Унăн лётчик ăçтине пĕлес

килнĕ, Митькасăр пуçне ăна никам та калама пултарайман.

— Тархасшăн кала, каламастăн пулсан—чĕнсе кил, мана питĕ кирлĕ вăл.. Ак çак таранах кирлĕ!—Мурат хăйĕн майне çĕçĕпе каснă пек туса кăтартрĕ.

— Ав, хăех килчĕ,—кулса ячĕ ăна хирĕç хĕрача.

Чăнах та, урамран Митька хашкаса кĕчĕ.

— Ăçта Серёжа пичче?—ун патнелле чупса пычĕ Мурат.—Кала часрах...—Анчах юлташĕ ăна хирĕç куçне хĕссе илчĕ çеç:

— Асту, хуллен...

Вĕсем пӳрте кĕчĕç те, темиçе минут хушши питĕ вăрттăн, пăшăлтатса калаçрĕç. Унтан Мурат васкасах тухса кайрĕ. Виселица патне çитсен, вăл нимĕçсем Грушăпа Лизăна çакма хатĕрлесе тăратнине курчĕ...

Юпа пекех хытса тăчĕ Мурат, ăна хăйне пуçран сарсартăк темле йывăр япалапа çапнăн туйăнчĕ. Анчах хăйне хăй хăвăртах алла илчĕ те, кĕçех отрядăн эскадронĕ тăракан вĕт вăрмана кĕрсе çухалчĕ.

---

Грушăпа Лиза виселица айĕнче тăчĕç. Вĕсен майĕсенчен çеклетнĕ вĕренсем, çил вĕрнĕ май, хуллен кăна калле-малле сулăнкаларĕç.

Халь тин вĕсем хăйсем çăлăнасси çинчен шутлама пултарайман ĕнтĕ. Пĕр минутран-и, иккĕрен-и, е унтан кăшт ытларах вăхăт иртсен—пурĕпĕр вилмелле пулнă...

Анчах вĕсем вилĕм çинчен те шухăшласшăн пулмарĕç, вĕсенчен кашниех хăйне лăпкăн, çирĕппĕн тытма тăрăшрĕ. Кăп-кăвак уяр тӳпере мамăк пек шурă пĕлĕттаткисем шуса иртрĕç, куçа курăнман кайăксем чĕвĕлтетрĕç, таврари хирсем, ял хыçĕнчи хурăн ращи яланхи пек те мар илемлĕн курăнчĕç çак самантра.

Груша каллех вата амăшне, йăмăкне, юлташĕсене аса илчĕ. Вĕсем çакăнтах, ун умĕнчи халăх хушшинчех тăнă пек туйăнчĕ ăна. Пурте ун çине пăхаççĕ... Вĕсем Груша епле вилнине пăхма мар, унпа вăхăтлăха уйăрлас умĕн

ăсатма килнĕ пек туйăнать. Паллах, çапла... Мĕншĕн-ха вилмелле? Çук, çук... Пирĕн вилмелле мар, пирĕн пурăнмалла-ха, питĕ нумай пурăнмалла, хамăрăн телее каялла тавăрса питĕ илемлĕ, чечекле пурнăçра ыр курмалла!

Телей каллех пулать. Çухалман вăл. Тупăнать...

— Кунталла çавăрнăр!—кăшкăрчĕ сасартăк тахăшĕ юнашарах. Германи влаçĕсен представителĕ обер-лейтенант Эрих Клебер сăмах калать!

Грушăпа Лиза иккĕшĕ те сылтăмалла пăхса илчĕç. Анчах трибуна пекки çинче хайхи хăйсене хĕнесе, асаплантарса пĕтернĕ тискер кайăка курсанах, унтан йĕрĕнсе пуçĕсене тепĕр еннелле пăрчĕç.

— Слюшай менья, русски люди! Взя слюшай! пуçне унталла та кунталла çавăркаласа, тÿсме çук усал хаярлăхпа пуçларĕ Клебер хăй сăмахне.—Ми, германцы, выводиль вас на новий порядка! Ви это не любить, ви стреляйт, ви ходит партизан... А ми вас за то вешайт! Во!—Клебер юнпа тулнă куçĕсене тискеррĕн çавăрса виселица çине кăтартрĕ.—Понимайт?

Нимĕç вырăсла пит начар калаçнă пулин те, ялçыннисем ăна пурте ăнланчĕç. Çапах та тăлмачă унăн сăмахĕсене тепĕр хут каласа пачĕ:

— Эпир, нимĕççĕм, сире çĕнĕ йĕрке туса пагăмăр, а эсир çакна юратмастăр! Пире хирĕç тăратăр, партизана каятăр. Анчах кунтан усси пулмасть! Ун пеккисене эпир пурне те тыга-гыта çакатпăр... Акă, пăхăр çаксем çине...—Тăлмачă Грушăпа Лиза çине кăтартрĕ.—Вĕсем партизансем пулнă. Çавăншăн эпир халь вĕсене çакса вĕлеретпĕр. Лайăххрах пăхса тăрăр çавна! Астăвăр: кам та кам партизансемпе çыхланать, çавăн кайран виселица çинче суллансa тăмалла пулать. Ăнланатăр-и çавна?

Халăх ним чĕнмесĕр, пурте пĕр харăс вилнĕ пек тăчĕ. Тÿпе тăрăх темле вĕтĕ кайăксем хуйхăллăн шитлетсе вĕççе иртни çеç илтĕнчĕ.

Çав самантра сасартăк ту енчен лаша ури сассисем илтĕнчĕç. Трибуна çинче тăракан Клеберпа тăлмачă та,

салтаксем те, виселица таврашĕнчи пĕтĕм халăх та тăвалла çаварăнса пăхрĕç.

Урам тăрăх чылай пысăк юланутлă отряд килет мĕн. Çур минутран вăл отряд виселица патне сиктерсе çитрĕ. Обер-лейтенант Клебер кавалеристсем çине питĕ тĕлĕнсе пăхса тăчĕ. Ун патне çакнашкал отряд килесси çинчен никам та пĕлтермен, çавăнпа та кавалеристсем уншăн пачах та кĕтмен хăнасем пулса тăнă. Отряд командирĕ—Клебер пекех обер-лейтенант формине тăхăннăскер, питĕ илемлĕ, кăвак куçлă йĕкĕт, хайĕн ташласа тăракан хура айăрĕ çинчен вăшгах сиксе анчĕ те, тӳрех трибуна çине хăпарса кайрĕ Клебер ăна хирĕç йăргах тăсăлса тăрса честь пачĕ...

---

...Таврари пӳртсен мачисем çине хĕçпăшалпа хăпарса вырнаçнă çынсем—Сергей Малининпа Митька та, Иван Степанч та, вĕсемпе пĕр каварлă пулнă ытти ялçыннисем те çаксене пĕтĕмпех курса выртнă.

Вĕсем виселица патĕнчи нимĕçсене пĕр харăс тапăнмашкăн майлă самант çеç кĕтнĕ. Чăн малтан Малинин пемелле пулнă, унтан вара—ыттисем те..

Малининăн пӳрнисем темиçе хутчен те спусковой крючок çине пусма тăчĕç. Обер-лейтенант Клебер трибуна çине хăпарсанах, Малинин ăна çамкинчен тĕллерĕ. Анчах та—майлă вăхăт çитмен пек туйăнчĕ-ха.

— Çакма пуçласанах перетпĕр,—терĕ вăл хăйпе юнашар автомат тытса выртакан Митькăна.—Малтан çӳлте тăракансене, кайран ыттисене...

Тапăнмалли вăхăт çывхарсах килчĕ. Акă, Клебер каласа пĕтерчĕ, тăлмачă калама пуçларĕ. Унăн сăмахĕсем Малининпа Митькăна аванах илтĕнчĕç.

—«Эпир халь вĕсене çакса вĕлеретпĕр...»—терĕ вăл.

Малинин ручной пулеметăн ложине хулпуççи çумне тата хытăрах тытса Клебера тĕллерĕ... анчах переймерĕ.

Виселица патне сасартăк юланутлă отряд пырса тухрĕ. Отряд командирĕ трибуна çине чупса хăпарчĕ...

— Пулмарӗ пирӗн нимӗн те!—пăчăртанса тухрӗ Малинин пырӗнчен.—Кун чухлӗ салтаксене эпир ҫӗнтерес ҫук...

Вăл ҫапла калама ӗлкӗрчӗ ҫеҫ—вӗсен куҫӗ умӗнче ăнран кăларса яракан тӗлӗнмелле ӗҫ пулса иртрӗ. Кавалеристсен командирӗ трибуна ҫине хăпарса ҫитсенех, хăйне честь парса тăракан обер-лейтенант Клебера пистолетпа шăп чӗринчен тӗллесе кӗрс! тутарчӗ. Клебер хăрах аллипе кăкринчен тытрӗ те, карлăк урлă ҫӗрелле тӗшӗрӗлсе анчӗ...

---

Клебера вӗлерекенни—Игнат Дубов пулнă.

Нимӗҫсен аслине персе пăрахсанах, ыттисем мӗн те пулин тавҫăрса илме ӗлкӗриччен, вăл трибуна ҫинчи тăлмачăпа икӗ салтака та, анса тарма тăнă Мишка Бутылкина та печӗ. Унтан халăха хураллаѕа тăракан салтаксем еннелле хыттăн кăшкăрчӗ:

— Германский солдат, руки вверх! Хенде хох!

Унăн партизанӗсем ҫав вăхăтра нимӗҫсем ҫине пур енчен те автомачӗсемпе тӗллерӗҫ...

— Вырăссем! Совет ҫыннисем! Пурте сылтăмалла тухăр!—команда пачӗ Игнат.—Эпир—партизансем, сире хăтарма килтӗмӗр. Часрах, часрах пăрăнса тухăр!..

Халăх калама та ҫук савăнăҫлăн шавлама тапратрӗ. Пилӗкӗн-улттăн часрах, Грушăпа Лизăна мăйкăчсенчен вӗҫертме ыткăнчӗҫ.

— Ну, телей! Пулать те ҫав телей!..

— Юрать, килсе ҫитме ӗлкӗрчӗҫ! Вăхăтра килчӗҫ!

— Мӗн каламалли!

— Тепӗр пăртак тăнă пулсанах...

— Пӗтетчӗҫ ҫав!

— Маттур йӗкӗтсем, нимӗн те калаймăн.

— Эп малтан вӗсене чăнах нимӗҫсем тесе...

— Юри тумланнă ӗнтӗ, улталама!

— Ах, пултараҫҫӗ! Питӗ пултараҫҫӗ!..

Игнат трибуна ҫинчен сиксе анса Грушăна хирӗҫ чупса

пычĕ. Вĕсем темиçе хугчен хыттăн чуптурĕç.

— Çăлтăмăр вĕт, э? Шанманччĕ... —савăнăçлăн сывласа ячĕ Игнат, Грушăн аллисене çаплах чăмăртаса.

— Камран пĕлтĕр вара эсир?

— Камран пултăр... Мурат чупса пычĕ!

— Ылттăн ача вăл, тупата...

— Ылттăнран та хаклă!

— Ăçта вăл халь?

— Кунтахчĕ... —Игнат унталла-кунталла пăхса илчĕ.

— Мурат!

— Эпĕ!—илтĕнчĕ Мурат сасси çынсем хыçĕнчен.

— Кил-ха кунта.

— Çиччас!

Мурат ун патне Лизăна çавăтса пырса тăчĕ.

— Ак çак ĕнтĕ вăл... Лиза, эп суранлансан мана анне пек пăхса усрани.

— Спасибо сире,—ун аллине тытса чăмăртарĕ Игнат.

— Мана мар сире хăвăра спасибо!—шывланнă куçĕсемпе кăмăллăн та йăвашшăн пăхрĕ ун çине Лиза.— Иккĕмĕш хут вилĕмрен хăтартăр!

— Ну, ун çинчен кайран калаçăпăр,—çемçен кулса илчĕ Игнат.—

Ĕççене йĕркене кӳртер-ха...

---

Темиçе самантранах вĕсем патне Сергей Малининпа Митька, унтан маччасем çинче засадăра ларнă ытти ялçыннисем те чупса çитрĕç. Хĕçпăшаллă колхозниксене курсан, партизансен командирĕ тата ытларах хавасланса, вĕсен аллисене чăмăртама тытăнчĕ:

— Пире пулăшакансем пур иккен-ха! Тав сире!..

— Пулмасăр, ăçта кайччăр вĕсем?—терĕ Иван Степанч, хăйĕн юлташĕсем çине кăтартса.—Пăхăр, епле ăмăрткайăксем! Партизансене çакаççĕ, хăтарас пулать, тесенех алла пăшалсем тытрĕç вĕт...

— Питĕ аван, мучи, пит аван! Çакăн пек пурĕ пĕр

пулса тăрсан, нимĕçсене сывлама та памастпăр акă эпир. Вĕри çатма çинчи пулăсем пекех сиккелеме пуç-лĕç. Хĕрлĕ Çар та кунталла çывхарса килет ĕнтĕ. Капут вара вĕсене!

— Капут, епле пулсан та капут!

Игнат умне унăн взвод командирĕсенчен пĕри чупса пырса тăчĕ:

— Юлташ командир! Нимĕç салтакĕсене пурне те тытса сарайне хупрăмăр. Ав, çавăнта...

— Миçен вĕсем?

— Вăтăр ултă, юлташ командир. Мĕн тумалла вĕсене?

Игнат хăйĕн тусĕсем çине, лётчикпе Иван Степанч пухнă çынсем çине пăхса илчĕ те, кăштах шухăша кайса тăчĕ.

— Мĕн тумалла, тетĕн? Эпир ăна... халăхран ыйтăпăр!

— Вот ку—тĕрĕс!—сухалне шăлкаласа илчĕ Иван Степанч.

— Атьăр...

Игнат, Груша, лётчик, Иван Степанч, вĕсемпе пĕрлех Муратпа Митька та паçăр нимĕçсем тăпăртатса тăнă трибуна çине хăпарчĕç. Хаваслăн шакăлтатса калаçакан халăх шăпланчĕ. Пурте партизансен командирĕ мĕн ка-ласса кĕтрĕç. Вĕсемшĕн халь ку çын никамран та хаклă пулнă-çке, мĕншĕн тесен вăл килсе хăтарчĕ нимĕçсем çакма хатĕрленнĕ икĕ хĕрарăма, вăл персе пăрахрĕ тис-кер обер-лейтенантпа унăн халуйĕсене!

— Тăвансем!— терĕ Игнат, сылтăм аллине çӳлелле çĕк-лесе.—Чăн малтанах, сире хамăрăн партизансенчен, нимĕç йыттисене кунĕн-çĕрĕн пĕтерсе пыракан паттăрсенчен хĕрӳллĕ, боевой салам!

Темиçе уйăх вĕçĕмсĕр хăраса, сăмах та калама шик-ленсе, савăнма-кулма пачах манса кайса пурăннă çынсем сасартăк çĕнĕрен çуралнă пекех пулса тăчĕç. Пĕр харăс, такам команда панă пекех, чĕререн хавасланса ал çупма тапратса ячĕç вĕсем...

— Хăвăра салам, сире!

— Темрен те нысăк спасибо!

— Çăлтăр вĕт çынсене, пĕтетчĕç!

Шав кăштах лăплансан, Игнат татах кала пуçларĕ.

— Эпир сирĕнтен пĕр сăмах ыйтасшăн. Ав çавăнта, пушă сарайĕнче, халь çеç тытнă нимĕçсем лараççĕ. Вăтăрултă бандит унта, вăтăр ултă кашкăр. Мĕн тăвас вĕсене пирĕн? Калăр!

Кун пек ыйту çынсене тĕлĕнтерсех ячĕ. Мĕн ыйтса тăмалли пур вара унта? Пемелле те—пăрахмалла, пĕтĕм ĕçĕ те çав çеç... Çавăнпа та тăруках никам та ответ памарĕ. Анчах Игнат тата тепĕр хут, çине тăрсах: «Калăр ĕнтĕ, мĕн тăвас пирĕн вĕсене?» тесе ыйтсан, пурĕ пĕр харăс кăшкăрчĕç ăна хирĕç:

— Вĕлерес!

— Персе пăрахас!..

Ку сăмахсем халăхăн вĕри кураймалăхпа тулнă чĕринчен тухрĕç. Ку вăл—совет çыннисен тавăру приговорĕ пулнă...

Партизансем нимĕçсене ял хыçне илсе кайрĕç те, пурне те персе пăрахрĕç.

— Çакăнтан тĕрĕсси ним те çук ĕнтĕ,—терĕ Иван Степанч, нимĕçсен виллисене çĕр айне чиксе пĕтерсен.— Вĕсем пирĕн пата çĕршĕн килнĕ вĕт. Ну, эпир вĕсене кашнинех тивĕçлипе туянтартăмăр!

---

... Отряд ку ялтан тепĕр ирхине тухса кайрĕ. Лĕтчик Малинин та, Иван Степанч та, Лиза та, тата ыттисем те нумайăшĕ çак кунран пуçласа партизансем пулса тăчĕç.

Муратăн тусĕ Митька та питĕ пырасшăнччĕ, анчах амăшĕ чирлĕ пирки унăн килтех юлмалла пулчĕ. Куççуль тухиччен хурланчĕ вара вăл.

— Ан манăр эппин мана, Мурат,—терĕ вăл тусне.— Май килсен кĕрсе тух, теп ун чух эпĕ те пырăп!

Сергей Малинин ăна ыталасах чуптурĕ:

— Ан пăшăрхан, шăллăм, часах ирĕке кăларатпăр акă сире!

— Ик эрнерен Игнат Дубовăн отрячĕ тепĕр отрядпа

пĕрлешсе тата пысăк вăй пулса тăчĕ. Кайранхи кунсенче вăл нимĕçсене малтанхи пек те мар хытă пыра-пыра çапрĕ. Çунтарса янă вырăс ялĕсемшĕн, совет çыннисене çаратнăшăн, асаплантарнăшăн, айăпсăр тăкăннă тăван юншăн, куллен кун хăватлăран хăватлă тавăрса пычĕ. Нимĕçсем ку отряда тем пекех хупăрласа тытма тăрăшрĕç, анчах ним тума та пултараймарĕç...

Ялсем тăрăх вĕсем «Игнат Дубов пуçĕшĕн вунă пин тенкĕ паратпăр» тесе пĕлтерӳсем салатрĕç. Ним усси те пулмарĕ. Игнат Дубовăн отрячĕ ӳснĕçемĕн ӳсрĕ. нимĕçсемшĕн тата хăрушăрах вăй пулса тăчĕ.

... Пĕрре, йывăç çулçисене ылттăн тĕс çапнă кунсенче, отряд вырнаçнă вăрман çийĕнче пысăк самолёт явăнма тытăнчĕ.

— Çăлтăрлă! Çăлтăрлă!

— Пирĕн ку!

— Хăнасем килчĕç!—тесе, партизансем пысăк уçланкăна чупса тухрĕç. Игнатпа Сергей Малинин çӳлелле темиçе хĕрлĕ ракета кăларса ячĕç.

Тĕрĕсех, ку совет самолёчĕ пулнă. Вăл килесси çинчен Игнат малтанах радио тăрăх пĕлнĕ. Самолёт Мускавран тӳрех вĕçсе килнĕ. Экипаж командирĕ самолётран тухсанах Игнат Дубовăн ятне асăнчĕ.

— Эпĕ вăл,—терĕ Игнат, честь парса.

— Фронт командующийĕ хушнă тăрăх, эпĕ сире валли наградăсем илсе килтĕм. Совет правительстви сирĕн паттăр ĕçсене тивĕçлипе хакласа, нумайăшне орденсемпе медальсем памалла тунă...

— Питĕ пысăк тав!—терĕ Игнат хавассăн.—Малашне эпир тата хастарлăрах пулăпăр, хамăр çĕр çинче пĕр нимĕç юлмиччен тискер тăшмана тата хытăрах пĕтерсе пырăпăр!

Каçхине вунсакăр партизанăн кăкрисем çинче чаппа орденсемпе медальсем ялтăртатма тытăнчĕç. Награда илнĕ вунсаккăрмĕш партизан—пирĕн тус, çамрăк разведчик Мурат пулнă.

Июнь, 1943

---

5
O.F.d.

ЦЕНА 5 РУБ.

ЛЕОНИД АГАКОВ

ЗА РОДНУЮ КРОВЬ

*ПОВЕСТЬ*

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1944
Чебоксары